24-12

Кĕнеки

№ 15

# Мĕскĕн Антун

Крикоровиҫ кĕнеки тăрăх кĕскетсе куҫарнă

Ретактăрĕ М. П. ПЕТРОВ

Ҫăваш Оплăҫĕнҫи Кĕнеке Кăларакан Уйрăм.
Шупашкар 1924.

Аҫапăҫа Кĕнеки

№ 15

# МĔСКĔН АНТУН

Крикоровиҫ кĕнеки тăрăх кĕскетсе ҫырнă

Ретактăрĕ М. П. ПЕТРОВ

Ҫăваш Оплăҫĕнҫи кĕнеке кăларакан Уйрăм.
Шупашкар 1924.

Чувашоблит № 512. Печ. 3.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата

# Мĕскĕн Антун.

## I.

Акă Троскински ăвăслăх вăрманĕ. Таçта, шалта, пуртă сасси илтĕнет. Кунта пĕр мĕскĕн хреçҫен вутта килнĕ иккен. Вăл лашипе урапине тăратса, хăй пĕр пилĕк утăм айăккинерех кайса, пуртăпа хăрăк ăвăс тураҫĕсене каса каса йанă. Вăл пĕҫҫен пулман. Унтан айкинерех ватă ăвăс çине, çĕтĕк тумтирлĕ аҫа, улăхасшăн тапаçланнă. Вăл унта ҫавка йăви курнă иккен. Вутлăх касакан çынна тулашĕнҫен пăхсан пĕр 50-55 çулсенҫе пулĕ тесе шутлама пулаĭ. Курпунĕ тухнă, куçĕсем путнă, пиҫĕ пĕркеленнĕ. Хăй ҫылай çӳлĕскер, сухалĕ те çӳçĕ те, шурала пуçланă. Хăйне кура тумтирĕ те наҫар пулнă: çĕтĕк кĕрĕк, кивĕ çĕлĕк, пиçихи вырăнне пилĕкне пушăтпа çыхнă. Çанталăк сивĕ пулнă пулсан та, ку çын ĕçлесе ҫăм шыва пиçнĕ.

Вăрманта пĕр сас-ҫĕвĕ те илтĕнмен, ахăр кĕрхи сивĕрен кунта пур ҫĕрĕҫун та тарса пытаннă пулмалла. Йăвăççем çинҫен тăкăннă çулçăсем шăна пуçланă çĕре купалана купалана хупăрласа выртнă. Çапла йăвăç-

сем хăйĕн мĕскĕн тураҫĕсемпе ҫаралса йулнă. Тураҫĕсем ҫине кивве йулнă кăҫăкăсем туратсен хушшинҫен хурран курăнса ларнă. Пĕр айккинҫе пĕҫĕкҫеҫ шыв шырланки пур, анҫах кунта та, ҫулахи пек, симĕс шапа сасси те илтĕнмен; пĕр мăкланса кайнă хăрăк туратсем, тата вăрăм лапсăркка курăксем кăна хуҫăлкаланса курăнса тăнă. Ҫуллахи пек кайăк сасси, кĕтӳҫĕ сасси, акаран таврăнакан тарҫă йурри сасси те, нимĕн те илтĕнмен. Ахăр ҫав ҫынсăр пуҫне урăх, ҫак ыйăха кайнă вăрмана пăшăрхантаран никам та ҫук пулмалла.

...Хутран хутран кĕрхи ҫавра ҫил хайар сассипе уласа иртсе кайаҫ. Вăл, хăй ҫул ҫинҫи курăксене, ҫĕрти ҫулҫăсене, таҫта ҫитеҫҫен илсе кайса, ҫавăрса ҫӳресе сапала сапала пĕтерет. Ку ҫын ҫангалăк асса кайнипе ĕҫлеме те ҫарăнҫĕ; хăй:

— Ваҫук! ăҫта улăхса кайнăха есĕ? Ах, пĕтнĕ аҫана, ҫил вĕҫтерсе кайасран та хăрамасҫ. Ан ҫĕре тенĕ, Ан!.. терĕ.

— Вĕҫтерсе каймасҫ мана, Антун пиҫҫе! — тет Ваҫукĕ.

Антун пиҫҫĕшĕ пăртак сывласассăн, ҫĕлĕкне пусарах лартса, каллех ĕҫлеме тытăнҫĕ. Ҫапла капа-капа, ҫапах пĕр лав ҫапă тултарҫĕ. Ваҫук итлеменни питех те ҫилентерҫĕ кăна.

— Мĕскерле каланине итлеместĕн ха есĕ? Тата миçе хут каламалла сана? Ан ҫасрах! епĕ сана ун пек вĕрентем!—терĕ Антун пиҫ-ҫĕшĕ, пурӑ тăршипе Ваҫуш улăхса кайнă йăвăҫа шакка шакка хăтăрат.

— Апла пулсан анмастăп та, тет лешĕ; хăй тата çÿлерех хăпарат.

— Анмастăн?... Йурĕ еппин... йул вăрмана пĕҫҫен, çисе йаҫҫĕр сана анкăминке кашкăрсем,—тет Антун Ваҫуша.

Кашкăр çинҫен асăнсассăнах, аҫа хăрарĕ пулмалла. Вăл икĕ аллипе йăвăçран тытса, зна пуçларĕ. Анҫах, пиҫҫĕшĕнҫен хăранă пирки ҫарăнса:

— Ансассăн çаптармастăни?—тĕрĕ. Хăйĕн кăтра çÿçлĕ пуçне туратсем хушшинҫен пиҫ-ҫĕшĕ çине тинкертсе пăхнă.

— Ан тенĕ сана!... Тата сăмахласа тăратни?...

— Ҫăнах та çаптармастăни?

— Çаптармастăп тенĕ.... Ан ҫасрах!...

Ваҫук ансан ансан, пĕр турат çине ларҫĕ те:

— Пиҫҫе! лаша çине утлантаратни? терĕ.

— Йурат, йурат... утлантаратăп.

— Ҫăнах та утлантаратни?... Улталамастни?... тет Ваҫукĕ.

— Ей пĕтнĕ аҫупа... Утлантаратăп тесе каланă сана... миçе хут каламалла тата?

Йулашки сăмахсем:—лаша çине утлантарасси, Ваҫуша хавассăн туйăннă пулмалла; вăл йăвăç çинҫен йăпăр йапăр анҫĕ те, пĕр самаватра пиҫҫĕш патĕнҫе тăра парат.

Лавне вутăпа тултарсан, лашине кўлсен, йерипен киле кайма тапранҫĕç. Ытла йăвăр тийенипе, лавĕ пĕр йенҫен тепĕр йенне сулланса пĕр тайлăк вырăна лексенех тўпсе кайас пек пынă. Анҫах Ваҫукăн лав тўнесси мĕнни —асра та пулман, вăл лаша çине утлантарнипе, калама çук савăнса пынă. Хăйĕн сарă кăтра çўçĕ пĕр майах çилпеле кăлкан пек йалтăртатса вĕçкеленĕ. Антун пиҫҫĕшĕ, хăрах аллипе туртана тытса, тепĕр аллине хĕве ҫиксе, хăйĕн ҫун хавалĕн тапаçланса туртакан мĕскĕн кĕсри çине пăхса пынă. Çапла вĕсем йерипен вăрмантан хирелле тухрĕç. Хире тухсанах, шыв арман сасси илтĕне пуçланă. Вĕсен çак арман патĕнҫен иртсе каймалла пулнă. Арманĕ пысăк шыв çинҫе ларнă. Унта виçĕ ҫул паралтатса, кĕмсĕртетсе çаврăннипе, арман сивĕ тытнă пек ҫĕтресе тăнă. Шыв урлă каçма кĕпер тавраш пулман,—пĕве урлă çўренĕ. Арман патне çитерехпе, Антун лашине ҫарса:

— Ваҫук, пăхха, арман хуçи курăнмасти? терĕ.

— Аксентей Семенҫăн? тесе ыйтрĕ Ваҫук.

— Ҫапла кăшкăраҫҫи, ҫав пулмасăр, тата кам пултăр, тере пиҫҫешĕ.

— Ҫук, пиҫҫе, ҫук... пĕр шурă кĕпеллĕ ҫын тăрaт... авă хаљ аллисене тăраткалаҭ!...

— Йурĕ, међник ан пултăр,— унăн куҫне курăнас марҫĕ, курсассăн укҫа ыйтасрап хăратăп.

Ах-ха-хах!... Ну Ваңук, уттара пар йерипен

Пĕве урлă пĕр сийенсĕр каҫса кайрĕҫ. Унтан ҫăнкă тăвайккирен улăхсан, лаши ҫарăнса ирĕккĕн сывласа йаҫĕ. Малалла ҫул тӳрĕ, тикĕс пулнă. Акă арман та курăнми пулҫĕ. Хирте каллех вăрманти пекех пĕр ҫĕрĕ ҫун та ҫук, ним сас-ҫĕвĕ те илтĕнмен. Кайсан кайсан сылтăм айккинҫе улпут ҫурҫĕсем курăна пуҫларĕҫ. Ҫак улпут ҫурҫĕ, тахҫанах пушанса йулнă хуралтă иккенни айакранах палăрнă. Ҫӳреҫе хупписене ҫапса лартнă, хăшĕ хăшĕ хуппине ҫил тăпăлтарнипе, пĕр тăпса ҫинҫе ҫакăнса тăнă. Пӳрҫĕ ҫийĕнҫи сăррине ҫăмăрпа ҫăвса пĕтернĕ, хăма хушшисем кĕвеленсе шăтса пĕтнĕ. Ҫăннипе каласан, ҫак ҫурта ҫурт теме те май килмен, хăрăк харăк хуралтă кĕлетки пек ҫеҫ теме пулаҭ. Пĕр ҫĕкеҫҫем анҫах ҫак киле пăрахман. Вĕсенҫен хăшхăш пĕри кĕтессенҫе йăва ҫавăрса ҫĕпписене ӳстерне. Ҫула ҫак вырăнта йĕри тавра пахҫа аванах илемлетсе ларнă. Анҫах хаљ, кĕркунне, ҫĕкеҫсем те пул-

ман, пакҫа та ҫаралса йулнӑскер хуйхӑллӑ ларнӑ. Ҫавӑнпа пӳрт ҫара йӑвӑҫсем хушшинҫе тата хуйхӑллӑн курӑнса ларнӑ.

Антун ҫакӑнта ҫитсен, темшӗн ҫӗлӗкне хыврӗ те, улпут анкарти патне ҫитмесӗр те тӑхӑнмарӗ. Анкарти тӗлне ҫитсессӗн, вӑл ҫӗлӗкне тӑхӑнма мар ҫарӑнсах та тӑҫӗ. Ҫӑнахах та ҫак анкарти тӗлӗнҫен иртсе ҫӳрен, Антун ҫеҫ мар, нумайӗшӗ ҫарӑнмасӑрах иртсе кайман. Унта калама ҫук нумай, таксӑнхи тырӑ капанӗсем ларнӑ. Ҫак улпут хытӑ выҫлӑха кӗтсе капанӗсене халӑха хаклӑ хакпа сутап тенӗ халап йалсенҫе ҫӳренӗ. Анҫах пурне те ӗненмелле мар. Кайсан кайсан, ҫак анкарти ҫине пӑхсан, пирӗн Антун темӗншӗн шухӑша карӗ. Шухӑшласа вӑл малтан ҫул ҫинҫе выртакан турпас татӑккисене пуҫтарса пырса, хай лав ҫинҫен ҫапӑсем ӳксе йулнине те астуми пулҫӗ.

Акӑ йерипе йал патнелле ҫывхара пуҫларӗҫ. Сӗрӗм шӑршисем сӑмсана кӗреҫҫӗ. Йала кӗриҫҫен малтан тимӗрҫ лаҫҫи пулнӑ. Тимӗрҫ Вавил Антуна курҫӗ те:

— Ӑҫтан тийерӗн? тесе ыйтрӗ.

— Ӑвӑслӑхранӗҫке! терӗ Антун.

Вара ҫӗрулми (паранкӑ) пахҫисем тӗлӗнҫен иртсе йала та кӗҫӗҫ. Урамра аҫапӑҫасем ҫара уранах, пӗр сивве шӑнмасӑр, выҫаса ҫӳренӗ. Вӗсен хушшинҫе хӗраҫасем те пулнӑ.

Хăш хĕраҫасем хăйсен пĕҫĕк тăванĕсене ҫĕркесе алăра тытса ларнă.

Аҫасем тĕлнелле ҫитерехпе Ваҫук: „астăвăр, таптатăп!“—тесе кашкăрса пынă. Аҫасем пăрăнса ҫул паҫĕҫ. Пĕр уксах хĕраҫа: Антун пиҫҫе, лав ҫине лартха! тесе хăрах уран лав хыҫĕнҫен сиккелесе ҫухăрса пынă.

Антун пиҫҫĕшĕ аллинҫи хулла тăсса кăтартса: лартам епĕ сана, акă ку мĕн? терĕ. Хай хĕраҫа, пăртак хăранă пек, ҫарăнса тăҫĕ те, тата хытăрах ҫухăрса лав хыҫĕнҫен ҫупса пыма пуҫларĕ. Ҫупсан ҫупсан, ывăнҫĕ пулĕ,—ҫарăнса тăрса, ҫĕлхине кăларса витлесе йулҫĕ.

Антун пӳрҫĕ йала кĕнĕ ҫĕртех пулнă. Ҫак ҫĕрĕк пӳрт таҫтанах паллă курăнса тăнă. Пĕр йенĕ ҫĕрсе пĕтнĕскер тайăлса кайнă. Пӳрт тăрринҫи малти такансем ун ҫине хунă каштисем, нумай купаланă такҫанхи йăвăр улăмене ҫăтаймасăр, ӳпнелле тайăлнă та, хаҫ ишĕлес пек туйăннă. Мăрйе выранне сĕрĕм тухма тĕпĕ ваннă тăм ҫӳлмек лартса йанă. Пӳрҫĕ тăррийҫи (хреслетсе хунă) автан кĕлетки, лайăх пурăннă ҫухне илемлетсе лартнăскер, пӳртне май вăл та тайăлса кайнă. Пĕтĕм пӳрте пĕр ҫӳреҫе ҫеҫ, ҫĕтĕксемпе питĕрсе пĕтернĕскер, ҫутаткаласа тăнă. Ытти ҫӳреҫесене хупкаҫпе питĕрсе лăртнă. Пӳрте йĕри тавра тĕкĕсемпе тĕреклесе пĕ-

тернĕ. Пўрт тесе калама та май килмен. Ытла та йăвăр пулнă çак пўрт çине пăхма. Кўрĕшĕ Пикуҫа Çтаппанĕ, пуйанскер, пур çын пурнăç çине пĕр пек пăхаканскер, Антун пўрҫĕ патĕнҫен иртсе çўренĕ ҫухне, хăйĕн лапсăрка çўçлĕ пуçне сулламасăр хăварман.

Килçурт темĕнҫул наҫар пулнă пулсан та, Ваҥушпа пиҫҫĕшĕ килелле çывхарнипе савăннă. Ваҥушĕ: авă пăхха, Антун пиҫҫе, пирĕн кил курăна пуçларĕ, авă унта! тесе хавасланса пырат. Хапхаран кĕрсеннех вĕсене хирĕç пĕр улттăри хĕраҫа ҫупса тухрĕ. Хĕпĕртеннипе нимĕн тума пĕлмесĕр: аллисене хăлаçлат, лав йĕри тавра ҫупса çаврăнат, кулат, Антун пиҫҫĕш кĕрĕк аркинҫен тытса çакăнат. Пиҫҫĕшĕ лав çинҫи пĕр кăҫăк туратне туртса кăларҫĕ те, хĕраҫана паҫĕ. Хĕраҫа çак кăҫăка курсан тата ытларах хĕпĕртерĕ; нимĕн тăвасса та пĕлмест.

— Ну, Ваҥук, çитрĕ пулĕ ĕнтĕ кун ҫул лаша çинҫе ларнипе? Ая та, иксĕр те кĕрĕр пўрте, хырăмăр та выҫрĕ пулĕ пайан ку таранҫен? терĕ Антун пиҫҫĕшĕ.

— Антун пиҫҫе, савнă пиҫҫе, лашана тăвариҫҫен тăрамха, епĕ те пулăшам сана; манăн çийесех килмест-ха, апатне, ăна пулсан, кайран та çийĕп, терĕ Ваҥук.

— Хăй шăнса кайнă ха, тата лаша тăварас тет çапах, терĕ Антун пиҫҫĕшĕ.

— Кĕместĕп епĕ Антун пиђђе, шăнманха; епĕ санпа пĕрле кĕретĕп; есĕ, Укçук, ђ°трене йериђђенех шăннă, кĕр пӳрте, сан хыçран, епĕ кĕрĕп, терĕ Вађук.

Хађхинђе тек вăрçасси тăвасси пулмарĕ; пиђђĕшĕ иккĕшве те аллисенђен йарса илђĕ те, пӳрте илсе кĕрсе кайрĕ.

## II.

Антунăн арăмĕ пӳртре пĕђђенех пулман. Унăн патĕнђе 50 çулхи йахăн пĕр карђăк ларнă. Ђӳређерен хĕвел çутти тӳрех карђăк пиђĕ çине ӳкнипе, вăл алăкран кĕрсенех, курăнса кайнă. Вăрăм сăмсаллă, пĕрĕнђĕк питлĕ, вăрăм йанахлă, шурала пуçланă çӳçлĕ, пуçне пĕђĕк тутăр кăна хупăрласа тăнă. Хăй çĕтĕк тумтирпе пулнă. Лаĭăххăн пăхсан, ку карђăка тухатмăш, йе йумăç тесе каламалла, анђах вăл нимĕн те ун пек кун пек çын пулман; ыйткаласа йалтан йала çӳресе тăравса пурăннă.

Антун пӳрте кĕрсенех карђăк патне пырса, вăл килнĕшĕн çилленнĕ пек пулса: аванниха, Архаровна! терĕ.

— Аванха, ађам, пурнатăп йерипен,—тесе ассăн сывласа куђанса йађĕ карђăк.

— Курманни нумай пулаĭ ĕçке сана, епĕр сана пĕтĕмпех маннă тесе... Архаровна?...

— Хăлха илтми пулнăи мĕн санăн? тесе хытăрах кăшкăрарах びаларĕ Антун.

— Илтместӗп ҫав аҷам, илтейместӗп...

— Нумай пулаҭ ӗҫке сана курманни!! тесе тата хытӑрах кӑшкӑрса каларӗ Антун.

— Ах аҷам, ҫӑкӑр пуҫтарма тесе тухрӑм та, ахӑр ырӑ ҫын пӑртак памӗши терӗм...

— Ҫапла, ҫӑкӑра пурин те ҫийес килет ӗҫке; хӑшӗ пӗри, пур ҫинҷенех ыйткаласа ҫӳрет...

— Выҫӑранах ҫӳретӗп те ҫав, ҫӑкӑр-тӑвар пулсан ватӑ пуҫпа ҫӳремӗттӗмҷӗҫке те: мӗн тӑвас тен ҫитмен пурнӑҫа; вилме те ӗнтӗ мавӑн нумайах йулмарӗ, анҷах вилме те вырӑн ҫук ӗнтӗ ман...

— Ан калаҫ ҫав есӗ кирлӗ мара, ытла та (нимӗн) ҫук ҫын пек йумахлатӑн; хӑшӗ пӗри сана, ахаҍ ыйткаласа ҫӳрет вӑл, унӑн хаҍ тӑракан укҫи те пур теҫҫӗ... ҷӑнах таи ҫав?... хӑй ҷӑнах та ӗненмен пек пӑхса илҷӗ кӑрҷӑк ҫине.

— Ара, илтмерӗм ӗҫке, аҷам, темӗн каларӑн есӗ? тет карҷӑк.

— Ахаҍ калатӑн пулӗ есӗ илтместӗп тесе; ҷимха, салтӑнам, вара илтӗнмеллерех калӑп, терӗ Антун.

Ҫапла каласан, Антун кӑмака патне пырса салтӑнма пуҫларӗ. Ҫак сӑмахсем карҷӑка пит кӑмӑла килмерӗҫ пулмалла. Вӑл пуҫне усса ларнӑ ҫӗртен ҫӗклерӗ, куҫӗсем ҷарӑлса кайнӑ пек пулҷӗҫ. Салтӑнсассӑн, Антун кун

патнерех пырса ларђĕ. Карђăк паçăрхи пекех куђанса ларнă.

— Мĕн терĕн çак есĕ паçăр?

— Ара, сана ахађ кутăнланса çӳрет, теççĕ.

— И-и-и, калаççĕ пулĕ, курайман çынсем калачине ђарас çук... терĕ карђăк пуçне сулласа.

— Сан çинђен ахађ каласа усă пулаĭи мĕн, мĕншĕн пустуй калађђăр; миçе çул сĕтĕрĕнсе çӳретĕн; таçта хуратăн есĕ хађ те укçана...

— Çын аллинђи татăк пысăккăн курăнаĭ теççĕ, пĕр пĕр ђухне çăкăр та çук, укçа мар... Ах-ха-хах!...

Йурĕ ĕçке ĕнтĕ, ахађ калаçатпăр ха ăна та, камăн мĕн ĕç пур унта, укçи пулсассăн та... Варук! мĕн саркаланса ларатăн тата, сĕтел çинђен тасат та, апат çийес, ађасем те хырăмĕ выçрĕ пулĕ пайан.

Арăмĕ карђăкран айаккарах, пĕр кĕтесре ларакансккер, вĕсем сăмахланă ђухне пĕр сăмах ђĕнмесĕр ларнă. Вăхăђĕ вăхăђĕпе упăшки çине пăхкаласа илнĕ. Упăшки апат ыйтсан, хыттăн сывласа йађĕ те:

— Мĕн çитеремши сире, нимĕнех те çук ĕçке... терĕ.

— Ара, пăртак сухан пурђĕ мари?

— Çук, йулман çав, ађасем çисе йанă...

Хăй каллех ассăн сывласа илђĕ.

— Апла пулсан, кăваспа çăкăр та йурать. Мĕн пĕр май хуйхăрса ларан. Сан майпа, манăн кăмăл та хуçалать.

Арăмĕ куркапа кăвас, сĕтелрен илсе йулашки хытвă çăкăр татăккисене, тата тăвар лартса паçĕ те, каллех малтанхи вырăна кайса ларçĕ.

Антун сĕтел хушшине ларса:

— Ей аçасем, килĕр апат çиме! Халĕ те кăмака çинçех пулĕ вĕсем? Астăвăр, пĕтĕмпех çисе йаратăп, выçах йулатăр. Есĕ асанне, мĕншĕн лармастăн тата, çилентĕни мĕн, йе Варукапа çырткаласа илтĕри. Пур çухне çи, çук çухне çук вара.

— Тав тăватăп аçам, арăму çитерçĕ ха мана, вăрăм кун çул пултăр ăна.

Çав вăхăтра Укçине кăмака çинçен анçĕ те, пиççĕш арки çине улăхса ларçĕ. Хăй çинçе вăрăмрах аллисемпеле, унăн майĕнçен йарса илсе аçашланçĕ.

— Çылайах аçап çак манăн хĕраçа, тесе Антун çуптуса илçĕ.—Акă кунта патнерех лар та, манпа пĕрле çи... Ваçук ăçта тата?..

— Урама выçама тухса кайрĕ вăл, терĕ Укçине.

— Ай шаттун аçана, вăйă пултăр ăна; тăхтаха, Укçук, таврăнтăрха вăл киле, епĕр ăна хăлхинçен туртарха...

— Асанне! пĕр майах çупать ĕçке вăл, Ваçук, катăрзнай, тет Антун.

— Пĕҫĕккĕ ҫухне анҫах ĕҫке вăл мĕн пур савăнăҫлă пурнăҫĕ те,—вырăҫҫăрах, терĕ карҫăк.

— Хăй пĕҫĕккĕ пулсан та, ăсĕ пысăкха унăн, таҫтан тавҫăрса илет сăмаха. Ех асанне, кулса калатăп кăна, епĕ вĕсене нихҫан та ҫаптармастăп, хамăн аҫасем мар, шăлăмăн аҫисем кăна пулсан та йурататăп епĕ вĕсене; вĕсем пулмасан, арăмпа иксĕмĕре те тахҫанах пурăнăҫ йăлăхтарнă пулĕҫҫĕ, вĕсемпе кулан, мĕн тăватăн, ҫапах вăхăт иртни сисĕнмест, тесе Уксукне пуҫĕнҫен шăлкаласа, аҫашласа ларат.

— Пĕлетĕп, ĕнтĕ, пĕлетĕп, хаҫ пĕҫĕккĕскерсем тăнланаймаҫҫĕ ха, есĕ пăхса ӳстернĕшĕн, ӳсессĕн санах тав тăвĕҫ.

— Ҫапла, ҫипер ӳстересҫĕ ха, хам вилсен пурлă ҫуклă тупра, пӳрт ҫурт наҫар пулсассăн та, мĕн йулни ҫавсене пулĕ.

— Мĕнле тата, шăлну ҫинҫен хыпар мĕн пури?... тесе ыйтрĕ карҫăк.

— Ҫук, салтака илнĕренпе пĕр сасхура та ҫук, арăмĕпе иккĕшĕ те ҫĕр ҫăтнă пек таҫта кайса кĕҫĕҫ. Иртнĕ ҫула ҫыру, тата аллă пус йулашки укҫана йатăмăр, ҫыру йама та укҫи ҫук пулĕ тесе, анҫах хăйĕнҫен пĕр ҫыру та илеймерĕм. Укҫи те ҫаплах пĕтрĕ пулмалла, илеймерĕ пуҫ. Ҫĕрĕ пулсассăн ҫырăҫҫĕ те вăл, ҫук пуҫ ҫав, ҫук пуҫ, вилсе вырт-

нă пуђ мăнтарăн ађи. Пĕлтĕр пирĕн йалта салтаксем тăнăђђĕ, ҫавсенђен те ыйтса пăхрăмăр, анђах ун пек ҫын курман теҫҫĕ... Асанне, есĕ те хăвăн ывăлна салтака илнĕренпе сасхура ҫук темерĕне ҫак?

— Ҫук ҫав, ађам, ҫук, кайнăранпа та пĕр ҫыру татки йамарĕҫке, терĕ карђăк макăрнă пек.

— Ватăлмалăх кунта пăхакан та ҫукĕҫке сана та, вилсен такĕш пытарĕ ĕнтĕ?

— Ах, ађам, ҫук, ҫав ҫук, иҫмалин тађăрах ратне ҫыни те ҫукĕҫке ĕнтĕ пытармашкăн!..

— Епĕр хамăр шăллăм ҫухалнă тесе питех те хуйхăрмастпăр. Ҫак хађхи, пурăнăҫпа ларса макăрăн унпа, ĕҫлеме питех йурагмастђĕ, ĕҫлесен те ҫийелтен анђах туса ҫўретђĕ. Ҫак кайранхи вăхăтсенђе вăл пур ђухне хăмлапа суттукалама хăтланнăђĕ, ҫук, мĕн тулкки тухтăр унпа;—арăмне каласан, мухтама та йураĭ, лăпкăскер, ĕҫлекенскерђђĕ...

— Пурăнма пулмарĕ, хăйне кун-ҫул ҫавăп ђул пулђĕ пуђ ҫав, пирĕн ирĕк мар... Ах-ха-хах!

Антун ҫиме ђарăнса кашăкне ђашăк хĕррине тĕрентерсе хуђĕ те, пĕр сăмах ђĕнмесĕр шухăша кайса, ђылайђен ларђĕ. Хутран хутран, хăй арки ҫинђе ларакан Укҫинене пуҫĕнђен шăлкаласа илет. Хăй ларнă ҫĕртех тем-

скерле тăрук хуйха кайрĕ, арăмĕ ҫине мĕскĕнле пăхкаласа илҫĕ. Анҫах хăй мĕн шухăшланине кăтартасшăн мар пек лараҫ. Унтан сĕтел хĕррине ҫавсаланҫĕ те, арăмĕ ҫинелле пăхса, карҫăка темĕскер каласшăн пек пулҫĕ.

— Ҫапла асанне, тесе пуҫларĕ Антун хăйĕн ĕлекхи пурăнăҫ ҫинҫен: пурăннăҫке епĕ те ҫывсем пекех, кĕлетре пур те туллийехҫĕ, тырă пăт пуҫне 6-7 пăт тухаҫҫĕ, витере виҫĕ ĕне, икĕ лаша,—ҫулсерен сахалтан та 60-шар тенкелĕх ыраш, 10 тенкĕлĕх пăрҫа сутаттăмҫĕ, халĕ ĕнтĕ, хытнă ҫăкăр татки пулсан та хавас.

Ҫак сăмахсене илтнипе, арăмĕ йĕнине (макăрнине) курсан, Антун, пăртак ҫарăнса тăҫĕ те, кулса йаҫĕ.

— Ҫапла ҫав, асанне! тесе хытăрах кăшкăрарах сăмахне каллех пуҫласа йаҫĕ! есĕ ху пурăнăҫна ҫеҫ ўпкелетĕн вăл ҫитмест, ку ҫитмест тесе. Епĕр арăмпа ҫук пулсан та, никама ўпкелеме те пĕлмеотпĕр.—Телей ҫавăн пек пулĕ, ăна хирĕҫ пырас ҫук...

— Ах-ха-хах! аҫам, мĕн тăвас ĕнтĕ, пулнă та иртнĕ.

— Ҫук, пурăнăҫ пурринҫе пулаҫ вăл, тесе хамăра хамăр лăплантаратпăр ҫав; ҫăкăр татки ҫине тăвар сапатăн та кăвасла сыпкаласа ҫикелен. Есĕ тата Варвари мĕн йĕрсе

ларатӑн ху куҫҫуллӗпе пурӑнаҫа тӳрлететӗп тетни мӗн!...

— Ара, йӗнипе мӗн пулӑшу пултӑр? хӑвна ху сийен туни ҫеҫ вӑл; сирӗн ҫапах пыратха, йӗмеллех, мар хӑвӑрӑн кӗтес пур, манӑн вӑл та ҫук ӗҫке ӗнтӗ.

— Уласан уламасан та, нимӗн те пулмасӑ, пур те пӗрех: пурӑнма май килсен, пурӑн, пурӑнӑҫ майа килмесен, вил... Пирӗн пеккисене ҫутӑ тӗнҫере пурӑнма питӗ хӗн.

— Хӗнӗҫке аҫам, калама та ҫук хӗн... терӗ карҫӑк

Ҫав вӑхӑрта Антунӑн арӑмӗ ура ҫине тӑҫӗ те, гухах кайрӗ.

Унтан Антун алӑк ҫинелле пӑхрӗ те, каллех карҫӑкпа йумахлама пуҫларӗ: Ҫак ҫунтарат ӗҫке манӑн, хӑй куҫҫуллӗпе, ӗлӗкхи пурӑнӑҫ синҫен йумахлама та ҫук, йӗме пуҫлат. Акӑ сана, вӑл ҫук ҫухне каласа парам. Пӗтӗмпех пӗтрӗмӗр ӗҫке епӗр ӗнтӗ, арӑм, аҫапӑҫи мӗннипех: акӑ халӗ ҫийекен ҫӑкӑр та хамӑрӑн мар, кӳршӗрен, Ҫтекнейрен, аран-аран пуҫҫапса, тилмӗрсе кивҫен илтӗм. Сӑлаҫҫипӑ ӑна та, панӑшӑн, ҫакӑн пек пурӑнӑҫа, ҫынтан илсе ҫийессе, кӗтменҫӗ епӗ...

Антун сӑмахланӑ ҫух, карҫӑк питех хушсах та пуплемер, Ҫтекней синҫен тапратсан: Ҫтекнейе аван пурӑнат теҫҫӗ мари вара, тесе ыйтрӗ.

— Пуйаннине пуйан та... тепӗр пуйан ђухӑнран та нађар пурӑнаҫ вӑл.

— Савиђ арӑмӗ каларӗха мана пӗркун, вӗсен Ҫтекнейсен виҫӗ лаша пур тесе, кӗркунне пыл та сутнӑ терӗ пулас... Ҫавӑнпа укҫи те нумай пулӗ тетӗп.

— Мӗн тӑвас ҫавӑнпа пирӗн, епӗ сана хам пурӑнӑҫ ҫинђен каламха!.. Пилӗхӗмӗш ҫул ӗнтӗ ҫакӑн пек пурӑнатпӑр, куллен кун пурӑнӑҫ нађарланса пыраҫ.

— Ҫав управђайушђийех сана пӗтерет пулӗ ҫав?..

— Пӗтерет?.. кама вӑл хӗрхенмест,—пирӗн пек ђухӑн хреҫђен ҫыннисене. Ҫынсем ҫапах пурӑнаҫҫӗха, ман ҫине темӗскер тӑрӑнђӗха вӑл,—ҫисе йараҫ ӗнтӗ мана! . Нимӗн тума та ҫук ӗнтӗ, ђӑтас пулаҫ, ҫавӑнпа ҫуралнӑ епӗр тӗнђене. Акӑ куланай тӳлеме вӑхӑт ҫитрӗ ӗнтӗ, ӑҫтан тупса парамши ӑна хађ. Управђайушђийех мана ыйткалама йараҫ пулӗ ӗнтӗ. Тата ҫитменнине хӑратӑп: акӑ, куланайа тӳлемесен, сана пуҫ йаратӑп, арӑму пуррине пӑхмасӑрах, тет... Ех, асанне, пӗђђен пулсан пӗр вилӗм, пур ҫӗрте те пӗрехђӗ, анђах епӗ пулмасан, мӗнле пурӑнӗҫ вӗсем?.. Ех, тем асап йатнех ҫуратнӑ пулӗҫке те...

Арӑмӗ кӗрсенех, Антун йумахлама ђарӑнђӗ. Ҫак вӑхӑтрах хапхана шакканӑ сасӑ илтӗнђӗ, Антун ђӳређерен пӑхса: „кам вӑл?“ тесе

ыйтрĕ. Хирĕç сасăхура илтĕнмерĕ. Антун ҫӳреҫине уççа: кам унта? тесе тепĕр хут ыйтрĕ.

— Епĕ, тесе ҫĕнҫĕ те, пĕр хĕраҫа, 12 çулта пулĕ пӳрте кĕҫĕ.

Хĕраҫа çине пăхсассăн, вăл ҫăнах та хреçҫен хĕрĕ иккенне ҫухласа илме пулнă. Вăл типпĕмрех тăрăхла питлĕ, вăрăмрах çинçе сăмсаллă, çӳхе туталлăскер пулнă. Пуринҫен ытла унăн хура куçĕсем лайăх пăхса, ăна илемлетсе тăнă. Унăн хура çӳçĕ хулпуççи çинелле саланса кайнă. Тумтирĕ—ытти йалти аҫасенни пек пулман, лайăхрах пулнă. Вăл Антун пӳртне кĕҫĕ те, кăкăрне икĕ аллипе тытса, йăвăррăн аран сывласа йаҫĕ. Антунпа арăмĕ унăн патне пыҫĕç.

— Есĕ мĕн çăмăла, Хваттим? тесе шикленкелесе ыйтрĕ Антун: апат кирлĕ мар-и? кирлĕ пулсан паратăп.

— Çук, Антун пиҫҫе, нимĕн те кирлĕ мар. Никит Хветĕрҫ сана ҫĕнме йаҫĕ, ҫасрах килтĕр терĕ, хăй кăларсах йаҫĕ.

Варвари, Антун арăмĕ, тенкел çине ларҫĕ те, хытă сасăпа уласа йĕре пуçларĕ. Антун хăй те хăраса кайнă пек пулҫĕ.

Вăл икĕ аллисемпе пĕççисене шарт çапрĕ те: акă çитрĕ мĕн инкек, алăка уçса хур, кайлех куланайшăн ҫĕнтерет пулмалла. Ан макăр, Варвари! манăн ҫĕрене çунтаратăн, мĕн тăкатăп куççулне. Акă йапала! акă йапала! мĕн тăвамши ĕнтĕ!?...

Антун ăшђикки вĕркевипе нимĕн тума пĕлмесĕр алăкăн тĕпелĕн уткаласа çӳрет, йе шыв катки ывсине хуплакалаŤ, тăвар суланђине тӳрлеткелет, турђкана вырăнтан вырăна сиктерсе хураŤ, унтан хăй çине тумтир тăхăнма та манса управђайушђи патне тухса кайаŤ. Арăмĕ макăрнă сасси çур урама çитиђђен илтĕнђĕ. Антун улпут карташне кĕнĕ çĕре, ăна управђайушђи Никит Хветăрђ картлаç умĕнђе кĕтсе тăнă. Антут управђайушђийе курсассăнах уриалли ђĕтресе кайнă, хăранипе вăл сывлайман та. Пуçне усса, ђĕтресе, управђайушђи патне пыђĕ. Управђайушђи ытла ватах та мар, çамрăках та мар, пĕр 40-50 çулсенђе пулĕ. Вăл илемсĕртерех, кĕске майлă, виç хут йанахлă, кĕске уралла çын пулнă. Унăн çине питĕрех сăнаса пăхман ђухне, вăл питех хăрушă çын пек туйăнман. Лайăхрах тинкерсе пăхсассăн: унăн куçĕсем те, пысăк çавракаа пуçĕ те, хулăн тутисем те,— вăл усал, çынна хĕрхенменскерри, тата сĕмсĕрлĕххи, унăн пуççăрлăхĕ, намăссăрлăхĕ, вăл аван мар ĕç тăвакан çын иккенни паллах пулнă.

Антун ун патне çывхарсанах, вăл усал сассипе:

— Мĕн, санпала выђаççĕи мĕн? пур те куланай тӳллесе пĕтернĕ, есĕ сикместĕн те, найан!... А! калани епĕ сана, каламани?...

Ђас кала, пĕрех лайăх пулмасть!... тесе, капни сăмахра хытăран хытă, вăрçа пуçларĕ. Пуçне хăй каçăртса кăна тăрать.

— Каланăçке, Никит Хĕветăрђ, каланă...

— Вара!...

— Епĕ сире каларăмçке, манăн куланай тўллеме нимĕн те çук тесе... Ныçтан та тупса пама пултараймастăп. Сирĕнте ирĕк, мĕн тăвас килет, тăвăр ĕнтĕ, хут те улпут патне çырса йарăр: айăплама хушса йарать, йе хăвăрах айăплатри, епĕ ђăтма хатĕр.

— Мĕн суйса тăратăн, нимĕн те çук тесе? ултавçă, выђăх!... Саншăн тата улпута ђăрмантармаллаи ха?... Есĕ хăвна çаптарни-пех куланай татасшăн... Саншăн ытти çынсене тўллеттермеллеи? Пĕлетĕп епĕ сире, ултавçăсене... Лашу пурăнать ха?...

Лаша çинђен асăнсассăнах, Антунăн пĕтĕм алури ђĕтресе кайрĕ, унăн çине нăхса ђĕтрекен сассипе:

— Никит Хĕветăрђă, есĕ мана пĕтĕмпех пĕтерес тетĕн пулĕ ĕнтĕ? терĕ.

— Мĕн тетĕн есĕ?

— Никит Хветăрђă, ырă çын пулсам, пĕђĕк ађ:сене те пулсан хĕрхенсем .. тархаслатăп сана... Ахаљ те есĕ мана ыйткалама йатăн ĕнтĕ... терĕ Антун.

— Тата калаҫса тӑрха есӗ манпа, тесе пуҫларӗ управђайушђи, Антуна сӑмаха пӗтерме памасӑр: —Епӗ сана пӗрех пӗтеретӗп! ыранах лашуна хулана йармӑрккана илсе кай, халӗ хӗл кунӗнђе лаша кирлех мар, терӗ вӑл тата усалланса.—Антун, асту, екерте тата икӗ кунтан кантура кулланай илсе килмесен, есӗ арӑмлӑ иккене те пӑхмӑп, ҫамкуна перс ҫурам, халӗ те сана ку таранђен хӗрхенсе пурӑннӑ, тункатана!...

— Никитӑ Хӗвегӑрђӑ, Никитӑ Хӗветӑрђӑ, тет Антун хађ йӗрес пек: —Аттемӗр пулсам!... терӗ те, унӑн ури умне персе анђӗ.

— Е! Есӗ мана тилмӗрнипе ҫавӑраймӑн, кай кунтан! Епӗ хушнӑ пек пултӑр! Ђас кай, терӗ урине тапса.

— Мӗлле йулашки лашана сутам-ши? Манӑн вара нимӗн те йулмасӗ ӗҫке... Хађ те ыйткалама кайнӑҫке епӗ...

— Тата калаҫса тӑр... Екӗрте йармӑркка вӑхӑђӗ пулмасан, епӗ санпа кун пек тапӑҫмастӑмђӗ те ха.

Ҫав вӑхӑтра управђайушђи пӳрђӗ ђӳревиђен пӗр, шурӑ тутӑрлӑ, типпӗмрех питлӗ, хӗрарӑм пӑхса:

— Никитӑ Хӗветӑрђӑ!, Никитӑ Хӗветӑрђӑ тетӗп, ђасрах ђей ӗҫме кӗр, кӗтсе ывӑнтӑмӑр сана пӑйан, терӗ йӑнӑшарах сасӑпа.

Управҫайушҫи, пӳрҫӗ йеннелле ҫавӑрӑнса, Антунӑн малалли сӑмаххисене хӑлхана ҫикмесӗр, ҫей ӗҫме васкаса кӗрсе кайрӗ.

Тroскински хреҫҫенӗсем хӑйсен управҫайушҫи йепле хытӑ ҫӗреллӗ, каҫарусӑр, сынна хӗрхенменскер сын иккенне пур те пӗлнӗ. Унтан каҫару ыйтни ахалех пулассине Антун хӑйсен йалӗ сыннисенҫен те авантарах пӗлнӗ. Вӑл хуллен утса управҫайушҫи картишӗнҫен урама тухнӑ. Хӗвел анса, каҫ тӗттӗмӗ те ҫӗр ҫине ӳкнӗ, сулхӑнлана та пуҫланӑ. Антун килне урампа каймарӗ, таҫтан йӗтемсем, пахҫасем хыҫӗпе утрӗ. . . .

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Уй хапхи патнелле ҫитнӗ ҫӗрте Антун куршанак тӗмӗ ҫинҫе пӗр ула тутӑр ҫакӑнса тӑнине курах кайаӗ. Ҫакӑ куршанак тӗмӗ йӗри тавра йӑвӑҫ тӗмӗсем таптанса пӗтнине курсан, таркӑн тавраш, пӗр пӗр сын киллине курса, вӑрманалла тарса кӗнӗ пулмалла тесе шутласа илҫӗ Антун. Ҫак вӑхӑтра вӑл хӑй хуйхи суйхи синҫен манса, куршанак тӗмӗ патне пыраӗ те, тутӑра илсе ӑна пӑхкаласа тӑраӗ. Унта нимӗн палли-мӗнни суккине пӗлсе, хӗвне ҫиксе малалла утаӗ. Нумайах та кайман, ӑна хирӗҫ унӑн кӳрӗш сыннисем Пиҫук Ҫтаппанӗпе унӑн аслӑ ывӑлӗ Пантелеймӑн кӗпе вӗҫҫӗн, ҫара пуҫ, куҫ пуҫӗсене салатса ҫарса пӑрахнӑ, хӑшлатса

ҫупса пыраҫҫӗ. Хӑйсем темӗскер аллисемпе сулкалаҫҫӗ. Антун тӗлне ҫитсенех, вӗсем икӗшӗ те ҫаранса:

— Хӑта сана, ҫул ҫинҫе кам та пулин хирӗҫ пулмарӗи? тесе васкаса ыйтрӗҫ.

— Ара, епӗ, пӗр ҫын та тӗл пулмарӑм ӗҫке, терӗ Антун.

— Акӑ йапала, никама та хирӗҫ пулмарӑна?

— Никама та курмарӑм!... терӗ Антун. —Ай ҫӗр ҫӑташшӗ!.. Усал пулнӑ пулӗ вӑл. Хамӑр хӗрарӑмсем кӗлет патӗнҫе йӗтӗн тыллавӑ; ҫипер ӗҫленӗ вӑхӑтра кӗлетре кӑшӑрт тунӑ сас илтӗнсе кайнӑ. Кӗлете пӑхаҫҫӗ: пӗр ҫын лара парать тет. Хӑй, ҫын пынине курсан; вӑлть тухса сирпӗнҫӗ тет. Арӑмсем курса палласа та йулайман. Кайран кӗлете пӑхаҫҫӗ те, виҫӗ ҫӑх ҫук. Вара мана ҫӗнме пыҫӗҫӗ. Епӗ Петӗрпе тавай хӑвалама!... ҫупатпӑр ҫупатпӑр, ҫук, пӗр ҫын та кураймарӑмӑр...

— Есӗ те курман терӗниха, хӑта?...

— Курмарӑм хӑта, курмарӑм, пӑхха, ҫакӑнта йӑвӑҫ тӗмӗсем, ҫын ҫӗмӗрнӗ пекех ванса пӗтнӗ.

Кӳршисем, Антунран иртсессӗнех, каллех ҫулпа малалла ҫупрӗҫӗ.

Кӳршӗсенҫен уйӑрӑлсассӑн, Антун хӑй тӗллӗн пуҫне усса шухӑшласа пырать. Мӗскерлеха ку капла кӑҫал вӑрӑсем питӗ ас-

рĕç, çавăн пек сийен туписене ђылайах каласçĕ. Ытла та асвă ĕçке ха ку йапала. кăнтăрлах, куç умĕнђех çаратаççĕ. Çавнашкал пĕринне лашине илсе кайнă теççĕ, теприпне кĕлетрен укçисене, хĕрарăм йапалисене—туприсене илсе тухнине калаççĕ. Акă нумайах та пулмасť Шĕшкĕ кассинђи Тăрмитун, вăрманпа пынă ђухне, икĕ çĕтĕк тумтирлисем хирĕç пулсан, йури калама хушнă тет ĕçке ха, сирĕн старăста лашине ђипер сыхлатăр, унсăрăн илсе кайаççĕ тесе. Çапах темĕн ђул лайăх сыхласассăн та, лашине пĕр çĕрне илсе кайнă. Ай тамаша!... Çапла шухăшлакаласа пырса, вăл, хăй хуйхи суйхи çинђен мансах кайнă. Килне çитнĕ çĕре каç тĕттĕмĕ йăлтах хупăрласа илнĕ. Пўртре пур те лăпланнă. Арăмĕ сĕтел çине пуçне хурса, аллисемпе йулашки йулнă çур çăкăра ыталаса çывăрса кайнă. Хăйă çути шăши куçĕ пек йăлт, йăлт сўнес пек çунса ларнă. Кăмака çинђе çывăракан икĕ ађа хăрлатни илтĕннĕ. Антун, хăйă вĕçне татса пăрахса, лайăхрах тўрлетет те, арăмĕ çумне пырса ларať. Арăмĕ йăлтах вăранса кайрĕ.

Вăл упăшки йеннелле çавăрăнса:

— Мĕншĕн ђĕнтернĕха ку усал? тет...

— Мĕншĕн пĕр сăмах та ђĕнместĕн?... терĕ арăмĕ, упăшки кĕпи аркинђен туртса.

— Ах-хах-ха! мĕн калаçмалла ĕнтĕ ун çинђен, лашана кайса сутма хушрĕ йармăрка-

на!... Халĕ хĕлле лаша кирлех мар, лашасăр та пурăнма пултаратăн, тет... Асту, пуçларĕ ĕнтĕ, ахалех каларăм сана, есĕ ху куççулĕпе мана пушшех çунтаратăн, макăрсан çăмăлтарах пулĕ тетни мĕн? Хамăрăн ĕмĕрте çавна курмалла пулҙĕ пулĕ, мĕн тăвас ĕнтĕ?...

— Ах, Антун ҫунăм! сана питĕ хĕрхенетĕп... çисех йаҫĕçке ку усал сана... пĕтересех тет пулĕ ĕнтĕ... Çакăн пекҫи есĕ... халĕ сана пĕлес те çук... çапла каларĕ те выртсах макăра пуçларĕ.—Ах-хах-хах! Хурлăх йатне çуралса ӳсрĕмĕр пуҙ... Çакă нуштана курма епĕ, тăлăх турат, сана каҫҫа килтĕм пуҙ..

— Варук, Варук, итлеха, Варук... пĕр сăмах калам сана!... Пĕтĕмпех пĕтмĕпĕр халĕ, нумайах та пулмасť Çĕн Касри Хветуттăҫ хирĕç пулҫĕ те, ман пата тарçа кĕрĕшместĕни, çулталăка аллă тенкĕ парăттăм терĕ... Питех ан йĕрха, çавăнта тарçа кĕрсен кулапайлăх та пулĕ.

— Ах ха-хах!.. ан кала ун çинҫен мана, Хветуттăҫ такçанах тытнă тет вăл тарçă... Ах, хурлăх йатвех çуралнăçке те...

Çапла каласан, вăл сак çине персе анса, тата хытăрах уласа йĕре пуçларĕ.

— Ха, астуман та епĕ, ей Варук, Варук тек, пăхха, пăх—акă мĕн йапала тупса кил-

тĕм епĕ сан ваҫҫи ҫул ҫинҫен... тесе, хăй хĕвĕнҫен хайхи тутăра сĕтел ҫине кăларса хуҫĕ. Ҫулпа ҫипер пынă ҫухне, пĕр йăвăҫ тураҫĕ ҫинҫе ҫакăнса тăра парай, пĕр ҫын та курăнмарĕ те, илсе хĕве персе ҫикрĕм.

— Ара, кăна хай карҫăк ӳкернĕ вĕт... терĕ арăмĕ.

— Мĕнле карҫăк?—леш ыйткаласа ҫӳрекени, паҫăр хамăр патра кĕнии?..

— Ай, унăни вара, ыйхă тĕлĕшĕпе аташатăн пулĕ есĕ?... терĕ упăшки.

— Епĕ хам курнă, вăл ҫакăн пек тутăр ҫыхнине, терĕ арăмĕ.

— Ну, Варук, тем пуглĕ карҫăк мар пулĕ вăл, куркаланă ҫынсем ырах каламаҫҫĕ ун ҫинҫен, йепле ҫасах вĕҫнĕ ха вăл. Ҫук, хамăр пата урăх ан кӳрт есĕ ăна, тем пулас!... Хăна ҫасах килсе кайай те, нумай сăнай теҫҫĕ. Епĕ хам та ухмах, пер йар, мушт ҫăнах та сăнама ыйтай, ҫынăн шухăшне пĕлейместĕн ҫав. Епĕ астурăм ăна, пĕрмай пирĕн йалти хыпара ыйтса пĕлсе ларай. Камăн мĕнҫул выҫăх ҫĕрлĕх, мчҫе лаша, мĕлле пурăнай... Акă пайан та Пурис Стекнейĕ ҫинҫен ыйтрĕ, мĕне кирлĕши ку ват супна!... Урăх ан йарса пустар ăна хамăр патăмăра, тем пулас, тем кайас...

— Ҫавăн тутри ку, ҫавăн, акă варринҫе ҫĕтĕк пур, ҫавăн тутри, ҫавăн, терĕ Варук куҫĕсене шăла шăла.

— Ха, ватă пуçĕпе çылăх пуçтаратĕçке, хăйне ыйткалакан вырăнне хурса çӳрет, намăссăр. Ахаљ каламаççĕ çав, укçа нумай тесе унне... Ах-ха-хах!...

Çапла йумахласан, Антун салтăнђĕ те, вĕри сывлăшшĕпе темиçе хутђен йывăррăн сывласа йарса, ађасем патне кăмака çине улăхса выртрĕ. Варукĕ те хăйă сӳнтерђĕ те, вăл та выртрĕ. Пӳртре шăпах пулђĕ. Анђах ђăнах çывраймши мĕскĕн Антун, мушт çĕр каçиђђен те пĕр куç хупман пулĕ. Пĕр шăрђăк анђах çывăрман. Вăл хăй йурриие йерипен йерипен пуçласа, кайран хытăран хытă кăмака çинђе çывăракан ађасен сассине ăмăртмалла ђăрăклаттарнă.

### III.

Пӳртре сĕм тĕттĕм. Антун пуçне йерипен çĕклесе пăхса, ђылайђђен итлесе тăђĕ. Арăмĕпе ађисем хытă çывăрнине пĕлсе, вăл шăппăн, пĕр сывламасăр, кăмака çинђен анђĕ те, çула кайма хатĕрлене пуçларĕ. Аллисемпе хыпаласа кĕрĕкпе калпакне тупрĕ, тата пĕр татăк çăкăр касса хĕве ђикрĕ те, алăка тађăрах хупса хăварса—карташне тухса кайрĕ.

— Çывăрăрах ĕнтĕ тăранађђен, куççулпе манăн ăша çунтараканскерсем; ахаљ те пуçа нысçта кайса ђикейместĕп, терĕ.

Унтан лаша витине кĕђĕ. Лаши хуçине паласа, кăтра çилхеллĕ пуçне унăн йенмелле

çавăрттĕ, хăлхисене тăратрĕ, хÿрипе выљатса кĕçенсе илтĕ.

— Ну, çитĕ, çитĕ хÿрене пăлтăртаттарма, терĕ Антун ăшă кăмăллă сасăпа.—Килтен тухса кайас килмести мĕн санăн? Тух витерен, туртăнкаласа ан тăр, есĕ мар,—етем те хăйĕн ирĕкне хирĕç кайаĭ. Ахăр, сана та хуçа хуйхине çурмалла тума килтĕ пулĕ.

Унтан пуçне йĕвен тăхăнтарса, карташне çавăтса тухрĕ: халиттен питĕ лăпкă, йăваш, нихăçан та катакалавса, пăшăрханса, турткаланса тăмансскер, халĕ ĕнтĕ хăй çуралса ÿсиĕ килçуртран, уйăрăлса кайассине сисиĕ пек—тăлхăраĭ, пуçне суллаĭ, тапăçаĭ, унталла та кунталла, тинкĕрсе пăхса, турткаланаĭ. Антун, хăйĕн, хаљ ишĕлсе анас пек ларакан пÿртĕ çине тылайттен пăхса тем шухăша кайса тăтĕ. Вара вăл лашине йĕвен авринтен (тĕљпĕртен) тытса урама çавăтса тухрĕ, унтан утланса ларса, хăваласа туптара пуçларĕ. Антах темĕнтул хăваласассăн та, хирелле тухасшăн пулмарĕ,—тараса патне сĕтĕрсе кайса, пĕр тăваткăл урампа сиккипе тупса çавăрăнте те, каллех хăйсен хапхи патне пырса тăтĕ. Антун нимĕн тума аптăрана йенне, лаши çинтен анса, йĕвен авринтен çавăтса кайрĕ.

Уй хапхи тĕриклетсе хупăнтĕ. Çĕрхи тĕттĕмлĕх кăшт кăна çутăла пуçларĕ. Антах

уйар кун пулмасси пӗлӗт ҫине пӑхсассӑн палӑрсах тӑнӑ; хӗвел тухӑҫ йенҫе халиҫҫен хӗрелсе тӑракан тӑрӑххӑн тӑрӑххӑн ылтӑн тӗслӗ илемлӗ пӗлӗт те курӑнмасӗ. Хурарах пӗлӗт ӑна хыҫалтан хӑвалана пек шӑваӗ. Ир тӗтреленсе тӑраӗ. Йӗпе ҫанталӑка кайасси курӑнсах тӑраӗ.

Троскински йалӗ айлӑмра ларнӑ. Ҫавӑнпа вӑл айакран та, йалӑн пӗр вӗҫӗнҫен те тепӗр вӗҫӗ курӑнсах кайман. Ҫапла Антунӑн йалтан тухсассӑн тӑвалла улӑхмалла пулнӑ. Пынӑ ҫемӗн йал пӗрер урамӑн, йе тырӑ типӗтекен авӑн, унӑн умӗнҫе авӑнҫӑклӑ пилешӗ, йе тата улпут пахҫи курӑна курӑна кайнӑ. Малалла кайсассӑн пӗҫӗк ҫеҫ кукӑрмакӑр ҫырма, унтан йӑмрасем, арман кӗлеҫӗ тӑррисем, тата, ҫӳлерех хӑпарсассӑн, епӗр пӗлекен ӑвӑслӑх та курӑннӑ. Вара каллех пӗрерӗн пытанҫӗҫ; шыв армансем, улпут ҫурҫӗ, йал, вӗсемпе пӗрле Антунӑн пӳрҫӗ те курӑнми пулҫӗҫ. Хӑй йулашкинҫен кайалла ҫавӑрӑнса, аллине ҫамка ҫине хурса, куҫа хӗссе пӑхрӗ те, лашине ҫат тутарса хытӑ кайрӗ. Троскински ҫӗрӗнҫен тухсан, йӗвен аврине хытӑрах тытса лашана уттипе пыртарҫӗ.

Темиҫе ҫул та иртнӗ пулӗ ӗнтӗ, Антун хулапа кайманни. Ҫавӑнпа ҫулне те лайӑххӑн пӗлеймен. Управљайушҫи хӑйӗн сыннисене йалтан кӑларма йуратман пирки, кирлӗ вӑ-

хăтра та хулана вăл ҫас ҫасах ҫўреймен. Пуринҫен ытла хăйне кăмăла килмен ҫынсене питĕ хытă тытнă. Хăйĕн шуҫĕпе, кайăка ҫитлĕхре усранă пек, ҫынсене нысҫта кăлармасăр усрани—наккасани панă—айăплана шутĕнҫе пулнă. Сăмахран,—хăшĕн укҫа кирлĕ пулсассăн, хулана хаклăрах хакпа тырă-пулă сутма каймаллаи, йе ăна-кăна туйанмаллаи,—темĕнҫул тилмĕрсессĕн те, йаман. Хресҫен ҫынни шухăшлаĭ те, кўрĕш ҫыннине йе ҫывăхри йал ҫыннине йўнĕ хакпа сутса йараĭ. Хулана кайма ыйтма пыракан ҫынсене, нихăҫан та пĕр ырă сăмах каласа курман пулĕ вăл. Хăш ҫухне хытă вăрҫса, йатлаҫса хăваласа кăларса йанă. Хăш пĕр ҫухне: есĕ иртнĕ кĕркунне пыл илсе килмерĕнха, халĕ ĕнтĕ килтех лар.... тенĕ. Нимĕн тума аптăранă хресҫенсем тепĕр ҫухне пыли, йе йулашки выҫăх ҫĕрлĕхе пуссан, ҫав управҫайушҫине памалла пулнă. Пирĕн Антун та ҫавăн пирки сукка. ҫухăна йулҫĕ.

Йалтан тухсан, пĕр 16-17 ҫухрăма йахăн кайсассăн, Антун хăй йăвăр шухăшĕнҫен вăранса, хула миҫе ҫухрăм йулнине, хăй хăш тĕле ҫитнине те тăнласа илеймен. Лаши ҫинҫе шанҫăк сахал пулнă. Вăл ҫула астумасăр таҫталла та илсе кайма пултарнă. Антун сулахайалла кайма шухăшласассăн, хăй умĕнҫе пĕр тайăлса кайнă хĕрес курах кай-

нӑ. Вара унтан хӑй хула ҫӳлӗпех пынине пӗлнӗ.

— Ей йапала! ара ку Ентри пиҫҫе тӗмоскиҫке, терӗ вӑл ҫӗлӗкне хывса. Пӑр такках аташаттӑмҫӗ. Тӑнран кайнӑҫке епӗ ӗнтӗ, тет. Вара вӑл Ентри мӗнле пурӑнса, кунта килсе вилни ҫинҫен шухӑша карӗ.

Ҫапла шухӑшласа пынӑ вӑхӑтра, ӑна хирӗҫ айакра пӗр урапа курӑнса кайнӑ. Малтан вӑл пушӑллах пек курӑнҫӗ. Ҫывӑхарах пырсассӑн, лав ҫинҫе выртакан ҫынна курса хӗпӗртесе карӗ.

— Итлеха! Йупаллӑ мӑн ҫул тата айакраи? тесе ыйтрӗ Антун.

Леш мушик пуҫне ҫӗклеме ӳркенсе ҫавса ҫыне тайанҫӗ те, Антун ҫине тинкерсе пӑхрӗ, вара пӗр сӑмах ҫӗнмесӗр вӑрӑммӑн анаслаcа каллех выртрӗ.

— Хӑта! Итлеха, хӑта, мӗншӗн ҫӗнместӗн-ха есӗ?... Инҫетреи йупаллӑ ҫул тесе ыйтатӑп санран.

Ҫын, Антун ҫине сиввӗн пӑхса илҫӗ те, каллех пӗр сӑмах ҫӗнмесӗр, лашине пушӑпа ҫапса, малалла ҫуптарҫӗ.

Акӑ пирӗн Антун уй варринҫе каллех пӗҫҫен. Лаши уттипе кӑна пырать. Хӑй куҫне сӑтӑркаласа, тункатасене ҫын марши ку тесе, унталла кунталла пӑхкаласа пырать.

Акă йна хирĕç пыракан урапа курăнах карĕ. Ђăнах та, лайăх сўсмен, тăхаланă ђĕн кутлăх, ђаплă йĕвен тăхăнтарнă тимĕр-кăвак лаша хытă ђупса çывхарать. Çатанлă урапа çинђе ларса пыракан çын,—мушик тавраш мар икенни паллах пулнă. Унăн çинђе кăвак пуŷŷух, пуçĕ çинђе картус пулнă. Анђах Антуна хаљхинђе хирĕç пулакан çын питех савăнтармарĕ. Вăл лашине айкинелле пăрса иртсе кайас тенĕђђĕ,—анђах кайран пулђĕ. Такçантанпах ку çын куçне курăнас мар тесе тăрăшша çўренĕскер, Антун Тросконский мелник куç умне кĕтмен çĕртенех пулђĕ. Мелник лашине тăратрĕ. Антун лаша çинђен анђĕ те, çĕлĕке хывса:

— Лайăх пурăнатна, Акçенти Çеменђă? терĕ.

— Аванха; есĕ ăçта кайатăн? терĕ мелник.

— Хулана, Акçенти Çеменђă, лаша сутма.... кулана́й тўллеме укçа çук пирки, пĕртен пĕр лашана сутма кайатăпçке....

— Çавăн пек канçăр пурăнăç ĕнтĕ манăн Акçенти Çемĕнђă.

— Ну, мана парăма хăçан тататăнха есĕ? Епĕ те, сахалах кĕтмерĕм пуласçке....

Антунăн ђĕлхи çыхлана тăђĕ.

— Çапла çав! тесе, сассине улăштарса, мелник йатлаçма пуçларĕ;—çулла арман авăртнăшăн санран илмелли йулнăђђĕ, есĕ спасра

паратăп терĕн, хăв куçа та кăтартмарăн, пĕр пус та санран кураймарăм.... Ун пек хăтланма йурамаст... Ун тĕлĕшĕнҫен тĕрĕслĕх пур. Кантура кайатăп та акă... Есĕ манран пăрăнса çӳренине, епĕ ҫылайраппа сисетĕп.

— Мĕншĕн-ман санран пăрăнса çӳрес...

— Çавăн пек курăнаҫ, терĕ мелник.

— Тепĕр ҫухне пама та шухăшлатăп, анҫах нимĕн пама çук. Ху та пĕлетĕн ĕнтĕ, хресҫен çыннин ăçтан ҫасах тупса парас.... Тырă та кăçал наҫар пулҫĕ, выçăллă-тутăллă пурăнатпăр. Акă тата кулачай тӳлемелле. Ăçтан тупас?....

— Унта манăн ĕç çук. Сирĕн кулачай тӳлесишĕн манăн хутаç çакса каймаллаи?... Мĕнле тумаллине тăвас пулаҫ. Парăм пур,—парас пулаҫ. Мĕн калаççа тăмалли....

— Мĕншĕн хăратăнха есĕ?.. Памастăп тесе каламастăп вĕт ха епĕ сана, —паратăп!... Кĕг ха пăртак, санăн ĕçӳ ман парăмшăн ҫарăнса тăмаст пулĕ. Пăртак вăхăт парсассăн, спаççипă калăттăм сана, терĕ Антун ăшă кăмăлпа.

— Санăн спаççипăпа епĕ кĕрĕк çĕлетсе тăхăнас çук. Мĕне кирлĕ вăл мана?....

— Санпала пайан çеç курăнăçмалла мар, Акçепти Çеменҫă.

— Çапла, пайан çеç мар; мĕншĕн урăх арманта авăртатăн? Е?

— Ӑҫта, Йемел-кассинҗи?

— Ҫавӑн та пулсассӑн та!..

— Ара, унта. Йӳнӗрех илеҫҫӗҫке ха, Акҫенти Ҫемӗнҗӑ.....

— Мӗнле йӳнӗрех?... 18 ҫухрӑм каймалла та, йӳнӗрех?...

— Вӑл ҫапла, айакраха та, унта авӑртнӑшӑн тырӑ илеҫҫӗ; есӗ укҫа ыйтатӑн, тата лав пуҫне пилӗк пус хушатӑн... Ху шухӑшласа пӑх ӗнтӗ, укҫана пирӗн хреҫҗен ҫынписеп ӑҫтан тупас?...

— Йурӗ ку, йурӗ ха.... мӗншӗн есӗ Хветӳҫҫипе Җавка Йӑванне Йемел-кассине кай ма илертнӗ?....

— Хӑҫап? епӗ илӗртнӗй вӗсене?... Мӗскер есӗ?...

— Кам пулгӑр тата? Троскински йалӗнҗен есӗ пуҫласа кайнӑ...

— Апла пулсассӑн, есӗ ху кайса пӗлнӗ пулӗ...

— Ху кайса пӗлнӗ пуҗ! Калаҫҫаса калаҫ путлӗрех, калаҫ та ан суй, епӗ ӗнер ҫуралман,—есӗ мана пӗлмест тетӗн пулӗ!

— Илӗртес тӗлӗшӗнҗен пӗр сӑмах каланӑ пулсассӑн вӗсене, ырӑ ҫынсенҗен, ӗмӗр ырӑ ан курам, Акҫенти Ҫеменҗӑ... терӗ Антун.

— Йурӗ! тата пуплешше тӑрха; санпала епӗ ыррӑп татӑлас тенӗҗҗӗ, есӗ акӑ мӗн тӑватӑн! Ху ҫеҫ мар, ыттисене те илӗртетӗн.

Хаҷ пар укҫана; кӳр, хаҷ пар! Памасан халех улпут кантурне кайатӑп. Никит Хветӗрҫӑ санӑн тӑвану мар.... Тирне сӗвсе илӗ! Тӑрха, епӗ сана кӑтартӑп!

Ҫапла каласа мелник тилкепине туртрӗ те, малалла кайрӗ.

Мелникпе хирӗҫ пулни Антунӑн малтанхи йӑвӑр шухӑшне салатса пӑрахрӗ. Унӑн, йӗпе ҫине сапа пулнӑ пек, хуйӑх ҫине хуйӑх пулҫӗ. Вӑл малтанхи пек унталла кунталла пӑхмасӑр, пуҫне усса ҫас ҫасах ассӑн сывланӑ. Ҫапла вӑл сисеймесӗрех аслӑ (мӑн) ҫул ҫине тухрӗ. Кунта Антунӑн ирӗксӗрех хӑй йӑвӑр шухӑшне пӑрахса, хаҷхи вӑхӑт ҫинҫен кӑна шухӑшламалла пулҫӗ.

Аслӑ ҫул ҫинҫе ӑна хирӗҫ пулакан сынсем нумай пулнӑ. Ҫула май йулташшем те пулнӑ. Ҫапла икӗ ҫӗвӗҫҫене хуса ҫитнӗ, пӗри—Матви, теприи—Ҫеркей йатлӑ пулнӑ. Вӗсӗмпе хулана ҫитиҫҫенех йумахласа пынӑ. Анҫах вӗсем ҫул тӑрӑшшипе унтан мӑнкӑласа, кулса пынӑ. Хулана ҫитерехпе Антунӑн ҫӗри хытӑрах кӗртлете пуҫларӗ. Малтан хӑйне йут ҫӗрте пек туйӑннӑ, арӑмӗ ҫинҫен, тата аҫасем ҫинҫен аса илнӗ. Вара унтан мелник хӑратса калани, хӑйӗн ӗҫӗ ӑнмасассӑн, йепле, Никитӑ Хветӗрҫӑран унӑн ҫемйине йӑвӑр пуласси ҫинҫен шухӑша кайнӑ. Ҫапла шухӑшласа хулана ҫитнине те сисмен. Вӑл хӑ-

вăрт лаша ҫинҫен сиксе анҫĕ те, урапа тукунĕпе сут тăвакан патне пырса, мĕнле тӳрĕрех лаша урамне каймаллине ыйтса пĕлҫĕ. Вара хула картинҫен кĕрсессĕн, тырă пĕрҫи арман ҫулĕ айне кĕрсе ҫухалнă пек, халăх хушшине кĕрсе кайса хăйĕн ырхан лашипе кусран ҫухалҫĕ.

IV.

Ку йармăркка пулакан хула, ытти уйес хулисенҫен кĕпĕрнере ҫи вађар хула шутĕнҫе тăвă. Ку хулара йармăркка пулман ҫухне пулсассăн йури кайма нимĕншĕн те кирлĕ мар пек туйăннă. Екерте витĕр ҫӳрепĕ ҫух, лашасене кантарса, йе урапа ҫуна тавраш вансассăн йусама тимĕрҫсем, урапасем сĕрме тикĕтпе сут тăвакансем, йе васкавлă ҫух пĕр пĕр йапала илме, вара каллех малалла кайма майлă хула пулнă.

Кĕркунне йармăркка вăхăтĕнҫе, вăл, калама ҫук, улшăнса пĕтĕмпех урăхла курăннă. Тĕлĕнмеллех те мар: мĕнҫул халăх тухнă кунта тырă, йе атă сутса тунă укҫипе, такҫантанпа тытса усранă вунă пус тенкипе, йе пилĕк пуслăх пăхăрпа хреҫҫенсем, таврара пурăнакан усламҫăсем сутуилӳ тăвакан хуҫасем, хулара пурăнакан мешҫенсем, темиҫе тĕрлĕ усламҫăсем, сĕтĕрĕнсе ҫӳрекен ҫынсем, пур те кунта килсе тăрăннă. Хăшĕ ĕҫпе, хăшĕ услам курасшăн, хăшĕ курма

çеç, хăйнĕ вăрласа çӳреме, йе укçа йенђĕкне (хутаççине) пушатма тесе килнĕ. Тепĕр йенђен каласан йурат̆ те çав килни, мĕншĕн тесен, илмелĕх те, курмалăх та пур çак тери ђаплă кĕркуннехи йармăрккара. Мĕнђул кунта лупассем, лаша кăкармаллисем туса пĕтернĕ, йупасем, хушăсем лартса тухнă, пасар урамĕнђе çеç мар, мĕн пур урамсенђе, ансăр урамсенђе, урам кĕтессисенђе, ђăнкă вырăнсенђе шыв хĕррине çитеђђенех. Мĕн çукши вĕсен айĕнђе, тата урăх мĕнле тавар кирлĕши? Ĕређĕ ĕређĕпе лартса тухнă ђăпар саваtсем, кăкшăмсем, вĕрене кашăксем, хурăн пур̆кĕсем, çăка ђашкисем, тĕрлĕрен сăрăпа сăрласа пĕтернĕскерсем, лаххансем, лакăмсем, ђӳлмексем, кăткă пек нумай тĕслĕрен сават-сапасем. Тепĕр йенђе тем çӳлли купаланса тăрат̆: хутаçлă пăрăç, мăйăр, çемçе çимĕç, пылак çимĕç, премĕк; тата тепĕр йенђе çакăнса тăраççĕ: шăрçасем, атă тĕплĕхсем, пир авăрсем, тĕслĕрен, йӳнĕрех, нађартарах çитсӳсем, тĕслĕрен тутăрсем, симĕс-кăвакки, йăлтăр-йалтăр кăвакки, сарри, çутă хĕрли, ушкăнĕ ушкăнĕпе, йе пĕрерĕн пĕрерĕн çакса хунисем çилпе вĕçкелесе хумханса тăраççĕ.

Мĕнђул хĕрлĕ таварсем, Мускав çитсусем!.. Мĕнђул Костром таварĕ, саппунсем, хăлха çакки, тӳммесем, тăхлантан туса сăр-

вăрт лаша çинҫен сиксе анҫĕ те, урапа тукунĕпе сут тăвакан патне пырса, мĕнле тӳрĕрех лаша урамне каймаллине ыйтса пĕлҫĕ. Вара хула картинҫен кĕрсессĕн, тырă пĕрҫи арман ҫулĕ айне кĕрсе çухалнă пек, хулăх хушшине кĕрсе кайса хăйĕн ырхан лашипе куçран çухалҫĕ.

IV.

Ку йармăркка пулакан хула, ытти уйес хулисенҫен кĕпĕрнере ҫи вaҫар хула шутĕнҫе тăнă. Ку хулара йармăркка пулман ҫухне пулсассăн йури кайма нимĕншĕн те кирлĕ мар пек туйăннă. Екерте витĕр çӳрепĕ ҫух, лашасене кантарса, йе урапа çуна тавраш вансассăн йусама тимĕрçсем, урапасем сĕрме тикĕтпе сут тăвакансем, йе васкавлă ҫух пĕр пĕр йапала илме, вара каллех малалла кайма майлă хула пулнă.

Кĕркунне йармăркка вăхăтĕнҫе, вăл, калама çук, улшăнса пĕтĕмпех урăхла курăннă. Тĕлĕнмеллех те мар: мĕнҫул халăх тухнă кунта тырă, йе атă сутса тунă укçипе, такçантанпа тытса усранă вунă пус тенкипе, йе пилĕк пуслăх пăхăрпа хреçҫенсем, таврара пурăнакан усламçăсем сутуилӳ тăвакан хуçасем, хулара пурăнакан мешҫенсем, темиçе тĕрлĕ усламçăсем, сĕтĕрĕнсе çӳрекен çынсем, пур те кунта килсе тăрăннă. Хăшĕ ĕçпе, хăшĕ услам курасшăн, хăшĕ курма

çеç, хăшĕ вăрласа çӳреме, йе укçа йенђĕкне (хутаççине) пушатма тесе килнĕ. Тепĕр йенђен каласан йурă те çав килни, мĕншĕн тесен, илмелĕх те, курмалăх та пур çак тери ђаплă кĕркуннехи йармăрккара. Мĕнђул кунта лупассем, лаша кăкармаллисем туса пĕтернĕ, йупасем, хушăсем лартса тухнă, пасар урамĕнђе çеç мар, мĕн пур урамсенђе, ансăр урамсенђе, урам кĕтессисенђе, ђăнкă вырăнсенђе шыв хĕррине çитеђђенех. Мĕн çукши вĕсен айĕнђе, тата урăх мĕнле тавар кирлĕши? Ĕређĕ ĕређĕпе лартса тухнă ђăпар савăтсем, кăкшăмсем, вĕрене кашăксем, хурăн пуракĕсем, çăка ђашкисем, тĕрлĕрен сăрăпа сăрласа пĕтернĕскерсем, лаххансем, лакăмсем, ђӳлмексем, кăткă пек нумай тĕслĕрен савăт-сапасем. Тепĕр йенђе тем çӳлли купаланса тăрать: хутаçлă пăрăç, мăйăр, çемçе çимĕç, пылак çимĕç, премĕк; тата тепĕр йенђе çакăнса тăраççĕ: шăрçасем, ată тĕплĕхсем, пир авăрсем, тĕслĕрен, йӳнĕрех, нађартарах çитсӳсем, тĕслĕрен тутăрсем, симĕс-кăвакки, йăлтăр-йалтăр кăвакки, сарри, çутă хĕрли, ушкăнĕ ушкăнĕпе, йе пĕрерĕн пĕрерĕн çакса хунисем çилпе вĕçкелесе хумханса тăраççĕ.

Мĕнђул хĕрлĕ таварсем, Мускав çитсусем!.. Мĕнђул Костром таварĕ, саппунсем, хăлха çакки, тӳммесем, тăхлантан туса сăр-

ланă хăлха ункисем. Тĕнҫипе салатсан та ҫитмелле.

Пăхха ĕнтĕ мĕнҫул ҫавсем хушшинҫе халăх хумханаЙ, тĕрткелеҫҫĕ, хыпаланаҫҫĕ, васкаҫҫĕ! Мĕнле тăвăр? хăшĕ пĕри пĕр йенелле утаЙ, тепри тепĕр йеннелле, вара каллех пĕр ҫĕре купаланаҫҫĕ, персе хĕстернĕ пек хĕстерĕнеҫҫĕ. Аптрамалла, хуЙ пĕрерĕн пĕрерĕн туртса салатса йар! Кăшкăру, кĕрлевŸ, тĕрлĕрен сасă шăхăрни, тимĕр таврашĕпе йапăраттарни, макăрни, тапăртатни, кĕҫенŸ, алă ҫапни—ҫавсем пĕтĕмпе пĕр ҫĕре пухăнса ҫыпҫăнса нимĕн пĕлмелле мар йурă пек туйăнса кайаЙ. Итлесе тăрсан хăш ҫухне ҫур сăмахсем, сăмах пайĕсем, йе хытăрах кăшкăрнă сасăсем илтĕнкелеҫҫĕ. Ай, паЙушки, хĕстереҫҫĕ! ай аЙ, хĕстереҫҫĕ!...

Кунта халăх хушшинҫе паҫăр Антуна хулана ҫывхарнă ҫухне ҫулмай пулнă йулташсем, Матвипе Ҫеркей йатлă, ҫĕвĕҫҫем те пулнă.

Ей Ҫеркей, пăхха, ав унта паҫăр хулана пирĕнпе килнĕ ҫын тăраЙ. Ҫеркей, Ҫеркей, ав унта.... ырхан лаши те унтах.., ахăр лашине сутайман пулĕ... терĕ Матви.

— Ей ватсупнă!, тесе пуҫларĕ вăл хăйĕн мăшкăллă калаҫуне.

— Мĕн йатлă есĕ?... ырă ҫын... пуплесшĕн те марĕҫке есĕ пирĕнпе.

— Мĕнле ĕҫӳсем?...

Антун хăйĕн икĕ йулташĕпе аҭасем пат, нерех пырса: Аванха, аҭасем, терĕ. Антунăн йулташĕсем иккĕшĕ те пĕр пек пĕҭĕкрех хĕрлĕрех сынсем пулнă; йанаххисем шĕврекеҭейе кусла, кăвак ҫĕтĕк аҫам ҫинҭен писихх сыхнă, писиххи хушшинҭе ăйăр касмалли хатĕрсем пулнĕ, така тиррĕнҭен ҫĕленĕ калпак, атă кунҭисем ҫӳлĕ пулнă.

— Мĕншĕн есĕ хуйхăллă тăратăн? терĕ Матви кулкаласа.

— Хаваслăх марха ман, терĕ Антун айккинелле пăхса.

Ҫав вăхăтра Антун патне икĕ мушик пырса тăҭĕҫ. Ахăр кĕсем мелниксем пулмалла, —ҫипуҫсем ҫăнăхлă.

— Хăта, итлеха! лашуна ҭăнахах та су татни халĕ есĕ? терĕ мелниксенҭен пĕри.

Антунпа тăракан сарă сынсем пĕрне пĕри куҫ хĕссе Антуна хыҫалтан кăшт туртса хыҫĕнҭен шăппăн: Асту, хăта, ан сут, улталасшăн вĕсем сана, ан пар!, терĕҫ.

— Мĕскер есир мана пĕҭĕк аҭана улталанă пек улталасшăн. Йепле йӳнĕ хакпа илесшăн вăл...

— Пăрах ҫавăнпа калаҫма, мĕнле ҭăркашса тăрат вăл, унпала такам та килĕштереймĕ. Нилĕк сехете йахăн ирттерсе тăтăмăр. Вăхăтне иртерни лаши те тăмасĭ, урăх та тупăпăрха, нумай кунта.

— Ђăн калатăн, тĕнђе хĕсĕк мар теççĕ, есир сутаканĕ, епĕр илекенĕ, тупăпăр, терĕ сарă йулташсенђен пĕри.

Мелнĕксенђен пĕри лашана илесшĕн те пулнă пулмалла. Вăл лаша йĕри тавра тепĕр хут пăхса çавăрĕнђĕ те, урисене тыткаласа, çилхинђен туртса пăхрĕ, унтан пуçне сулласа малалла утрĕ.

— Ай, ай, йӳнĕ хакпа илесшĕн, 35 тенкĕ анђах парат... çак лашана 70 тенкĕ те сахал, терĕ сарă йулташĕсенђен пĕри.

— Ей, лашуна сут мана! Ма хуйхăран, мĕн пуçна усрăн? Мĕнђул ыйтатăн? Мĕнђул ыйтатăн çавăнђул паратăп; анђах ђур, ĕçкĕ санран, лашашăн укçи хам илсеп тесе мăшкăларĕ çĕвĕç Матви.

Антун вĕсене хирĕç хыттăн: Мĕн сыпăçатăн ха есĕ ман çумма? Мĕн кирлĕ вара сире манран?—Мĕскĕн Антун хăйĕн тулнă ăшђиккине кама та пулсан каласа çемçетесшĕн пулнă.

Çĕвĕçсем, хăранă пек пулса, кайалла ђакса тăђĕç. Патнерех тăракан сынсем ахăлтатса кулђĕç. Матви, хăйĕн хура кăтра çӳçлĕ пуçне сынсен хушшинђен малалла тăсса, хытă сасăпа татах кирлĕ мар сăмахсем каласа Антуна виртлесе тăкрĕ.

Хайхи сарă сынсем хыççăн Антун утса пынă ђухне, икĕ ђыкан пыђĕç те:

— Ырă сын, лаша санăпи? тесе ыйтрĕç.

— Манăн, терĕ Антун.

— Сутатни?

— Асту ан сут, кун пек çынсем хăрушă, каллах улталасшăн сана, терĕç йулташсем.

— Сутатăп, терĕ те йулташĕсем çине хăйусăртарах пăхса илҫĕ.

Вара ҫыкансенҫен пĕри, лайăх, илемлĕ арçын, çĕтĕк йĕмлĕ, саплаnă вăрăм кăвак ермекпе, лаша патне ҫупса пыҫĕ; унтан тутисене уçса тавăрса шăлĕсене пăхрĕ, пĕр уринҫен, тепĕр урине çĕклесе пăхрĕ те икĕ аллипе атă кунҫине шат тутарса:—„Лаҫи край, йан татаринас, пишл, ты керой лаҫи“ терĕ хăйсен ҫĕлхипе (аҫасем, аван çеç ку лаша, урисене тăнтăн тытать, тĕреклĕ аван курăнать, калаçса пăхăпăр).

— „Маҫынав нурано“ (ватă пек туйăнать) терĕç ытти ҫыкансем.

— „А нанапо—пропипе, пропипе“ (çапах çўретсе пăхарха).

Виçĕш те лашана пăхма тытăнҫĕç.

— Мĕнҫул тăрать? терĕ пĕр ҫыканĕ.—70 тенкĕ, терĕç сивĕн сарă çынсем Антун вырăнне. Хăйсем Антуна хăвăртрах айăккинерех илсе кайса, хăлха умĕнҫе пăшăлтатас кăмăл пулнă иккен.

Ҫыкансем кулса тăҫĕç те:

— „А саранта рупли круук, те котшо лове ватопаш, сытуте лове? 140 тенкĕ тăраў, хуçи çуррине катаў, вара илетпĕр; укçа пирĕн пури? терĕ пĕри йулташне.

— „Сы“ (пур!..) терĕç ыттисем.

— Лаџи (йурĕ). Ну хăта, есĕ ытлашшине ыйтатăн, тесе малалла йумахлама пуçларĕ пĕр џыканĕ,—хаклăрах ыйтатăн хăта, лаши те ватă, ырхан, акă йулташсем те çапла калаççĕ.

— Темскерлеха кунăн çўлти шăлĕсем малалла мăкăрăлса, тухса тăраççĕ. Ахăр џăхăмăç пулмалла ку, терĕ лаша шăлне пăхса пĕр џыканĕ... 70 тенкĕ ыйтатăнтаха есĕ. Нумай вакласа тăмăпăр тĕрĕссине кала: ну,— мĕнџул?

— Сирĕншĕн тесен мĕнџул тăраў? терĕ Антун.

— Мĕн калаçмалли пур унта, епĕр хакĕ çинџен питех џарăнса тăмăпăр; малтан курасџĕ унăн џуппине.... Лаши лайăх пултăр, хакне парăпăр... сана кăмăлсăр тумăпăр, терĕç џыкансем.

Сарă сухал Антуна айкинерех илсе кайса:

— Ех, хăта! ан парăн вĕсене... илесси пулмасў вĕсенџен, лашуна ахалех асаплантарса ывăнтарăн, хăв та супăн.

— Ыран илекен тупса паратпăр тесе, паçăрах каларăмăр сана, пирĕн сăнаса хуви пур,

пасăр темиçе хут уттарса çӳресен те илмерĕç, халĕ те илмеççĕ. Суптарса çӳрени те ахалех пулĕ. Вĕсем çавнашкал çынсем, тесе илĕртнĕ сарă йулташсем.

— Тав тăватăп сире мана ырă суннăшăн. Хăвăр та пĕлетĕр епĕ хуйхăллă çын иккенне, терĕ Антун.

— Çавăнпа епĕр сана ырă тăвас тесе хĕрхенсех суттармастпăр, сӳтсе йавмасăр вăл ĕç пулмасť.

— Тăхта! ахăр вĕсем хакне тивĕçлине памĕçши, темĕскерле хуйха карăм ха епĕ, хăвăртрах аларан вĕçертесҫĕ, терĕ Антун.

— Кай, кай, ҫармастпăр, анҫах ахалех ҫуптарса çӳрени пулаť, терĕç сарă йулташсем.

— Антун лашана йĕвен аврипҫен çавăтса, ҫыкансемпе пĕрле, лашасене ҫуптарса пăхакан усланкă вырăна кайрĕç. Сарă çынсем вĕсен хыçăнҫен пынă. Пĕр çирĕм утăма йахăн утсассăн, васкавлă кайалла çаврăнса айакарах тăракан икĕ мушике аллисемпе сулласа хăйсем хыççăн пыма паллă паҫĕç; вара вĕсем çав вăхăтрах вырăнтан тапранҫĕç; кăна Антун та, тата ытти сем те сисмерĕç. Кун ахалех иртрĕ; лашине сутайман, хăй ывăннă, çийесси те килнĕ, çитменнине тата лаша илекенсем пырсассăн, хакне килĕштере пуçласассăн, темшĕн ăшĕнҫе йăвăр пулнă. Ла-

шине хĕрхенсе унтан уйăрăлас килмен пирки, çав вăхăтрах вăл киле таврăнса, Никит Хвĕтăрҫăран мĕн асап хушнине ҫăтма хăтĕр пулнă. Унăн ăшҫикĕ тата хытăрах хуйхăра пуçларĕ, ахăр пĕр-пĕр инкеке сиссе пулĕ. Унăн куçĕнҫен темшĕн куç çўлли шăпăртатнă. Кăшкăрса макăрса йарасран пăртаккях тытăнса тăнă.

— Ех каман чорас край, тамар у тевел чорос ме!“ (Ех вăрласҫĕ ку лашана, вăрласҫĕ) терĕ пĕр ҫыканĕ. Унта лашаллисем те ҫылай пулнă. Вĕсен хушшинҫе леш сар йулташсен паллă парса систернĕ çынсем те пулнă.

— Ну лаша хуçи!—утланса ҫуптарса кăтарт, мĕнле ҫупаť вăл санăн лашу, терĕ Антуна пĕр ҫыканĕ.

— Антун лаши патне йерипе пырса, унăн çине тайанса тăҫĕ. Вара хăйĕн вăрăм илемсĕр урисемпе (вăй çук пирки) тапаçланкаласа çапах утланса ларҫĕ. Йĕри тавра кĕлĕрленсе тăракан çынсем, хăшĕ пĕри лашара, йе Антунра айăп курса пăрăмсем тупса мăшкăласа кулнă, хăшĕ пĕри лашине ырласа тавлашнă.

— Ну халĕ ĕнтĕ хăвала!... терĕ пĕр сасă халăх хушшинҫен. Çынсем çул парса сирĕлсе тăҫĕç.

Анҫах вăйран супнă, халтан кайнă выçă лаша, хуçи хăвалланипе итлесшĕн пулман;

пуҫне усса, урисемпе тĕреклепсе тăрса, сиввĕн пăхкаласа вырăнтан хускалмасăр тăнă.

— Ку лаша ҫăхăмăҫ пулмалла... Ҫук, мĕн—курмастăра им, аташнăсем!... Ывăнна вăл.... сывласа илме вăхăт парăрха ăна!— тенĕ сăмахсем пĕр йенҫен те тепĕр ҫĕртен илтĕнсе карĕҫ.

Антун лашине ҫуптарасшăн тăрăшса аллисемпе хăлаҫланкалаĭ, йĕвен авринҫен турткаласа ҫаптараĭ, вăрăм урисемпе сулласа унăн хырăмне хĕстерет, хăй тата ҫапла хăвалана ҫух, йе лаши мăйĕ ҫиве шуса анаĭ, йе купарҫи ҫинҫен хӳри патнех пырса ӳкет. Темĕнҫул аппалансан та, лаши хусине итлемен.

— Ай, ай, ай! терĕ пĕр ҫыканĕ: санăн лашун урине шыв аннă пулмалла, ҫăпăрккапа (пушăпа) анҫах ҫӳрет иккен.

Антун мĕн пур вăйĕпе хăвалаĭ, ҫамкаран тар тумламĕ тăпăртатаĭ.

Но! но! лашуна пулин, тĕтĕм тивни мĕн сана,—вырăнҫан та сикместĕн. Ех, ухмах выҫăх темерĕн ҫав! Но! но!.. тенĕ сана... тесе хускалкаласа лараĭ Антун.

— Йулташсем! ҫавăтса кайăрха есĕр ăна, терĕ пĕр сасă.

— Мĕншĕн ҫавăтас... вăл хăйех кайаĭ, акă сывлама вăхăт парăр-ха, терĕ тепри.

Пĕри лаша патне пырса,—ҫылайҫҫен тăраҫи ха ĕнтĕ ку ҫапла? терĕ те, хыта ҫапрĕ. Вара вăл сиккипе вĕҫтерсе карĕ. Антун аран аран тытăнса йулҫĕ, пăртакҫă кăна ўкетҫĕ.

Халăх ахăлтатса кулса йаҫĕ, лаша сиккипе хирелле ҫупса карĕ.

— Пăхăр ха ĕнтĕ йепле лайăх ҫупаҫ, терĕ пĕр ҫыканĕ халăх ҫине пăхса.

— Аван, аван ҫупаҫ; тата хытăрах хăваласассăн мĕнле ҫупăши,?... хăвалаха! тесе кăшкăрҫĕ тепри.

Леш сарă ҫынсем Антун айаккалла кайасса кăна кĕтсе тăнă, вĕсем хăйсем икĕ йулташĕ патне пыҫĕҫ те, темĕскер пуплешсе илҫĕҫ.

Антун лаша ҫўретсе пынă вăхăтра сарă йулташсем лашисемпех ҫыкансем патне пырса тăҫĕҫ.

— Акă мĕн: терĕ пĕр ҫыканĕ Антун патне пырса: — 70 тенкĕ укҫа нумай, 40 тĕнке ҫитĕ; пумай каладҫса тăмăпăр, парас тăк пар —килĕшĕпĕр, ал ҫапăпăр, памасан мĕн тăван.

Антун килĕшмесĕр хайхи сарă ҫынсем ҫине пăхса илҫĕ. Лешсем пуҫне сулларĕҫ.

— Ҫук, май килмест ку хакпа, терĕ Антун.

Сарă ҫынсен йулташĕсем ҫыкансем патне пырса:

— Мĕн, сире лаша кирлĕи? Пирĕн питĕ матур ăйăр лаша пур. Кирлĕ пулсассăн, кайса пăхăпăр. Мĕн çав хăрăк лашана калаçса тăмалла, вăхăт иртернине тăмасŤ. Айакра мар, акă кунтах тăраççĕ пирĕн лашасем. Пирĕн лаша пекки пасарĕпе те çук. Ђупасси тĕлĕшĕнђе те, туртарссинђен те пултараŤ, терĕç.

Çавсем хушшинђе тăракан пĕр çын пыђĕ те, вĕсене ђарса;

— Мĕн тăрăнаттăр ха есир сутакан çын патне? Ђиперех калаçатђĕç, есĕ ђаратăн! Авани вăл çапла туни? намăссăрсем, терĕ.

— Мĕн туртăнса тăраŤ вăл? Сутас пулсан, —сут, 40 тенкĕ параŤ, ситмест-и мĕн? Иўнĕрехи мĕн?

— 40 тĕнке памастăп, терĕ.

— Лашу сан, хăвăн прĕкў, терĕ ђыкан.

— Ну, итлеха, 40 тенкĕ тата ĕçкĕ манран йу-раŤ-и?

— Ĕçкĕ кирлĕ мар мана!.. мĕне вăл ĕçкĕ?

— Йĕвенне пĕрле паратни?

— Ăна та памастăп.

— Ей йулташсем, нумай калаçма йурататтăр çак есĕр, тесе пуçларăç леш сарă çынсем:—куратăр пулĕ сутманнине, çак хăрăк лаша патĕнђе мĕн тăрăнса тăратăр есĕр? Çак лашашăн 40 паратăр, кайар ха пĕрле, епĕр

сана ҫи лайăххине тăвата ҫулхи паллă, ырă, лашана кăтартатпăр.

— Ҫăчахах га мĕн пуплешсе тăмалли пур ҫакăнта, кайăр, сутасшăнах мар курăнаĭ.—Халĕ ĕнтĕ сывă пул, ырă ҫын, терĕ нĕр ҫыканĕ

— Хайхи сарă ҫынсем Антуна тепĕр ҫĕрелле йертсе кайрĕҫ.

— Ҫăн каламарăмăри мĕн сана?.. Мĕн йатлăҫĕ ха есĕ?...

— Антун.

— Апла, манăн пуҫана та Антун йатлăҫҫĕ ха. Сана пăҫăрах каларăм: ҫӳрени ахалех пулаĭ, кирлĕ хакпа сутаймастăн тесе; Йӳнне пăхаҫҫĕ вĕсем, вĕсене нихăҫан та лайăх хакпа йапала сутаймăн. Ыран акă сана 80 тенкĕ паракан тупса парăпăр.—Йулташсемпе куҫ хĕссе илҫĕҫ те: „Есĕ пĕлетни епĕ кама шухăшлатăп“ терĕ. Леш: пĕлетĕп, терĕ.

— Сăпаҫҫипă сире ырă сăмахшăн. Анҫах каҫа хирĕҫ ăҫта кайма пултарăп епĕ? терĕ Антун сĕлкĕшле пулса.

— Ăҫта? ун ҫинҫен шухăшлама та кирлĕ мар... Манăн шăллăм киле кайаĭ, епĕ кунта йулатăп, сапăн кăмăл пулсан, епĕ те санпах ырăп. Ăҫта хваттере кĕрсе выртмаллине кăтартма пултарăп, терĕ.

— Пĕр пус укҫа та ҫукĕҫке ха манăн... Акă инкек! лашине сутас тенĕҫҫĕ, ăна та сутаймарăм.

— Мĕн пуплемелли пур ун çинҫен. Сахали кунта укçасăр кĕрсе çывăраççĕ. Пĕр çынта хирте выртни çук, пур те хваттерте. Епĕ сана кĕтелле кӳртекен хваттер тупса парăп. Ирхине тухса кайнă ҫух:—алсанаи, кĕрĕкеи, мĕн те пулса хăваратăн, вара лашана сутсассăн кĕрсе илетĕн. Пирĕн кунта хулара çавнашкал нумай пулаҭ...

— Апла пулсассăн кайăпăр. Тен ыран сутма май килĕ...

— Ним пăшăрханма та кирлĕ мар. Паçăрах каларăмăр сана: пирĕн лаша илекенни хатĕр, паллă çын пур, тесе. Есĕ ҫăнахах та кăмăла килетĕн; ырă йăваш çын пек туйăнатăн. Сана, мĕскĕн çынна, ырă тăвас терĕмĕр ĕçке ха. Май килсен, пĕр пĕрне курăпăр, хăвах тавтăвăн.—Çапла вĕсем пасар урамĕнҫен тухса кайрĕç.

Пĕр çинçе урампа кĕрсе кайсан, шăлнĕ куçĕсĕмпе хĕссе ал тытрĕ те, сывă пулăр тесе, кайалла çаврăнса, пасар урамнелле карĕ, çынсем хушшине кĕрсе кайса пытанҫĕ.

## V.

— Ех çитмен пурнăç тункати!“ тесе, леш сарă çынсем хыççăн утса пынă ҫухне, шухăшласа пынă, пирĕн мĕскĕн Антун:—Пĕр кун иртертĕм, нимĕн уссине пĕлмерĕм; каçта пулса çитрĕ ĕнтĕ, лашине те сутаймарăм. Мĕн тăвас теп!.. Нимĕн тума та çук. Çавăн пек телей пулĕ, куҫанса лараççĕ пулĕ килте

те мескĕнсем. Йурӑ ку ырӑ ҫынсем тупӑнҭĕҫ; лайӑх хакпа илекен тупса паратпӑр тесе шантараҫҫĕ; анҭах ку ҭас мар.. Ыран тин.... Йут ҫĕрте, йут ҫынсем килĕнҭе ҫĕр каҫма лекрĕ, ҫитменнине пĕр пус укҫа та ҫук. Ыранхи кун майа килмесен, ман телейпе, лашине те сутаймӑн, вара ҫитрĕ мана инкек, ҫавӑнпах киле таврӑнӑн. Никит Хветĕрҭӑ пуҫа ҫийĕ вара, сут тĕнҭерен ӑсатĕ. Нимĕн айӑпсӑрах, хам та, арӑм та, тата аҭасем те пĕтĕпĕр. Ех, мĕскĕн пурӑнӑҫ!...

Кӑнтӑрлахи сутӑ тĕттĕмлене пуҫларĕ, хĕвеланӑҫ йенне пӑхсан ылттӑн тĕслĕ йӑрӑм-йарӑм пĕлĕт ҭасах тĕттĕм пулассине пĕлтерет. Хĕвелтен тӳртĕн ҫĕрсенҭе сӑрт айкисем, хӑйӑрлӑ шыв хĕррисем, тĕттĕмлене пуҫларĕҫ. Хĕвеланӑҫ сути шыв ҫинҭе йӑлтӑртатса выртат. Кĕрхи сивĕ ҫил ҫул тӑрӑх ҫын шӑхӑрнӑ пек уласа ҫӳрет. Хутран хутран ҫил ҫаврӑннӑ вӑхӑтра, шыв хĕрринҭе паром кĕтсе тӑракан ҫынсен сассисем илтĕнне. Йармӑрккара ҫын шавлани, калаҫни, шӑп пулҭĕ. Халӑх та сахаллана пуҫларĕ. Лавкасене, ҫӑрасемпе питĕрсе хуҭĕҫ. Пасар урамĕнҭе урапасем ҫине йапаласене пуҫтарса ашӑксемпе витсе ҫыхса хуҭĕҫ. Айалалла аннӑ ҫемĕн сас тата ытларах лӑплавҭĕ. Унта йармӑркка тĕлĕшĕн палли те пулман; пĕр икĕ лав утӑ сутма килнĕскерсем, сутаймасӑр йулнӑ пул-

сан, вӗсем нимӗн сас ҭӗвӗ те паман, пӳҫне усса. мӗскӗнӗн пӑхкаласа тӑнӑ; тата иртсе ҫӳрен ӳсӗр ҫынсен сассисем илтӗнкелленӗ.

Антунпа сарӑ сухал тӑвӑн айлӑмне анса ҫитсессӗн, пӗр ҫул ҫаврӑнӑҫ тӗлӗнҭе, халӑх пырса тӑрӑннипе, ҭарӑнса тӑмалла пулнӑ. Патнерех пырсассӑн, вӗсем пӗр ҭӑнкӑ вырӑнта ӳсӗр ҫын выртнине кураҫҫӗ, кӑвак ҫӳҫлӗ пуҫӗ ҫул йеннелле, уррисем ту йеннелле хӑпартланса тӑпӑ, йӗри тавра тӑракан ҫынсенҭен пӗри те ӑна илсе кайас тӗлӗшӗнҭен аса та илмен курӑнат. Хӑш-хӑш иртсе кайакан ҫынсем: „Ех, ухмах, ӗҫсе тултарнӑ“ тенӗ. Пӑхса тӑракансем нумайӑшӗ ӑна айӑпламан, вӗсем хӗрхенсе ҫеҫ, пуҫӑсене сулласа. иртсе кайнӑ, апҭах никӑш те ӑна пулӑшман,

Пирӗн Антун ҫав ҫынсем пек шухӑшланӑ, тӑрсан тӑрсан вӑл пуҫне сулласа, йулташне ҭӗнсе илме шутланнӑҫҫӗ, апҭах ҫав вӑхӑтра, ертел хушшинҭе пӗр ҫамрӑк йӗкӗт аҭа, кӑвак сӑхманлӑскер тухса, Антуна ыталаса илҭӗ те: „Ах! Антун пиҭе, сывӑп? Тӗл пуласса та кӗтменҭӗ, терӗ.

— Аванха, Митрухха, есӗ мӗнле пурнатӑн? Тӗлӗнсех карӑм кӗтмен ҫӗртен тӗл пулнипе.

Кун пек тӗл пулса сӑмахлани сарӑ сухала питех те кӑмӑла килмерӗ пулмалла. Вӑл ҭасах Антун патне пырса, сӑкман аркинҭен туртрӗ те: „Йулташ! хваттере кайма васкас пулат, вырӑн та йулмӗ хваттерте“ терӗ.

— Ан антăрат халĕ есĕ хваттер масарĕпе, çулталăк та иртнĕ пулĕ ĕнтĕ çынна курманни, терĕ Митрухха. Хăй каллех Антунпа каласма пуçларĕ.—Ну, санăн çемйе мĕнле сывлаĭ, арăмупа мĕнле йунеçтеркелесе пурăнатăр, аҫасем пурăнаççи!...

— Ах, Мĕтри! Ан та ыйт. Манран наҫар пурнакан тĕнҫере те урăх çук пулĕ, терĕ.

— Çав Никит Хветĕрҫах пĕтерет пуҫ сана?

— Çавă çав. Халĕ ĕнтĕ вăл хушнипе йулашки лашана сутма илсе китĕм. Пурăнăç пĕтнийех пулҫĕ пулĕ ĕнтĕ манăн.

— Ҫăнах таи? Ай-ай, хĕрхенетĕп сана! калама çук хĕрхенетĕп. Хам епĕ аван пурăнатăп. Кунтан пĕр виçĕ çухрăмра, Митхалевски хапрăкра ĕçлетĕп. Хуçи те питĕ лайăх, нихçан та сивĕ сăмах каламасĭ. Тата каласа кăтартха, мĕнле пурăнаççĕ Çекней арăмĕпе? вăл манăн пуçана пулаĭ.

— Мĕн пултăр вĕсене, çăкăр пур, пурăнаççĕ.

— Çĕнĕ пўрт лартнă тенĕ пек илтрĕм епĕ,—ҫăнахтап?

— Лартнă.

— Ку йурĕ-ха. Есĕ ăçта хваттере кĕтĕн-ха?

— Акă кунта перевоо тĕлĕнҫе айакра мар, тесе хăвăртăн каласа йаҫĕ Антунăн йулташĕ.

— Ырă куртăр вăл, мана пулăшнăшăн, хваттер те тупса парас тет ха, терĕ Антун сар сухал çине тĕллесе кăтартса.

— Кайар пуђ, Антун, йармăрккаран килекен çынсем кĕрсе тулсан, вырăн та йулмĕ сан валли терĕ, хăй.

— Пу, пайанлăха çитĕ кунђул калаçиппе, ыранирхине йармăрккана кайатђђен сан хваттере кĕрĕп. Унта килти пурнăç çинђен те йумахлăпăр, хамăр йенђи çынна курсассăн, мăвана курнă пек, ђун хаваслапаĭ вара; манăн та киле кайма вăхăт çитрĕ, ыран санăн патна кĕрĕп вара, терĕ.

— Сывă пул, Митрухха, асту, кĕрсе тух еппин ыран, терĕ Антун.

— Йурĕ, йурĕ кĕрĕп.

— Халĕ ăçталла каймалла ха пирĕн? тесе ыйтрĕ Антун хăйĕн йулташĕнђен.

— Туран анса çитсессĕн, шыв хăррине тимĕрç лаççисем патне çитиђенех каймалла, терĕ.

— Айакран вăл?

— Ах, айакран, айакра-и тет! Куратна перевос?

— Куратăп.

— Куратăн пулсан, çав перевос тĕлĕнђех хваттер йаракан çын пурăнаĭ; авă тимĕрç лаççи хыçĕнђе.

— Сарă сухал (Антун йулташĕ) паçăрхиђен нумай улшăнђĕ. Вăл йелле хаваслапса хĕпĕртени кулкаласа йумахланиђен паллах пулнă. Унăн ултавлă куçĕсем

пěрре Антун çине, тепре лаши çине ҫейелле пăхса илнě. Хăй вăл хаваслă пупленě. Акă ěнтě перевос патне те çитрěç, унтан пылҫăклă шыв хěррипе кайса хире тухрěç. Унта çулăн хăрах айкипе хăрăмпа хуралса кайнă тимěрçě лаççисем шыв хěррипе çитеҫҫенех тăсăлса кайнă.

Тимěрçě лаççисенҫен иртсессěн хайхи пўрт те (сар сухал калани) куç умěнҫех пулнă.

Кун тěттěмленсе çитрě. Хапха умне пырса тăрсассăн, Антун хваттер йаракан кил иккенне тавçăрса илнě, пўртре çынсен сассисенҫен халăх нумайййи паллах пулвă.

— Халě ěнтě лашана карташне кўртсе кăкар, вара пўрте апат çиме кěрěпěр, терě сарă сухал.

— Антун лупас айнелле çавăрăнса пăхса илҫě те: „Ырă çын, лашана ан вăрласа кайҫăр кунтан, ман пек ҫухăн çынна мăшкăл ан туҫҫăр. Хула хушшинҫе кунта, ун пек ěçсем пулкаланисем илтěнет“, терě.

— Ех, йал çынни, тěттěм халăх, сухаллу ўсессе ўспě те, санăн ăçу çук; шухăшласа пăх-ха, кам илсе кайтăр кунтан санăн лашуна, кунта йалти мар, каçхине хапхана питěреççě, тата хуçин хуралçи (творникě) пур. Сыхламасассăн, пăхкаламасан инкек тавраш пулма та пултарать, çавăнпа та çакăн пек уйрăм карташсем тăваççě, терě сар сухал Антуна хулпуççинҫен çапса.

— Вăл çаплаха та, çапах шикленетĕп çав. Темĕскер.....

— Мĕн кирлĕ мара пуплешетĕн? Пĕрте ан шиклен, ђăнахах та шикленетне çакă ес?

— Ђăннипе ђăн калатăп, ырă çын.

— Апла пулсассăн, хађ кăкарса хур ха йупа çумне, вара çывăрма лашу патне тух, епĕ хам та саппа пĕрлех выртăп. Халĕ ĕнтĕ пăртак кĕрсе сыпар ха, темĕскер шăннă пек пултăм. Ăшăнсассăн лашана апат парăвăр та, вара хăрлаттарса кăна çыврăпăр.... йурати?

— Йурĕ, йурĕ, санра кăмăлу пулсассăн.

— Кăкартăни?

— Кăкартăм.....

— Асту лайăх кăкар, салтăнса кайса лашу ан тартăр...

— Çук, каймасĕ...

— Йурĕ еппин, пўрте кĕрер ĕнтĕ.

Пĕђĕк çурта çунса ларнипе хваттер хуçи пўрђĕ пыссăкăн курăнкă. Хăй икĕ пўлĕмлĕ пулнă: сентĕре çинђен пĕр çын ури усăнса тăнă. Сĕтел умĕнђе тватă çын апат çисе ларнă, вĕсен умĕнђе шатра питлĕ, пуçтарусăр (лапсăркка) ыйхăллă хуçа майри вĕлтĕртеттерсе çўренĕ.

— Апат тутлă пултăр! Авани кил хуçисем, терĕ Антунăн йулташĕ алăка хупса.

— Çавнашкалах Антун та, апат тутлă пултăр терĕ.

— Сăпаççипă сире, терĕç апат çийекенсем.

— Есĕр хватгере кĕрес тетĕримĕн,? терĕ хуçа майри хыттăн.

— Кунта кĕмесĕр иртсе каймастпăрçке, акă йулташа йертсе килтĕмха... хуçа ăçта?

— Кам унга? терĕ хуçи, сентĕре çинђеп анса.

— Мĕн йăваланса выртатăн тата? Ан хăвăртрах, куратпэ, çынсем килђĕç.

Сентре çинђе çав вăхăтра: о-о-о!.. тесе анаслана сас илтĕнђĕ.

— А... аваниха, сарă сухал? терĕ хуçи сентĕре çинђен анса.

Сарă сухал, Антуна систермесĕр, хуçана аллипе паллă пађĕ; хуçи пĕртте ђĕнмерĕ, аллисене ĕнсе çипе хурса карăнса илђĕ те: „Есĕр кайа йулнă ĕçке, çынсем такçанах çывăрма выртнă, хађ çĕрле çÿретĕр. Ку çын санпа килђи мĕн?

— Манпа.

— Лашапа килни?

— Лашапа.

— Лашана утă памалла мари? манăн утă пур, терĕ хуçи.

— Кирлĕ мар, апатсăр та тăрĕха; епĕ ăна сутма илсе килнĕ, терĕ Антун.

— Хăвăн ирĕкÿ... Апат кирлĕ мари? çийетре?.. терĕ хуçи.

— Çийетпĕр!..

— Апат мĕн хак тăрат сирĕн,? тесе ыйтрĕ сар сухал.

— Мĕн калаçмалли пур унта, ыглашши хаклах илмĕпĕр: çынсем мĕн хакпа сутаççĕ, пирĕн те çавнашкалах... Апатпа çăкăр 60 пус тăрат... терĕ хуçи.

— Йурĕ, инке, апат парха, питĕ çийес килет, терĕ сар сухал.

— Сире мĕн кирлĕ: шўрпен, йе пăрçа пăттии, йе...? терĕ хуçа майри.

— Хут те мĕн те йурат... хăта, тата, хăта пăртак ерех çуки санăн? тесе ыйтрĕ хуçинчен сар сухал.

— Мĕнле çук пултăр... пур, сире нумай кирлĕи?

— Пĕр çурштав çитет... Мĕн хуйхăрса ларан тата, Антун пичче; ерех пур.. илтместĕни мĕн? Ыран пуйăпăр, ан кулян, терĕ сар сухал.

Творник тула тухса кайсассăн, сар сухал нумайах та тăмарĕ, Антуна систермесĕр, ун хыçăнчен тухса кайрĕ. Антун кĕрĕкне хывса çакрĕ те, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Сĕтел хушшинче ларакан çынсем апат çивине пăхкаласа, хăйне апат парасса кĕтсе ларнă. Иккĕшĕ пăртак тăрсассăн, тăранса, сĕтел хушшинчен тухса урайне, унчен çывракан çынсем çумне, пырса выртрĕç. Сĕтел хушшине йулнисенчен иккĕшĕнчен пĕри Антун çине пи-

тĕ пăхса ларнă. Вăл сарлашка, пăлатна çын пулнă, вăрăмах мар илемлĕ сухалтă, тикĕс кастарнă çӳçлĕ сарлака (тăваткăл) пит çăмартиллĕ, ăш кăмăллă курăннă. Увăн умĕнђе пысăк ђашăкпа тӳнĕ пăрçа, теприпе çăмах йашки пулнă. Çапла сăнаса пĕр йапаларан тепĕр йапала çине куçĕсене сиктерсе пăхса ларнă. Пĕр ђĕнмесĕр ларса ларсан Антун:

— „Есир ăçтисем пулатăр?“ тесе ыйтаť.

— Иккĕшинђен пĕри пуçне суласа илђĕ те, çăвар тулли хыпнă пăтта ђăмласа йарса:

— Айакрисем епир. Ростоври, терĕ.

— Улпутăни?

— Улпутăн.

— Улпут çĕр шывĕ нумайи?

— Нумай.

Çав вăхăтра хуçа майри апат килсе пађĕ, мушик хађ йумахлама ђарăнса каллех хытă çийе пуçларĕ; сарă сухал пĕр çуршгав ерех илсе кĕрсе Антун çумне ларђĕ. Вара апатланма тытăнђĕç. Пăртак тăрсассăн хуçи, те пӳрте кĕђĕ.

— Есĕ мĕн? кайас тĕтпе мĕн? тесе ыйтрĕ хуçа, апат çисе тăраннă çынтан

— Тул çутăлнă çĕре киле çитмелле манăн, çавăнпа кайас тетĕп.

Антун, çиме ђарăнса, пуçне çĕклесе пăхрĕ. Хуçа çакăнса тăракан шут шăрçине илсе, киле кайма пуçтарăнакан çын патне хăйĕн майрипе пырса:

— Йашка ҫини?

— Ҫинӗ.

— Пăтă та ҫинӗи?

— Ҫинӗ.

— Ҫу сапсаи?

— Сапса.

— 40 пус, тесе шутласа хуҕӗ

Укҫине тӳлесен, вăл пуринпе те сывпулашса пӳртрен тухса кайрӗ. Ун хыҫăнҕен, сӗтел хушшине йулнă сын, апата панине ҫисе йарса, ҫывăрма выртрӗ. Пӳртре Антунпа сарă сухал йулташӗ, тата хуҫи анҕах ҫывăрма выртман. Иттисем хăрлаттарса ҫывăраҫҫӗ.

— Хăта! ларха кунта пирӗнпе пӗрле, тем ӗскерле ман йулташ ӗҫмес те, ҫимес те, терӗ сарă сухал хуҫине.

— Ҕăвахтап? терӗ те хуҫа сӗтел хушшине пырса ларҕӗ.

— Мӗн йатлăха есӗ, Пантилеймуни? терӗ хуҫа.

— Антун.

Ӗҫер ха епӗр иксӗмӗр Антун. Ма ӗҫместӗн ха есӗ? Ей! туртăнса тăрай тата, ӗҫ! Манăн ерех лайăх, терӗ хуҫа.

— Антун ӗҫрӗ.

— Манăн ӗҫес шухăш та мар ха та, сивве шăннăран ӗҫрӗмха, терӗ те, сухалне шăлкаласа, ҕеркепе ӳпне выртарҕӗ.

— Ёҫ панӑ ҭух! тесе куҫ хӗссе илҭӗҫ сарӑ сухалпа хуҫа... Шӑнсы кӗнӗ пирки тата тепрер ҭеркке ӗҫерха...

—Тав тӑватӑп сирӗ... ҫитӗ кун ҭул ҭӑрмангарнипе те, терӗ Антун.

— Ей, тав тӑвасси масарӗ! ӗҫ мӗн ҭул аннӑ таран. Паллах ӗнтӗ, малтанхи ҭеркке хӗртсе анса кайаҫ, тепӗрне ӗҫнине сисместӗн те, виҫҫӗмӗшӗнҭе хӑвах ыйтса ӗҫӗн, ӗҫ!.. куна ӗҫсен ҫывӑрма кайӑпӑр, терӗ.

— Лупас айнен! терӗ Антун; хӑйӗн куҫӗсем ҫунса тӑраҫҫӗ.

— Паллах ӗнтӗ, лупас айне. Хуҫа ырӑ ҫын, айа сарса выртма улӑм парӗ. Ёҫха есӗ, хӑта, пӗр хӑрамасӑр ӗҫ... ҫӑкӑр ҫи есӗ?

— Ҫийепха епӗ хаҭ те.

— Ерех тырӑран пулман тетнем, ҫав ҫӑкӑрах, анҭах пӑртак шӗвӗрех ӗнтӗ ку... ну йарапар тепӗрне.

— Мӗншӗн ӗҫес марха, Антун хӑта, ырӑ ҫын ӗҫтернӗ ҭухне, унтан сийеп пулас ҫук... сӗтел умӗнҭе ӗҫ, кӗтессенҭе ан ӗҫ теҫҫӗ ваттисем, терӗ хуҫа.

Антун кӑна та пушатрӗ.

— Йулташсем, ах... йулташсем!.. Ман киле каймалла... Варук... Варук!.. Йулташсем!.. терӗ Антун вӑрӑммӑн, тарланӑ питне шӑлса илсе.

— Тӑрха киле кайма. Ёлкерӗн халӗ... терӗ сар сухал, тепӗр ҭерккине тултарса. Ҫак

йулашки ђерккене ĕçсе пар, вара... вара сивĕ çĕре тухăпăр.

— Антун ку ђерккене те типĕтсе выртарђă, хăй çавăнтах, касса йанă йăвăç пек, сак çине персе анђĕ.

— Çывраҭи? тесе ыйтрĕ хуçа, Антун патĕнђе итлесе тăракан сар сухалран.

— Халĕ ĕнтĕ пуçне пуртă тăршипе персен те, туйайрас çук, терĕ аллине сулласа. Иккĕшĕ те кулса йађĕç. Унтан сĕтел патне пырса, кĕлезђе тĕпне йулнă ерехе ĕçсе йађĕç те, вара çĕлĕксене тăхăнса, çывракан çынсем çине пăхса çаврăнса суртана сӳнтеррсе, тула тухса кайрĕç.

## VI.

Йарослав çынни, темĕскер, пӳртри сасăпа сиксе тăнă ђух, тул çутăла пуçланă. Куçне пуçне сăтăркаласа уçсан, сĕтел йăванса выртнине, тата унăн айĕнђен Антун ӳпеленсе тухнине курах кайаҭ. Антун вăл вăхăтра хăй ăшĕнђе темĕскер мăкăртатнă.

— Мĕн пулнă сана?.... мĕн мăкăртататăн есĕ?... тесе ыйтрĕ пĕр çын куђник çинђен анса. Ах питĕ хăратрăн есĕ мана! Сивђир тытнă пек ђĕтретĕп.

— Ай-ай, аран пăртак ăш лăпланђĕ; ытла та хăрушă тĕлĕксем курнă, хам нимĕн те астумастăп, анђах питĕ хăрушă пек, ăша темĕскер систерђĕ. Спаççипă сана тăма пулăш-

нăшăн. Ђасрах лаша патне тухса пăхамха. Хăй васкаса тухса кайрĕ. Леш çын урисене сыра пуçларĕ. Пўртре Антунпа Йарослав çыннисĕр пуçне, татах та пулнă. Вĕсем Антун аташса тăниие, сĕтел йăванса кайнă сасăпа пур те вăранса: хăшĕ анасласа, хăшĕ карăнкаланса ларнă. Кăмака çинђе темиçе çын çарауранăн ларнă. Сасартăк тулта темĕскер питĕ хытă хайарран çухăрса йанă сасă илтĕнсе карĕ. Кăмака çинђе лараксансем пур те урайне анђĕç. Çав вăхăтра алăка ђари уçса йарса, Антун сирпĕнсе кĕђĕ. Хăй шапшурă шуралса, çўçĕ пуçĕ тăраткаланса кайнă. Алрисем ђĕтренĕ, тутисемпе темĕскер мăкăртатнă. Вăл урай варрине тăрса, тискерлĕ аташнă çын пек, ђăрђар пăхкаланă.

— Мĕн пулнă унта?... тесе ыйтрĕ хуçа майри, сентре çинђен пуçа усса пăхса.—Мĕн есĕ?... Аташа пуçларăни мĕн?... терĕç пўртре пулнă çынсем пур те пĕр сасăпа, Антун йĕри тавра кĕпĕрленсе.

— Аташнă ку!... аташнă! терĕç хăш хăш çынсем.

— Мĕскер пурне те пăтраштарса, вăратса çўретĕн есĕ? терĕ хуçи Антуна кĕпе çухинђен йарса илсе.—Кала ђасрах? мĕн пуçна-куçна ђарса пăрахрăн?..

— Илсе кайнă!.. тесе аран çăварне уçса йађĕ Антун... Лашана илсе кайнă!.. терĕ теприн ђе.

— Ай-ай, тăвансем, авă мĕн тет! Темĕн курăн кунта!.. Акă йапала..

Вара пур те пўртрен карташне тухса кайрĕç. Антун каç (çĕркаç) хăй лашине кăкарса хунă вырăна пырса, пĕр сăмах ђĕпмесĕр, йупана аллипе кăна тытса кăтартнă. Йупи çумĕнђе лашине кăкарса хунă пĕр пăйав татки кăна çакăнса тăнă.

— Ђăнах та илсе кайнă иккен!.. Акă пăйавне те çĕçĕпе касни паллă (касса кайнă), тенĕ хăшхăш çыннисем.

Антун икĕ аллипе пуçне тытса, хытă уласа макăрса йађĕ.

— Йулташсем, тăвансем! мĕн тăврăр есĕр мана?.. пĕтрĕм ĕнтĕ епĕ. Сирĕн пăртак та пулса хĕрхенў пулсассăн, парăр манăн лашана... Мĕне кирлĕ вăл хăрăкскер сире?.. Пĕђĕк ађасем пур... Лашасăр пуçне пĕтетпĕр епĕр... Тархашшăн парăр!..

Хура халăх пек ђас çаврăнакан нимĕн те çук пуђ. Пĕтĕм ертгел, Антун хуйхине мыскара тунă çĕртенех, пур те унăн хутне кере пуçларĕç. Çитменнине тата хăшĕ пĕри хуçи патне тискерленсе аллисене ђăмăртаса йунанă, пуринђен ытла Йарослав çынни, хуçа патне перес пек ђăмăрласа пырса:

— Есĕ, хуçа, мĕн пăхса тăнă?.. Çапла лашасене вăрлаттарма сан патна хваттере кĕ-

реççи-ха?.. Ҫас кала, ăçта кайса ҫикрĕн лашана?.. Кала ҫас!..

— Есĕ мĕн пит шăртна тăратнă? Ман ҫине питех ан тăрăн! Лăпăр лапăр çын мар епĕ.

— Вăл ҫăнах калаŷ терĕç,—хăшĕ пĕри: есĕ ху асту; сан патна шанса кĕреççĕ вăрă-хурахран сыхланма; есĕ капла пĕтĕм лашасене вăрлаттарса йарсан та, пĕлмĕшех пулăттăн пулĕ.

— Ара, мĕн калаçатăр.ха есĕр? Епĕ хуралçă марĕçке сирĕн лашăрсене сыхлама!.. Манăн мĕн пур ĕç те сире кӳртесси те, кăларса йарасси. Кам ăна лаши патне тухса выртма хушман!.. Вăл хăй пек пĕр ĕçсĕр шухăпсăр çын тупнă та, çĕрпе ĕçрĕç. Есĕр мана айăплатăр!.. терĕ хуçи.

— Ах, йулташсем!.. ара хуçа хăй ĕçтерҫĕ ĕçке ха мана... тет Антун аллисене сулласа.

— Леш çамрăк йĕкĕт, маппа ĕçни, унăн йулташĕ пулнă. Хуŷте камран ыйтăр, çапла..

— Ҫăнах та хуçа хăй ĕçтерҫĕ ăна, епĕ те курнă, терĕ Йарослав çынни.

— Епĕ хам та ĕçни çинҫен тунмастăп (кутăнланмастăп)... Ĕçнĕ епĕ. Йулташĕ хăй тултара, тултара паҫĕ. Парсан ма ĕçес мар... Есĕ леш хĕрлĕ сухала, сар çынна, пĕлетĕн, ахаҫ пĕлмĕш пулатăн.

— Акă йапала, манăн ăçтан пĕлес ăна. Сахал çын кĕрсе тухса кайаŷи ман пата. Епĕ

ӑна малтанхи хут куратӑп. Есӗр ма пит ӗнекетӗр ха ку ҫынна, вӑл хӑй те вӑрласа кил҄ӗ пулӗ лашине, лайӑхрах ыйтса пӗлес пулат сирӗн...

— Манӑн лаша тӑххӑрӑмӗш ҫул хамра пурӑнат. Такамран ыйтсан, такам та калат.

— Ытла та ҫӑмӑл калаҫатӑн есӗ. Камран ыйтса пӗлеҫҫӗ вӗсем.

— Ах, мӗн тӑвасши ӗнтӗ манӑн!..

— Хӑта итлеха, мӗн йатлӑха есӗ?..

— Антун йатлӑҫке...

— Вӑл йурӗ. Итлеха Антун:—тӳрех есӗ сута кай, никама та ан итле. Укҫу пури санӑн?..

— Ҫур пус та ҫук! Ара, епӗ укҫа пулсан йулашки лашана сутма илсе килепши...

— Е... сан укҫу та ҫукиха:—ак есӗ ултавҫӑ! йепле тата хваттере кӗнӗ кунта? Есӗ мана лартасшӑн пулнӑ иккен... Йулташсем! Есӗр мана тытма шутларӑр, акӑ кама тытмалла, ҫакӑ вӑл ултавҫӑ!..

— Сана каларӑмҫке епӗ:—есӗ мар, леш хӗрлӗ сухал, тесе... Ах мӗн ҫыхлантарса пырат мана терӗ. Хӑй хӑранипе ури ҫин҄е аран тӑрат.

— Акӑ хал҄ урӑх ҫын ҫине кукӑртса йара пуҫларӗ. Епӗ сан ҫин҄ен хам сута кайам, йула пуҫлӑх патне сӗтӗрем сана. Мана пур-

те паллаççĕ: снавайĕ те, унăн пумушникисем те.

— Çитĕ ѣнтĕ сана та хуçа:—есĕ те ăна ахађех айăпласшăн, йепле хыпса çунаҡ, ахађ каласскер мар вăл. Вăл хăй те мĕнлə çынпа çыхланнине сисеймерĕ пулĕ, терĕç темиçен харăс.

Анђах хуçа хăлхана та ђикмен; леш Йарослав çынни Антун хутне кĕрсе, темĕн те каларĕ,—унăн сăмахĕсем те (нимĕн те) пулăшмарĕç. Çакă вăхăтра Антун карташ варринђе, тараса патĕнђе малтанхинђен те хытăрах макăрса ларнă. Унтан пĕтĕм ерттел Антун патне пырсан, вĕсенђен пĕри çапла каларĕ:

— Питех ан куђђан ха, куђђаннипе лаша тупăнмасҡ. Сан хуйхуна пулăшма пулаҡ. Кун пек йапала пулкалаҡ. Итлеха:

— Тўрех ђуп Лађака Касси тейекен йала... пĕлетни Лађака Касси йалне?..

— Пĕлместĕп ĕçке, пĕлместĕп: епĕ кунти çын мар çав...

— Мĕн пĕлесси пур унта?.. хуларан тухсан, мăн çулпа тўрех кай, асту вара:—вуннăмĕш çухрăмра сылтăм йенелле пăрăнмалла, унта вара ыйтăн... Лађака Касси йалне пырсанах, Стеђка Иђукне ыйтатăн... ăна такăште кăтартĕ.

— Мĕн кирлĕ мара пуплешен ха есĕ, кум? Мĕн тума кайаť вăл Лаḑака Кассине. Ќунта патнерех те тупмĕ-ши... Итлеха, Антун: есĕ Тăрна Касси тейекен йала кай; кунтан ҫирĕм ҫухрăмран ытла пулмасť.—Епĕ пĕлетĕп;—унта ĕлĕкренпех вăрăсем пурăнаҫҫĕ. Ҫавăнта кай...

— Мĕлле каймалла унта?..

— Ҫакăнтан хула тулашне тухсассăнах сулахайалла кайакан ҫулпа кай. Савалйе йатлă йала кĕрен, унтан тухсан Селеҫнев тараси пур; унтан вара тӳрех Тăрна Кассине пыратăн. Вăл пысăк йал.

— Михей пиḑḑе, Михей пиḑḑе тетĕп, итлеха, терĕ пĕри уп патнерех сиксе ларса.

— Ну мĕн ха?

— Итле есĕ, мана ватă ҫына, мĕн калатăп епĕ сана.

— Калаха...

— Хуран йалне кайсан авантарнах марши?.. Антун, ḑăнах ҫавăнта кай... Ерне вăл иҫерех те, ҫавăнпа унта кайни усăллăрах пулĕ тетĕп. Нумай пулмасť, пирĕн патăрта пĕрин лайăх лаши ҫухалнă та, ҫавăнта тупрĕ.

— Ан калаҫ кирлĕ мара, ăҫта вăл ҫавăнта 70 ҫухрăма кайтăр...

— Лашуна тупаймасассăн 200 ҫухрăма та кайăн...

— Тӳрех Тӑрпа Кассипе кай, ҫавӑнтах тупан...

— Ҫавӑнта кай, ҫавӑнта, терӗҫ пумайӗшӗ.

— Ай-йай, есӗ ӑста калаҫатӑн, епӗ парама тӳллемесӗр йарам ӑна. Вӑл манне ӗҫнӗ ҫиӗ, епӗ ӑна ахаљ тӑвапин... Тӳлле хӑвӑнтан ӑна питӗ хӗрхенетӗн пулсан... е-е тӳллес килљмесги?.. тесе ҫыпӑҫрӗ хуҫи.

— Мӗн тетӗн?..

— Хаљ мӗн тесе ыйтатна?..

— Мӗн парас манӑн сана?.. мӗн илес тетӗн—иљ, ан тыт, терӗ Антун.

— Хывса пар кӗрӗкна!..

— Ме иљ, ме...

— Йурӗ; ху килсессӗн тавӑрса парӑп, килмесен камран та пулин 90 пус укҫа парса йарӑн,—ҫӗр выртнӑшӑн, тата каҫ ӗҫсе ҫинишӗн...

— Ай, ыҫӑ ҫын; пӗртте ҫынна хӗрхенес кӑмӑл ҫук санӑн... терӗ Йарослав ҫынни.— Тулта сиввӗ, ҫинђен тата ҫӑмӑр ҫӑва пуҫлӗ; авӑ ҫурҫӗр йенђен ҫиљ вӗре пуҫларӗ. Мӗнле кайат вӑл,—кала-ха?.. Хапхаран тухма та сивӗ ӑна.

— Мана мӗн. Ҫинн ӗҫнине ман ахаљ йамалла-и?

— Мана мӗн тетӗн? Ех!

— Ара, есӗ ӑна хӗрхенетӗн пулсан, хӑв кӗрӗкна хывса пар...

— Вара ман хамăн мĕнле каймалла?

— Çапла çав. Пурте xархам хăйшĕн тă-рăшаҫ.

— Ăçта кайасши ĕнтĕ манăн? терĕ Антун кĕрĕкне хывса парса.

— Тăрна Кассине тӳрех кай, терĕç те-миçен харăс.

— Тухсаннах сылтăмалла кай, асту вара Савалйена, унтан Какинона.

— Спаççипă сире, спаççипă, ырă çынсем.. терĕ Антун васкавлă тухса кайса.

— Тӳрех кай, çапла тӳрех, тесе кăшкăрса йулҫĕç нумайĕшĕ: ахăр лашуна тупăн...

— Темĕн, тупайăши вара; укçа çук тет унăн, терĕ пĕри, Антун ҫылай айаккалла кайсассăн.

— Ай-ай-ай, ăçтан тупаҫ, ахаҫ асаплапса çӳрени пулĕ...

— Шыраса пăхтăрха ĕнтĕ, ахăр йĕррине тупĕ... укçасăр хĕн ĕнтĕ ăна. Каллех, май килсен, тупĕ те çав...

— Хветут пиҫҫе! лашине, тупаймĕши, ту-пăши вăл, мĕлле-сан шутпа?..

— Йепле туптăр вăл, укçа çук пулсан. Ахаҫ ывăнса çӳрени пулĕ çав.

Çав вăхăтра Антун çырма хĕрринҫе ҫарăц-са тăрса кăшкăрҫĕ:

— Хаҫ ăçталла каймалла? тесе.

— Тӳрех ут, тӳрех сăртпа. Острок (тĕр-

ме) патӗнҫен иртмелле... Сӑрталла улӑх, унтан каллех сӑрт айккипе кай, терӗҫ пурте кӑшкӑрса.

Антун вӗсен кусӗнҫен таксанах сухалнӑ пулсассӑн та, вӗсӗм саплах Антун хысӗнҫен нумайҫҫен кӑшкӑрса тӑҫӗҫ.

## VII

Йерипе йерипе халӑх лӑпланҫӗ, хӑшӗ хапха патне ларҫӗҫ, хӑшӗ алӑк айне. Мӗн пулни синҫен каласа пуҫларӗҫ. Киҫ хуси ним пӗлмен пекех вӗсем патне пыҫӗ. Анҫах хӑй пӗр сӑмах та хутӑштармарӗ; хутран хутран Антун кӗрӗкне савӑркаласа пӑхса ларай, унтан ҫӳркесе, хӑй айне хуҫӗ.

Ларсен ларсан, йумахлакансем сумне ик виҫ сӑмах хутӑштаркала пуҫларӗ, кайран тата тавлашма та тытӑнҫӗ. Тавлашу нумайа та пымарӗ, Антун май пулнӑ сынсем, пурте ӑна хирӗҫ каласа пуҫларӗҫ. Леш Антуншӑн хусапа вӑрсакан Йарослав сынни халӗ ӗнтӗ хуса майлӑ пулҫӗ.

— Ара ӑста пӗлен, терӗ вӑл хусана; сыя ӑшне кӗмен... Хӑсан та пулсан епӗ сана хирӗҫ тӑнӑ-и?.. Хӑсан хирӗҫ тӑни? Епӗ сӑмах хутӗнҫен кӑна каларӑм, кӗрӗк синҫен; ҫӑнах та хӗрхенмелле сав ӑна, йепле сиввӗха... Епӗ сана хирӗҫ тӑни? мӗншӗн хирӗҫ тӑрас?...

— Каласан та, мĕншĕн вăл усал сунтăр сана,—терĕ пĕр ватӑ çын:—(Йарослав çыннине тĕллесе хуçана кăтартса).

— Вăл ăна тăванĕ те, хăти те мар, тем хутран пĕр сăмах тухса кайрĕ те, есĕ ăна хуçине илегĕн; ăçтан пĕлен, вăрланӑ лаша та пулма пултарай̆.

— Пулмасăр, пулай̆ çав, терĕ Йарослав çынни,— есĕ ан çиленха... Акӑ пĕрре çапла пулнӑ тесе пуçларĕ, пăртак ţарăнса тăрсан:— Пиртен пĕр 5 çухрăмра, пĕр ирĕк çын пур, унăн çитĕннĕ ывăлĕ питĕ ĕçлекенскер, паллӑ çынţĕ... Пуривţен те çителĕклĕ пурăнаţţĕçĕ... Çулла улпут çурţ̆есене сăрласа çӳреţţĕ; хĕлле кайăксăпа аппаланаţţĕ. Калама çук пуйанţţĕ вара хăйсем. Вĕсем патне улпутсем те çӳреţţĕç; кайăк тытма кайсассăн, икшер виçшер кун пурăнаţţĕç. Пирĕн улпут та киţнĕ кунта. Ашшĕ кайăк ăçта пуррине пĕтĕм пĕлсе тăраţţĕ, çавăнпа та улпутсем, вĕсем патне çӳренĕ...

Вăл йурĕ ха... Ывăлĕ калама çук лăпка... Таçтан ăнман йенне, çакӑ пĕр Кăмароври салтак арăмĕпе çыхланнă. Çамрăк çын ĕçке, леш арăмĕ питĕ шухăскер пулнӑ. Кусем иккĕшĕ килĕштерсех пурăнаççĕ ĕнтĕ, çапла вĕсĕм патне виçĕ хуçа кайăк тытма кайма шутланӑ. Çакӑ çамрăк çын пĕринне кĕнекипех укçа курнӑ та, арăмне каласа кăтартнӑ.

Арăмĕ ăна илтсен, илĕртме тытăнна: иҫ Петĕр, иҫ, епĕр илнине кам пĕлет, тенĕ...

— Е, пытараймăн!... йепле вăл йамăтран тупасшăн, терĕҫ пурте итлекенсем.

— Апла, капла каласа илĕртет упăшкине, упăшки ҫамрăкскер, айванскер, арăмĕ хыҫҫăн кайнă. Кайран упăшки хăй калаҫ, арăмĕ ăна йури пĕр ҫурштав ерех илсе ĕҫтернĕ тесе. Хай улпутсем пăшалĕсене аварлаҫҫĕ те, кайăка кайма тухаҫҫĕ. Петĕре пĕрле илеҫҫĕ. Леш укҫаллине вăрттăн ҫăтлăх ҫĕрелле илсе кайаҫ те, авă мукаҫ пыраҫ тесе кăтартаҫ. Леш перес тесе ҫупаҫ. Ҫупнă ҫухне хăйне ҫурăмĕнҫен пăшалпа йара параҫ. Леш вара савăнтах пĕтет.

— Ха, веҫ йепле, темскер ҫыхлантарнă пулĕ ҫав, терĕҫ темиҫен харăс.

— Кайран Петĕр хăй каласа кăтартаҫ тет... питĕ хăрарăм, куҫ хуралса кайрĕ тет. Хăй ҫапах укҫине кăларса илсе, ҫĕр айне пытарса хунă та, кăшкăра пуҫланă тет. Хăйне хăй персе вĕлернĕ тесе кăшкăрнă, тет. Кăшкăрнине илтсе, леш икĕ улпуҫĕ ҫупса пынă; Петĕртен мĕнле пулнине ыйтаҫҫĕ. Леш хăранипе ҫыхланса кайнă... Виҫҫине савăрсаласа пăхсан, ҫурăмĕнҫен лекнине кураҫҫĕ кĕссинҫе укҫи те ҫук. Лешсем Петĕртен йепле пулнине ыйтаҫҫĕ: вара хăйех каласа йанă. Савăнтах Петĕре ҫыхаҫҫĕ те ос-

трока (тӗрмене) илсе кайаҫҫӗ. Ҫапла тӗрмере ҫав тери ырӑ, лӑпкӑ, аван сынӑн лармалла пулҭӗ.

— Вара кайран мӗлле турӗҫ ӑна? терӗҫ хӑшӗ пӗри.

— Акӑ мӗлле пулҭӗ вара вӑл ӗҫ, тесе малалла калама пуҫларӗ Йарослав сынни: —ларат нӗр ҫул, ытларах та; ашшӗ темӗнҭул укҫа тӑксан та, кӑларайманрӗ ӑна. Ҫӑрессине те сахалах ҫӑремерӗ пулӗ ӗнтӗ вӑл ӗҫпе. Акӑ, нӗр вӑхӑтра ӗҫ майлансах та пынӑҭҭӗ, темӗскер инкекрен пурнӑҫ такӑна пуҫларӗ. Леш хайхи арӑмӗ, тӗрмене ун патне ҫӑреме пуҫларӗ. Унтан укҫана ӑҫта пытарнине ыйтнӑ. Леш Петӗрӗ, те укҫи ахалех пӗтет, вӑрмантан никам та тупаймӗ тесе, укҫана ӑҫта пытарнине кала йар. Арӑмӗ укҫана кайса илет те, уйпутла пурӑнма пуҫлат. Йал сыннисем тӗлӗнсе кайнӑ: ӑҫтан тупма пултарат ҫавӑн ҭул укҫа тесе. Пурӑнсан пурӑнсан пӗлеҫҫӗ —ӑҫтан тупнине. Кайран вара темӗн ҭул тӑрӑшсан та, кӑларасси пулмарӗ, ашшӗн укҫи те пӗтнӗ. Вара Петӗре тимӗрлесе Ҫӗпӗре илсе кайрӗҫ. Хам куҫпа куртӑм йепле ӑна хӑвса кайнине.

— Ашшӗ йепле?

— Ашшӗне те иртнӗ хӗлле вилнӗ терӗҫ.

— Мӗнле шутлатӑр есӗр, ахӑр ахаҭ мар пуҭ ҫав, йепле хӑй ирӗккӗн сынна вӗлерме пултарнӑ?

Ҫапла калаҫса тăнă вăхăтра хăна киҫ хапхи умне урапа ҫарăнҫĕ, унта икĕ ҫын ларнă. Пĕри ҫамрăкрах 19 ҫулсенҫе, тепри ватă ҫын. Ватти пăртак ĕҫкеленĕскер, питĕ ҫăмăлланса кайнă.

— Вăл таҫтанах кăшкăрса: Ей, йĕкĕтсем! хуҫа, йурати сан пата йармăркаҫҫен ҫарăнма? тесе пырать.

— Ҫавăнпа киҫкарти тытатпăр, кĕрĕр, кĕрĕр!... терĕҫ.

Хуҫа хапхине уҫрĕ те, лупас айнелле илсе кайрĕ.

Киҫнĕ ҫынсем, тата хуҫи, калаҫакансем патне пырса хутшăнҫĕҫ.

— Мĕн кĕрлесе тăратăр кунта есĕр? тесе ҫĕлĕкне илсе шурă ҫӳҫне кăтартрĕ те, ҫĕлĕкне каллех ҫамрăксем пек хăрах айккăн лартрĕ. Хапха умĕнҫе ларакансем пурте кулса йаҫĕҫ. Ватă ҫын ҫăмăлланса ташла пуҫларĕ, ҫамрăкки ăна ҫарса:

— Ҫитĕ сана атте, мĕн аташатăн есĕ? терĕ.

Унтан ватти ларҫĕ те:

— Каласа кăтартха, мĕн ҫинҫен калаҫнине? терĕ.

— Каҫ ҫакăнтан пĕр ҫыннăнне лашана илсе кайнă ĕҫке...

— Ха. Хăй ăçта ха вăл тата, — хупахра ларатĭ пуђ хуйăха пусарса?

— Хупахра мар... лашине шырама кайрĕ.

— Е!... Иван çав пулĕ ĕçке... пире хирĕç пĕр çын хыçалтан хĕртсурт хăвалана пек ђупатђĕ, темђул кăшкăрсассăн та, илтмерĕ.

— Çавах пулмалла...

Унтан пĕри те тепри ватă çынна çак ĕç мĕнле пулни çинђен тĕпĕ йĕрĕпе каласа кăтартма пуçларĕç.

Йерипе тул та çутла пуçларĕ. Йармăркка лавĕсем киле пуçларĕç, халăх та пухăна пуçларĕ. Йармăркка пуçланса кайрĕ, — кама савăнăçшăн, кама хуйăхшăн. Вĕсем хушшинђе пуринђен ытла ыйткалакансем, çул çӳрекен карђăксем, çак карђăксем хушшинђе леш Архарăвнă та пулнă. Вăл никĕшин ушкăнне те хутшăнман, пĕђђенех унтала кунталла пăхкаласа çӳренĕ. Çакăнти çынсенђен, екĕрте вăл çăтăк çурăкпа пулмасан, ăна никамта ыйткалакан тесе калас çук Çăпата вырăнне пысăк атă тăхăнса йанă. Çурăмĕ çинђен хутаççине темĕнскер ђыпса тултарнăскер питĕ çăмăллăн çĕклесе тăнă Виçĕ çамрăк астурĕç çак карђăка. Пĕри: асаймĕç карђăк пекех ку, тет; тепри: — вăрманта курсан таçта хăраса тармалла терĕ; виççĕ-

мĕш:— ку карҫăк йăтнине епĕр те йăтас ҫук. Йепле ҫăмăллăн ҫавăркалаҫ вăл, тенĕ.

Архарăвна пĕр ҫӳреҫе умне пыҫĕ те папакине шаккаса:

— Ырă сынсем! памăр ши пăртак та пулсан? тет.

Ҫӳреҫе усăлса карĕ те, пĕр сын ҫӳреҫерен пăхса.

— Ан ҫилен, терĕ.

Архарăвна уксаклакаласа каллех хăна вил хапхи умне пырса тăҫĕ.

Леш ҫамрăк аҫасенҫен пĕри:

— Асанне, вилсен те йураҫĕҫке сана, терĕ карҫăк ҫурăмĕ ҫине аллине хурса.

— Мĕн тен есĕ, аҫам?

— Виҫме те вăхăт ҫитнĕ, тетĕп.

— Ҫăкăр пуҫтаратăпĕҫке аҫам, ҫиме ҫук, тет.

— Акă, ку мĕскер? хăй пĕр мих ҫыхнă тесе хыпашлашшăн аллине ҫăсса йанăҫҫĕ. Карҫăкки ҫав вăхăтра вăҫҫ тепĕр йеннелле ҫавăрса хуҫĕ. Унҫен те пулмарĕ, тепĕр аҫи икĕ аллипе хутаҫҫине йарса илҫĕ те, кăшкăрса кулса йарса:

— Ей карҫăк, асту; кĕрпӳ йухаҫ! ҫăнах авă пăх, тĕпĕнҫе шăтăк пулмалла.., тенĕ.

— Кай, мĕн кĕрпи пултăр унта! тесе, ҫилленсе, миххине туртса илме тăҫĕ, анҫах леш ҫамрăк аҫи, унăн хутаҫҫине туртса илсе ҫĕ-

ҫе лартрӗ те, карҫӑк хутаҫҫин шӑтӑкне тӗртсе кӑтартрӗ.

Ҫӑнах та ҫке, ырӑ ҫынсем пӑртак кӗрпе панӑҫҫӗ, унта та пулин йухса пӗтет, тесе карҫӑк макӑрса йаҫӗ.

— Ытла та ҫук пуҫ сан, кӗрпене пӗр хутаҫ тултарнӑ; ырӑ ҫынсем ҫӳп вырӑнҫе пулнӑ пулмалла. Мӗн пит пытаран?.. Ҫимесҫӗп сан хутаҫна, терӗ ҫамрӑк аҫа, хӑрах аллине Архарӑвнӑна тытса, тепринпе унӑн хутаҫҫине салтса:

— Ей пӑхӑр ха!... мӗн, ыйткалакан-и ку!... Аш (какай) та пур.., ха кунта ерех те пур... ха, тата тепӗр ҫурштав пур... Акӑ ыйткалакан... санӑн хӑвӑн киҫ ҫурту та пулӗ... мӗн пит ҫиленсе тӑран... ҫимеспӗр санне, пӑхрӑмӑр кӑна, терӗ те, миххине тата хытӑрах йарса илҫӗ.

— Ха тем те пуҫтарнӑ ку? терӗ пӗр ватӑ ҫын патнерех пырса:— хайне ҫапах ыйткалакан тет; есӗ кӑна ҫулталӑкра та ҫисе йарас ҫук...

Ҫакӑ кулнисем, мӑшкӑланисем Архарӑвнӑна питӗ ҫилентерҫӗҫ. Вӑл шӑлӗсене шатӑртаттарнӑ, пуринпе те вӑрҫнӑ. Ҫакӑ вӑхӑтра вӑл, вӑрманти асаймӑҫран та хӑрушӑрах курӑннӑ. Халӑх унӑн йӗри тавра, пухӑннӑ-ҫемӗн пухӑннӑ. Ҫав вӑхӑтрах, леш тавлашакан аҫана, пӗр ҫын хулпуҫҫинҫен йарса

илсе:— асту Петруха, çыртаҫ! тесе туртса илҭĕ.

Тăраҁансем пурте кулса йаҭĕç. Архарăвна мĕн пур йапалине хăвăртрах пуçгарса хутаççине ҭикет те, çурăмĕ çине хурса, хула йеннелле утгараҫ.

Леш Ангуна хирĕç пулнă ўсĕр ватă çын ун çинҭен пĕр çынна тин каласа кăтартма пуçланăҭҭĕ, анҭах пĕр лайăх тумтирлĕ ереткĕ писиххилĕ çўлĕ çын пырса тăнипе ҭарăрҭĕ. Çавăнпа вăл хапрăкра ĕçлекен çын иккенни паллах пулнă. Патнерех çитерехпе:

— Сыви-ха, тăвансем? тесе шĕлепкине пăртак хăпартларĕ. Акă, епĕ сирĕнтен мĕн ыйтасшăн:— Çакăнта каç Тroскински йалĕсем, Антун йатлă çын çывăрмани? Вăл кунта лаша сутма килнĕҫҭĕ. Лаши унăн çўрен. Епĕ ăна ĕнер килеп тесе шангарнăҭҭĕ, пур çĕре те шыраса çĕтертĕм,— выçта та тупаймарăм...

— Мĕскерлерех çын вăл? тесе ыйтрĕ пĕри.

— Типшĕнкерех вăрăм çын, пĕр 50 çулсенҭе пулĕ.. çўçĕ шурала пуçланă...

— Е-е, хăй леш мари вăл?... терĕç патĕнҭе тăракан çынсем.

— Леш пире хирĕç пулнă çын пумалла. Сана каларăм Ваҭухха, кăхха пĕр çын ҭулса пыраҫ тесе... терĕ леш ўсĕр старик ывăлне.

— Хуйхă пулҭĕ ĕçке унăн каç, терĕ тепри.

— Мĕн? мĕн йапала?...

— Каç увăнне лашине çаклатса кайнă ĕçке ха...

— Ђăнах та и? терĕ, леш хапрăк çынни.

— Епĕ суйатăп пулсан, — çак вырăнта та тăрас мар... Акă, ыттисенђен ыйт...

— Кам-ши ăна? мĕнле?..

— Ара, кам пĕлет, илсе кайакан аллине хăварман, пĕлетпĕр, илсе кайнă иккенне.

— Хађ хăй ăçта?...

— Лашине шырама ђупрĕ... пăртаккках кайарах пултăн есĕ...

— Епĕ çул çинђе тĕл пултăм ăна, тет каллех ўсĕр старик:— пĕр çаврăнса пăхмасăр ђупаĭ!..

— Акă йапала! Ара мĕнле ĕç пулнине каласа кăтартăрха есĕр... тесе ыйтрĕ хапрăк çынни.

Пурте пĕр вăхăтра калама тытăнђĕç. Анђах кил хуçи хăйĕнђен сĕвĕртсе пуринђен те ытларах пĕлнĕ пек каласа пађĕ.

— Пĕтрĕ ĕнтĕ вăл хађ! вилсен те хыпмасĭ ĕнтĕ вăл, пурте пĕр уншăн терĕ леш хапрăк çынни хыççа.

— Мĕнле вăл санăн, тăвану, йе хурăнташу пулаĭ-и?...

— Çук, хурăнташ тавраш мар, анђах ăна тăванран та ытларах хĕрхенетĕп. Лăпкă, тўрĕ çын; вăл пирĕн йал çынни, епĕ ăна

лайăх пĕлетĕп. Управђайуши пĕтерђĕ ĕнте ăна. Канçăр унăн пурнăçĕ. Лашасăр тăђах пĕтрĕ ĕнте хађ...

— Çапла, çĕр ĕçлекен çыннăн лаша пулсан анђах пурăнăç...

— Ђухăн хресђен вăл!... Питĕ хĕрхенетĕп епĕ ăна, тесе хуйхăрса, сак çине пырса ларђĕ хапрăк çынни.

— Есĕ ан çилен, хăта... епĕр ăна хăйне те тӳрĕ çын мар пулĕ тесе (шухăшласа) йумахларăмăр, хăта... таçтан аса килђĕ вăл пире.

— Ĕненсен ĕненмесен те, епĕ ăна хамăр йал çынни тесе хисеплеместĕп. Итлĕрха, тăвансем!.. тесе тепĕр патне пыракан хăйĕн йулташне илсе: Ей Панђука, итле ха! мĕн пулнине каласа парам сана, терĕ.

— Мĕн тата? тет лешĕ.

— Ара, Антунăнне лашине вăрласа кайнăçке...

— Ай-ай, ђăнах та и?

— Ђăнах та, пурте пĕлеççĕ. Епĕ сана ун патне калаçма тесе илсе килтĕм.—Вăл вара киђ хуçинђен мĕн илтнине пĕтĕмпех каласа кăтартрĕ.

— Пĕтрĕ ĕнте вăл хађ, пĕтĕмпех пĕтрĕ. Мĕн пулĕши ăна хађ. Никита тинех тирне сĕвĕ. Телейсĕрскер çав, терĕ хапрăк çынни.

— Кам вара вăл Никита?... тесе ыйтрĕ пĕри,

— Управђайушђи!...

— Мĕншĕн кураймасҭ вăл вара ăна? Лаши улпутăн мар ĕçке, хăйĕн...

— Мĕншĕн тесен, упрăвђайушђи йанă, лашине сутма кулаңай тўлеменрен.

— Е апла... питех те ђухăни мĕн вăл?.. тесе ыйтрĕ тепри.

— Ђухăн мар, пĕтĕмпех пĕтнĕ ĕнтĕ; кам пĕтерђĕ:— управђайушђи пĕтерђĕ... тискер кайăк вăл пирĕн...

— Питех те усали вăл вара?

— Ытла ĕмĕтсĕр çав вăл; Пĕр айăпсăр çынна хĕнет, терĕ Паңђук аллисене сулласа.

— Айăплă пулсан йурĕђђĕ... пĕр айăпсăр çунтараҭ пирĕн йышисене, терĕ каллех.

— Пирĕнни пекех еппин, сирĕн те, терĕ ку тараңђен ђĕнмесĕр ларакан Йарослав çынни. Пирĕн управђайушђи нимĕç. Пире хресђен çыннисене унтан ырă кун çук. Пĕрре епĕ çапла урампа пыратăп. Вăл мана хирĕç пынă. Епĕ ăна астумасăр çĕлĕке илмен. Хай ман пата пыђĕ те, мана çупса йађĕ. Ку йурĕха, епĕ:—Карл Иванђă, мĕншĕн пулђĕ ха ку мана терĕм те; вăл тепĕр йеңђен çутăлтарса йађĕ. Епĕ çапах парăнмастăп: хĕр-

хенӳ çук сан тетĕп. Хайхи мана сĕтĕркелесе çӳресе, тăнран кайиҫҫен хĕнерĕ.

— Тепĕр улпут ун пек мар: —пирĕн пеккине те хĕрхенет...

— Нимĕçсем тата усалтарах, терĕ ватти: улпуҫĕсем управҫайушҫисене хушса хăварасçĕ те, хăйсем урăх çĕрте пурăнасçĕ. Вара кĕсем çынсене хĕстерсе, пусмăрласа пурăнасçĕ. Хăшпĕр асапне ĕмĕр манмăн. Пирĕн аттесем:—аслати çăмăр пĕлĕтĕнҫен алтмасӑ, тислĕк купинҫен теҫҫĕç. Калаха, шăллăм, мĕншĕн çиленсе çӳрет управҫайушҫи сирĕн йалсем çине... Мĕлле Антун йатлă ҫĕ-и-хе?

— Питĕре улпут патне шалăп панă тесе шухăшлаӑ вăл...

— Авă мĕншĕн! тесе илтĕнҫĕ. Халăх çакăнта пухăнпăçемĕн пухăннă:

— Шалăпне вăл анҫах паман... тӳррипе каласан;—вăл пĕтĕм халăхран пулнă. Антун çеç айăпа йулҫĕ.

— Мĕлле апла?

— Акă мĕлле пулнă вăл... Пирĕн ватă улпут вилни, пĕр пилĕк çул пулаӑ. Никитă управҫайушҫине йулҫĕ. Тӳррипе тусан-ăна лекмелле пулман та, улпуҫĕ çавăн пек хушнă... вăл хăй сывă ҫухне хăй йуратнă хĕре Никитăна каҫҫа панă; çавăншăн ăна управҫайушҫине кӳртсе хăварнă.

— Апла вăл пит йуратнă пулĕ хĕре?...

— Калама çук йуратнă... Вĕсенĕн хĕр пулнă, вăл хаљ те амăшĕ патĕнђе; анђах вĕсем ăна усрасшăн нумлан, Никитă пĕрре те йуратмасђĕ ăна... Çапла вăл улпут вилсен, пире тыткалама пуçларĕ. Ку пурнăçран таçтах тараçђĕ улпут хăй пурăннă ђух авантарахђĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрçула хĕнӳ анђах, хăш ђухне урса кайать те;—хĕнет, макăртать; арçынсене те, хĕрарăмсене те пусмăрлать.

— Çамрăк улпутсем ăçта?

— Вĕсем Питĕрте пурăнаççĕ. Епĕр вĕсене пĕрре те курман. Вĕсем кунта пулсан, авантарах пулĕђђĕ. Ашшĕсене пăхсан —аван çынсем пулмалла. Вĕсене манăн шăллăм курнă та,—лайăх çынсем, тет. Ăçта пурне те пăхђăр ĕнтĕ вĕсем, çĕр нумай... Кунта мĕн хăтланнине пĕлсен,—пулăшĕђђĕç те вĕсем; анђах вĕсенђен пытараççĕ. Управљайушђине мĕн ăна? ун çыннисем мар епĕр? анђах ирĕкĕ унăн, мĕн тăвас килет, çавна тăвать... Хресђенĕнне йулашкине тытса илет. Екерте пирĕн Никитă улпут йăхăнђен пулсан. йурĕђђĕ, хамăр пек çынранах пулса кайнăçке ха; пĕр улпут халатне тăхăнса çурет те, сухалне хырать... Улпутсем ăна ђуптан йуратаççĕ, вĕсем пирĕн аçаплă, пурнăçа пĕлмеççĕ. Çапла пирĕн йалçыннисем ђăтрĕç, ђăтрĕç те, ђăтаймарĕç,—Питĕре улпут патне

шалăп пама шутларĕç. Каçхине аякартине пухăнвă... Унта Антун та пулнă...

Антун йатне илтсен, пĕтĕм тăракан халăх пурте мĕлле пулнине илтесшĕн, кĕр унталла пухăнџĕç: вара, вара! теççĕ.

— Троскинскин йалĕнџе Антун çеç хут пĕлнĕ, тесе пуçларĕ каллех леш йĕкĕт Троскинскин йалĕсем —(хапрăк çынни): Хут çырас пулсан, çавна çыртараџџĕç. Шалăп çырнă џух та Антуна тилмĕрсе çыр та çыр терĕç,—леш çырнă... вара Питĕре йатăмăр. Хĕрарăмсене калама хушман.

Пирĕн управљайушџян Питĕрте шăлпĕ пур. Вăл та улпут патĕнџе пурăнаť. Пирĕн шалăп, улпут аллине лекеџџен, алăкçă çын аллине лекнĕ. Ăçтан улпут аллине лектĕр унта,—темĕн џул çын тет ун патĕнџе, пурте питĕ џейе, пирĕн пек мар. Çыруна илнĕ те, ăçтан кињчине сиссе, улпута параџџен, вуласа пăхнă...

Епĕр управљайушџи çинџен айăпсăр хĕнет, тĕрлĕрен пусмăрлаť тесе çырнăџџĕ. Вĕсем Никитăна лайăх пулмассине сиссе, шалăпа улпута кăтартмасăр, кугăн ун патне йараççĕ, çитменнине тата хăйсенџен сăмахсем хутăштарнă.

Çапла пире пĕр ирхине йалĕпе Никита хăй патне џĕнтерет; пирĕн асра та çук уппăн џĕнесси.—Акă мĕнле есĕр... Епĕ сире

ҳам пĕлнĕ пек тыткалам ха!... Сирĕнтен кам ҫырнă ман ҫинҫен шалăпă? тесе кăшкăрса йарсан, —пĕтĕм сын сиксе ҫĕтре пуҫланă; Халăх ырă пулас ҫукките кура, хăйсене хăйсем хĕрхенсе, пурте Антун ҫине йăвантарҫĕҫ... Антуна вара питĕ йăвăр килҫнĕ, мĕн туманни йулҫĕ ши ăна, мĕлле асап курмарĕ ши унтан, Антун хăй ҫеҫ пĕлет. Антупăн шăлнĕ пурҫҫĕ. Йермула йатлăҫĕ, хăй авланнăҫҫĕ. Ăна вара ҫав Никита салтака паҫĕ. Антуна улпут картишне куҫарҫĕ. Ҫĕрĕ пирĕнни пекех наҫар, ĕҫлекен йулман пирки тырă ытларах та пулми пулҫĕ. Ҫитменнине ун патне шăлнин икĕ аҫи йулҫĕҫ.—ĕҫлейменскерсем...

— Мĕн пулăшу пулмалла... Ҫав ҫамрăк аҫисенҫен терĕ Йарослав сынни:—ех, мĕскĕн! ытла та ҫухăн ĕҫке иккен...

— Ку ҫеҫ мар ха, ҫитменнине ҫĕрне те тытса илнĕ, терĕ леш хапрăк ҫынни.

— Ҫĕрне те тытса илнĕ? тесе нумайĕшĕ тĕлĕнсе хыттăн ыйтрĕҫ.

— Ун вырăнне пĕр тăмлă хăйăрлă ҫĕре касса паҫĕ... Ҫапла Антунăн малтанхи ҫулах ҫиме ҫитмерĕ. . унниҫҫен вăл, ҫынсем пекех лайăх пурăнаҫҫĕ. Ĕлĕкхи улпут ҫухне унăн хăйĕн пай ҫаран пурҫҫĕ, ăна та тытса илҫĕ. Ытла лайăх пурăнанха ес тет. Выҫăххисене нимĕн ҫитерме ҫук... Акă вĕҫне

çитрĕ... вара Антун ĕнине, сурăххисене, лашисене сутма тытăнҫĕ. Анҫах Никитă унтан та аптăрата пуçларĕ купа „выҫăххисене сутма та хулана йамасĭ, сут йалта тет. Хăвăрта пĕлетĕр йалта мĕнле сутассине; йал çыннисем хăйсем те пĕр пус укçасăр лараççĕ. Выҫăххисене йӳнех пара пуçларĕ. Çапла Антун купран кун наҫарланса пыҫĕ. Пирĕн пек хура халăха вумай мар пĕтересси, ҫасах çапла Антунăн киҫ картинҫе турпас татки те тупма хĕн пула пуçларĕ, ирхи куна йеле каç тăвас тесе çеç пурăна пуçларĕ. Халхи вăхăтра пӳрҫĕпе пĕр татăк çăкăр çук пуҫ.

— Епĕ хам та хӳт пĕлнине хавас мар...

Çавăн пек çын çав Никита, терĕ леш хапрăкра пурăнакан Троскински çынни:—пăртак та пулин манинҫҫĕ хăй усаллăхне. Пĕлтĕр Антун, пӳртне тӳрлетме ăвăс ыйтнă: пĕтĕм унăн айăпне аса илҫĕ... çитменнине ăвăс та памарĕ... Антун хутаç çакса кайасса çитрĕ, пĕтĕмпех пĕтрĕ... Ытла та хĕрхенмелле çав.

— Йепле хĕрхенес мар тӳрĕ çынна, терĕ Йарослав çынни...

— Тӳрĕ, тӳрĕ калама çук тӳрĕ, такама та пулăшаҫҫĕ. Хăй ыррипе пĕтрĕ те ĕнтĕ, ырă кăмăллă çын...

— Ах, мĕн пулĕши ĕнтĕ? Унăн та йулашки лаши тетĕн ĕçке ха?...

— Йулашки çав...

— Йěпе çипе сапа тене пек, лашине те тупаймě.

— Ăçтан тупаň? тупасси пулаймасň ěнтě, таçта кайса ҫикнěха ăна...

Пěлсессěн, мěнпе те пулин пулăшăттăмҫě, терě Йарослав çынни.

— Итлеха, хуçа, çитě сана ěмěтсěрленме, çавăн кěрěкне пар калла... Хреçҫен кěрěкне курмани мěн есě?.. Йепле ҫухăн çын вăл... пар, есě те унпа пуйас çук, ҫăнах пар!..

Хапрăкра ěçлекен çын, тата ытти çынсем те нумайěшě çаплах каларěç. Хуçа пěр сăмах та ҫěнмерě. Вăл сăмахсем унăн ҫěрине кăлтта сиктермерě пулмалла. Унтан тăҫě те сухаҫне шăлкаласа илçе: иртсе кайамха епě, тесе Антун кěрěкне хул пуççи çине хурса, пўрте кěрсе кайрě.

Çăмăр та çăва пуçларě. Сиввě кěрхи çăмăр вăйлăланнă çěмěн вăйлă çунă. Акă ěнтě урам тăрăх шыв йуха пуçларě. Калаçса тăракансем тăҫěç те, хапха патнелле пыҫěç.

— Акă сана йармăркка! терě пěр арман хуçи çăмăртан пытанса.—Ырта епě питех васкамарăм, çăнăха йěпететтěм унта...

— Пăхха, Трихвун пиҫҫе, сăрт çинҫе çынсем ҫупаççě, çăмăрпа йěпеннě пулмалла...

— Мĕскерле ăнмарĕ ха ку уйăхра, пĕрмай çăмăр çăвать; кун хыççăн шăн пулсан,— ыраш калчи пĕтме пултарать...

— Çапла çав ĕнтĕ, пĕлгĕр те тырă начар йулчĕ, кăçал каллех çавăн пек ан пултăр.

— Мĕн пулĕши ĕнтĕ санăн йулташна Антуна? Аçта çӳреть-ши мĕскĕн? терĕ Йарослав сынни, хапрăк сынни патне пырса: йепле сивĕтрĕ, çăмăр çăвать.

— Ара, мĕн пултăр, чупать те, чупать пуçĕ. епĕ курнă чухнехи пекех... терĕ ватă сын, кулкаласа.

— Кай кунтан ват супнă, сапран ыйтмасçĕ; ытла та хĕрхенетĕпĕçке çавна, терĕ хапрăк сынни Ростăв сыннине.

— Кĕрĕкĕ те çук мĕскĕнĕн... хуçа хваттершĕн илсе йулвă... тем пек шăнчĕ пуçĕ мĕскĕн...

— Йепле шăнмасть, çăмăр, сивĕ çиç— витĕрех карĕ пуçĕ.

— Йĕп йĕпех пулчĕ пуçĕ...

— Йĕпенмесĕр, кĕпе вĕççĕн кайнăскер.

— Йĕри тавра хупăрласа, шĕвеçсе карĕ, ахăр нумайччен пырать пуçĕ...

— Пӳрте кĕрер... Кунта та çăмăр апа пусларĕ.

— Хапха умĕнче тăракансем пурте пӳрте кĕрсе кайрĕç.

## VIII.

Никкитă Хветĕрчĕ, сиввĕ çанталăка пăхмасăр, ирех тулта çӳренĕ. Вăл вырăх картине кĕрсе тухнă, анкартине мушиксем улпут тыррине çапнă çĕре, унтан хăйĕн çимĕç пахçине кĕрсе мушиксемпе йатлаçкаласа ҫылайҫҫен иртерҫĕ. Çапла вăл канăçлă вăхăт курайман та. Хăй пӳрҫĕ патнеҫҫе сывхара пуçланă çĕре, арăмĕ ҫӳреҫерен пăхса ҫасрах ҫей ĕçме кĕр, мĕн мăшăлтатса çӳретĕн терĕ.

— Ай-ай-ай, ытла та ывăнтăм, ку кăштăрка халăхпа аптăрамалла. Ҫей тултарса парха!

— Киҫха, аҫам, кунта! терĕ мăнтăр илемсĕр ывăлне. Хăй пиллĕкре пулсан та, утаймасăр упаленсе çӳренĕ.

— Калаха: мĕнле укçасене йурататăн есĕ: хутне-и, йе кĕмĕлне-и?

— Хут укçасене, тет аҫи.

— Ха-ха-ха! мĕншĕн хут укçасене?

— Ҫиксе çӳреме çăмăл, тет ывăлĕ.

— Аннӳ патне ҫупха: сахăр ыйтма; пайан пĕремĕк çини есĕ?

— Çимен, тет аҫи.

— Ма суйан... путсĕр... çинĕ есĕ...

— Ма аҫашлан çак ес уна? хаҫ те пĕрмай йунсăрланат.

— Çапла киҫти пурăнăç çинҫен ҫылай йумахласан, иккĕшин хушшинҫе пăртак вăр-

çă та тухмаллаҫҫĕ, екерте, пӳрте ухсах Хваттима пырса кĕмен пулсан.

— Мĕн ха? тесе ыйтрĕ Никит Хветĕрҫĕ.

— Арман хуçи киҫнĕ терĕ, Хваттимка хăракаласа.

— Е-ха, астуманта епĕ, кала халех тухаҫ кантура тесе, терĕ.

— Мĕн тума киҫнĕ văл? тесе ыйтрĕ арăмĕ.

— Ара, ниме çинҫен ыйтма пулĕ, пулăшма çын памастăнши тетҫĕ ха văл, терĕ.

Никита Хветĕрҫĕ васкавлă ҫуркине ĕçсе йаҫĕ те, кантура тухса кайрĕ.

— Аваниха Аксентий? терĕ управҫайушҫи, меҫник патне пырса.

— Аванха Никит Хветĕрҫĕ, терĕ леш тайăлса.

— Мĕн каланха?

— Сирĕнтен ырăлăх ыйтма киҫтĕм!..

— Калаха еппин, мĕн çинҫен ыйтасшăн есĕ?

Меҫник хăй ыйту çинҫен каласа паҫĕ те, çинҫен темĕнҫул укçа паҫĕ, леш упăн ыйтусене тăвăп тесе шантарҫĕ.

— Никит Хветĕрҫĕ, астуман та епĕ, манăн санран тата ыйтмалли пурҫĕ.

— Мĕн çитмен тата?...

— Сирĕн кунта Антун йатлă мушик пур, унăн мана арман авăртнăшăн укçа памалла; çуркуннереннех çак таранҫен памасҫ. Партарăрха çавна мана. Йармăрккана кайнă

ҫух, ăна хирĕҫ пултăм, хăй лаша сутма кайатăп тет; есĕ йанă тети уна? манпа хирĕҫ харлашма пуҫларĕ; ҫылай усалскер пулмалла...

— Е, епĕ уна пĕҫменха. Пĕрех унăн пуҫне йаратпăр, унтан хăтăлас ҫук ĕнтĕ вăл. Пуриншĕн те тўллет вара. Ей, Хваттима! тесе ҫĕнҫĕ алăка уҫса.

Хваттима ҫупса пыҫĕ.

— Ҫасрах хĕрĕнҫи киле Антуна кайса ҫĕн, хăвăртрах килтĕр.

— Вăл йармăрккаран та таварăнман халĕ, епĕ пасăр кĕрсе тўхрăм ун патне, терĕ меҫник.

— Йепле ку таранҫҫен тавăрăнман вăл вара. Пайанхипе виҫĕ кун, ку йурать. Ҫуп арăмне ҫĕнсе киҫ, епĕ кăтартăпха вĕсене.

Хватимка ҫасрах пулĕ.

— Аксентий, есĕ кай киле, епĕ хам пĕлĕп унпа мĕн тумаллине.

Ҫелнĕхре ывăлне тĕл пулса: аҫам, аннў патне кайăпăр, тесе пўрте кĕрсе кайрĕ.

— Варвара килҫĕ, терĕ Хваттима, пўрте кĕрсе.

Управҫайушҫи пўртрен тухсан, хăй хыҫĕнҫен алăка хытă хупса хăварҫĕ.

Варвара хăранипе ҫĕтресе, алăк хыҫĕнҫе ҫĕтĕк кĕпе ҫаннипе питне хупăрласа макăрса тăнă. Никкитă Хветĕрҫĕ уттине илтсенех, питне уҫса куҫĕсене шăлса илҫĕ те, сăмахла

сӑмахла макӑрса, унӑн урн умне ҫ̌ӗркуҫланса пуҫҫапа пуҫларӗ.

— Ай-ай-ай, тархашшӑн ан пӗтерсем, пире, мӗскӗн ҫывсеве...

— Киҫ̌ха кунта! терӗ Никита Хвегӗрҫ̌ӗ урине тапса. Хай аллипе тӑсса кантур алӑкки ҫине кӑтартса.

Варвара хыҫӗнҫ̌ен Никитта Хветӗрҫ̌ӗ хӑй те кӗҫ̌ӗ. Хваттимка тӗттӗм кӗтесре пытанса, Варварапа мӗн пуласине кӗгсе хӑраса тӑрат̆.

Варварипа Никиттă Хветӗрҫ̌ӗ кантура кӗрсеннех, Хваттима алӑк умне тӑсӑлса выртса, алӑк айӗнҫ̌ен пӑхса выртнӑ.

Никита Хветӗрҫ̌ӗ сасси хыттӑн илтӗнсеннех, вӑл хӑраса ҫ̌ӗтресе кайнӑ. Акӑ, вӑл йӑлтах ҫӗкленсе тӑҫ̌ӗ те, кайӑлла ҫ̌акса кайрӗ. Куҫӗнҫ̌ен куҫҫўли шӑпӑртатса анҫ̌ӗҫ. Кӑкӑрне аллипе тытса аран сывласа йаҫ̌ӗ те, ҫ̌асрах урамалла ҫ̌упса тухса кайрӗ. Йал вӗҫне, аҫ̌а-пӑҫ̌а ушкӑнне ҫитсен, аҫ̌асӗм! Варука улпут пӗтерет̆! терӗ. Ҫакна илтсеннех: ай-анне, анне! тесе макӑрса йанӑ сӑсӑ илтӗнҫ̌ӗ.

Аҫ̌асем ушкӑнӗнҫ̌ен леш ухсах, Анна ҫ̌упса тухса, хӑрах ури ҫинҫ̌е сиксе, Хваттимкӑна мӑшкӑланӑ.

Унтан Укҫинепе Ваҫ̌ук патне пырса:

Ах, Укҫук, Ваҫ̌ук, сирӗн Варук инкўне пирӗн Никита Хветӗрҫ̌ӗ пӗтеретӗҫке. Тата Аптун пиҫ̌ҫ̌упа та пиккӗшне те таҫта йара-

тăп тет. Епĕ шăтăкран пăхса пĕтĕмпех илҫтрĕм... Ан кăшкăрăр! астăвăр илҫтĕҫĕ...

Уксук, хытă кăшкăрса йĕрес мар тесе, ҫăварне ал ҫăмăрккине персе ҫиквĕ, анҫах ҫапах та ҫарăнаймам.

— Ах, Антун пиҫҫе, Антун пиҫҫе, ăҫташи есĕ... Вăл Варук инкене хĕнеме паман пулĕҫҫĕ.

— Акă мĕп, аҫасем, — пурте ҫулсем илĕр те ҫӳреҫерен ывăтăр. Кам та пулин тĕл лектерĕ, вара вăл хăрĕ, терĕ Хваттимка.

— Епĕ те епĕ! терĕҫ аҫасем пурте, аллисене сулласа.

— Епĕ, епĕ! тет уксах Анни, Хваттим йĕри тавра сиккелесĕ ҫӳресе.

— Ҫигет сана ухмах!.. ан кăшкăр!..

— Епĕ тĕл лектереп, тет Ваҫук, пысăк ҫул ҫĕклеме хытланса, анҫах ҫулĕ ун вăйтан пулмай Ваҫук каллах макăрса йаҫĕ.

— Айтăр, ҫупар, аҫасем, ҫул тавраш унта хӳме ҫумĕнҫе те нумай. Астăвăр—ĕлкĕрейместпĕр пурин те хырăм ҫине выртас пулаĭ, унсăрăн курĕҫ; ҫасрах, ҫасрах...

Ухсах Анка та аҫасем хыҫҫăн сиксе пыраҫҫĕ, анҫах лешсем, хырăмпа шуса пыраканскерсем, Анкана вăл сиксе пынăшăн вăрҫа пуҫларĕҫ. Вара Анка та ирĕксĕрех хырăм ҫине выртса шăва пуҫланă.

Никитта Хвĕтерҫĕ Варука кăларса йарса, кантур пӳрҫĕнҫе пĕҫҫенех тем шухăша кайса, калла малла утса ҫӳренĕ. Ҫак вăхăтра

кантур кантăкки ђанкăр туса ванса кайнă, ун хыçĕвђенех темиçе пысăк ђулсем сирпĕне сирпĕне кĕнĕ, пĕр ђулĕ ђуй кăна сăмсинђен лекмерĕ. Никитга Хветерђĕ тĕлĕнсе хытса кайрĕ. Унтан пĕр вырăнта ђылайђђен тăрса, ухмахланнă çын пек, çенĕхе мен пур вăйпа ђупса тухрĕ те: кам унта. Çтаппан, Тормитон, ей Хваттимка!,. Кам унта?.. Пĕр саста илтĕнмен. Акă вăл итлесе тăрай. Тăрсан тăрсан, никам та çуккине кура, пăртак лăпланса кайрĕ. Унтан çенĕхрен карташнелле тухса, хăракаласа хўме урлă пăхрĕ. Унта хăй ађине кăна курсан, тĕлĕнсе кайса:

Е, есиха вăл, епĕ сана кантăксем ватма вĕрентем, киђха кунта!..

— Епĕ мар ăна, атте,—ађасем пеђĕç; епĕ вĕсене куртăм, акă халĕ ђупса карĕç, терĕ мăнтăр ывăлĕ.

— Мĕпле ађасем?...

— Кунтисемех... епĕ кам пенисене те пĕлетĕп... епĕ мар...

— Е ?...

— Уна атте... леш... Укçук... тата Вађук... Антун ађисем, епĕ мар... епĕ мар...

— Е, йурĕ, епĕ пĕлетĕп вăл ађасене, епĕ ђасах татăлăп ха вĕсемпе.. Кĕрер, Вађук... сиввĕ сана, терĕ.

Унтан ывăлне хўме урлă икĕ аллине тытса, каçарса, хул пуççи çине лартрĕ те, пўртелле кĕрсе кайрĕ.

## IX.

Антун виçĕ талăк пĕр канмасăр лашине шыранă, анђах шыраса çӳрени пĕр усăсăрах пулнă. Ăш çуннипе вăл хуларан тухнăран-па, ђреслетсе çăмăр çуннине те, шăмми таран йĕпеннине те, ывăннине те, выççине те туй-ман. Хăй çарамас кĕпе вĕççĕн, йӳле пилĕк, çара пуç пулнă. Хăйне вут тивнĕ пек çун-са, ăçта çитнĕ унта, кама тĕл пулаћ унтан ыйтса, каç пулнине мĕннине пĕлмесĕр, çĕр хута çӳренĕ. Анђах унăн хуйхине никам та ђĕрене хывман; хăшĕ ђĕнсен те,—ђĕнмесĕр иртсе кайнă, хăшĕ кулса мăшкăласа кайнă, мĕншĕн тесен, вăл куђаннипе те, васканипе те питĕ йĕркесĕр сăмахланă. Ытах Антун лаши вăррине тупмалла пулнă пулсан та, вăл лашине çăлса илейрес çук, мĕншĕн те-сен, укçи пулман. Хăнакиђри йулташĕсем ђăнах каланă: укçа çук пулсан, ывăнса çӳрени те ахаљ пулаћ, тесе.

Шырасан шырасан Антун усă пулманнине кура килелле угаћ. Унăн ăшĕ çунаћ. Акă вăл Троскински çĕрне те çитсе кĕђĕ. Ка-лама та çук тĕттĕм кĕрхи çĕр, куçран тĕрт-сен те курас çук. Кун пек тĕттĕм хăрушă çĕрте, харкам хăй ăшă пӳртĕнђе ларакана та, темшĕн йăвăр, хурлăхлă пулмалла. Хирĕç сивĕ çиђ унăн питне сĕвсе илес пек вĕрнĕ, кас-кас çӳлтен вăйлă сивĕ çăмăр выçăпа,

сивĕпе ывăлнă шăмми шаккине пĕр хĕрхенмесĕр унăн тăрăх йухаҫ. Мĕскĕн ҫĕр тĕттĕммипе шывлă ланкашкасене кĕре кĕре лараҫ. Ҫул курăнманнипе шăннă тăмлă пылҗăксем тăрăх пыраҫ. Ҫигменнине ҫакă тĕттĕм ҫĕре йĕпе тĕтре татах тĕттĕмрех туса йаҗĕ. Икĕ ҳгăмран малалла нимĕн те курăнмасҫ. Ҫил уласа ҳрнĕ хушăран йĕри таврă ҫăмăр җашлатса ҫуни, шырланкăсенҗе шыв йухни илтĕнеҫ Ҫакă вăхăтра, ҫĕр ҫинҗе, пĕр ăшă вырăн та ҫук пек туйăннă. Мĕн малалла утнăҫемĕн унăн ăшĕ хытăран хытă ҫунаҫ. Акă вăл хăй йалĕ патĕнҗи айлăмпа аннине җухласа илҗĕ. Вара йепле вăл пилĕк кун ĕлĕкрех ҫакă айлăмран хăй лашипе хăпарнине, ҫавă иргсе кайьă кун ăна тĕлĕкри пек кăна туйăнса кайрĕ. Йĕпе ҫўҫлĕ пуҫне сăтăркаласа, куҫĕсене шăлкаласа илҗĕте, хытăрах ута пуҫларĕ...

Акă вăл йал хушшине те кĕҗĕ, анҗах кунта та хирти пекех тĕттĕм пулнă, ҫуртйĕр тавраш нимĕн те палăрман, пĕр ҫурт тăррисенҗен тумла шыв шăпăртатса йухни анҗах илтĕннĕ. Антун хытăран хытăрах утнă... Ҫăмăр шавласа ҫунă хушăранах сасартăк вăл тусур шакканине илтех кайаҫ... Вара вăл шартах сикрĕ те, җарăнса йĕри тавра пăхкаласа илҗĕ; унăн умĕнҗе ватă улпут ҫурҗĕ, халĕ управљайушҗи пурăнаканни курăнаҫ. Хăй ҫакăнта йепле килҗсе лекнине, шут-

ласа тăвă вăхăтра, унтан ивçе те мар çын ури сасси, тата пысăк сасă: кам унта? тени илтĕнҫĕ. Антуна ку сасă паллакан çын сасси пек туйĕнҫĕ. Антун ирĕксĕрех тепĕр икĕ утăм малалла утрĕ.

— Мĕскерле усал çӳрет унта?.. терĕ те, çав сасах, çав самантрах унăн умне икĕ çын ҫукмарсемпе пыҫĕç тăҫĕç.

— Мĕншĕн сасă памастăн есĕ? елле хăлхасăр-и есĕ, савран ыйтаççĕ! терĕ пĕри ҫукмарне пылҫăк çине лартса.

Антун вимĕн те ҫĕнмен, йĕпе пуçне кăна аллисемпе сăтăркаласа тăвă.

— Ҫарăн! тесе кăшкăрса йаҫĕç тусурсем иккĕш те.

Антун вĕсене пĕр хирĕç тăмасăрах парăнҫĕ. Управҫайушҫи киҫтеи? тесе ыйтрĕ. Вăл çапла сăмах ҫĕпсеннех лешсем кăна палларĕç те:

— Торохви пиҫҫе... пăхха, Антун вĕт ку!

— Ҫăвахи?

— Вăл мар пулсан, ман ал ура çакăнтах хăртăр...

— Ей, хăта! тесе ҫĕнҫĕ Торохви Антуна аллинҫен вĕçертсе йарса, ăна хыпаласа пăхса:

— Мĕн аташса çӳретĕн?... ăсран ҫакнă пуҫĕ есĕ?.. Çакăн пек çанталăкра çĕлĕксĕр... Мĕлле çак вăхăтра управҫайушҫи кирлĕ сана?.. Хуларан килетним есĕ?...

— Хуларан... терĕ Антун пĕтĕм ÿѕĕпе ѕĕтресе.

— Управѕайушѕи хаѕ кирлĕ пулѕĕн!.. Иртерехха, аѕам!.. Тăр ха пăртак, мĕн пулĕ ха тата сана... Хвеҫка, пăхха, ара ку ÿсĕр пулĕ, ѕĕлхи çăварĕ çыпăçмасҫ... Темскер ѕăмлана пуѕ сана терĕ, сасартăк Антуна айаккинѕен тĕртсе.

— Есĕ хаѕ нимĕн те пĕлместĕн... мĕн пулѕĕ, кунта есĕ çук ѕух... И-и-и...

— Мĕн вара?..

—Хаѕ мĕн тетĕн... Авă санăн ѕĕѕхÿ-çăвару та çаврăнаймасҫ... Кайха килне, вара пĕлĕн—мĕн пулнă иккенне. Никитă пайан апат вăхăтĕнѕе санăн арăмна ѕĕнтернĕ... И-и-и! Хăрăк, йепле хулана кайнипе савăннă вăл... Асту, пуçу ѕипер йултăр, пуҫсĕр!.. Кай килне, мĕн çăмăр çинѕе (çара пуçăн) тăратăн?..

— Ех, путсĕр! Ыранѕен тăр халĕ, ыран мĕн пулĕ... Акă тамаша, мĕншĕн пĕр çăмах та ѕĕнмест ку... Ѕĕѕхи çĕтнĕ пуѕ кун?.. Антун... Антун, тетĕп...

— Е-е?..

— Торохвипе Хвеҫка иккĕш те çăвар тулли кулса йаѕĕç.

— Илтетне есĕ: киле кай теççĕ сана, мĕн, шăлна шатлаттарса тăратăн; кай ѕасрах, кай· илтетне кай тенине?...

Антун нимĕн те илтмен. Вăл хуралçăсене тĕртсе йарса, хăвăрт укăлҫа йеннелле вĕçтерет.

— Антун, ей Антун! тесе кăшкăра йулҫĕç тусурсем:—ара мĕн пулнăши кăна?..

— Мĕн пуласси пур, терĕ Торохви:—ĕçнĕ вăл, урăх нимĕн те мар, ей пуйсĕр... укçине пĕтĕмпех ĕçсе пĕтерне пулмалла... Астуха, Хвейка, ĕлĕк çавăн пек кирлĕ мар йапалана аппаланмасҫĕ ĕçке çав, çĕрхута управҫайушҫи патне киҫнĕ тата... Хвейка, кайар пуҫ... епĕ йеп йепе пултăм... акă тамаша, çанталăк пит асса (пăсăлса) кайрĕ ĕçке...

— Кайăпăр ха, Торохви пиҫҫе... Пăртак шаккакаласа çӳресен, çывăрма кĕрер вара... вилес пек шăнтăм...

Тусурсем шаккани каллех йал таврашĕнҫе çиҫ уланипе, çăмăр кашланипе пытарса йапăрса кайпă. Пирĕн Антун ăсран кайнă сын пек пĕр ҫарăнмасăр ҫупат. Малтанхи пӳртсем тĕлне çитсен вăл пахҫасем анкартисем йеннелле пăрăнса йал хыçĕпе ҫупрĕ. Вăл темиçе кун малтан, пĕр тĕлте тутăр тупнă тĕле çитрĕ те, çула урлă ăна темскер мăкăлтатнă пек туйăнҫĕ. Çак вăхăтрах кăшт пăртак çутă пĕлĕт тухрĕ те, Антун пĕр çынна курах кайрĕ. Вăл ӳпеленсе туйипе темскер сиркелесе шыранă. Ку çын Архарăвна пулнă иккен. Упăп пусне çак карҫăх пуйан

тесе йумахлани аса килех кайрĕ. Хăй нуштине вăл пулăшмĕши тесе шухăшласа илђĕ. Ђасрах карђăк патне çитет те, васкаса, хăранă пек сасăпа: пулăш мана, екерте мана çăлас тен пулсан, пар укçа!..

— Ах ађам—теме аран ĕлкĕрђĕ карђăк: мĕн пулнă сана... е-ха есĕ Антун Прохăрђă, ĕçке... Мĕнле укçа пултăр манăн! Аташни мĕн есĕ!..

— Пур савăн! пурте çапла калаççĕ... терĕ Антун.

— Нимĕн тума та çук ĕнтĕ сана, терĕ карђăк:—питĕ хăрушă тĕслĕ есĕ... хăвна хăв пĕтерме шутларăнам есĕ?... Манăн укçа.... хуранлăхра... Çĕр айне пытарнă...

— Ђас илсе кай мана!... ђасрах терĕ Антун. Вăл тăђĕ те, туйине илсе хуранлăхалла хăвăрт ута пуçларĕ. Антун унăн аркинђен тытса пырат.

Йал хыçĕпе пынă ђух, вĕсем йерипе (хуллен) утрĕç. Хирелле тухсанах карђăк хытăран хытă утнипе Антун аран ун хыçĕнђен ĕлкĕрсе пынă.

Хутран хутран вĕсем сывласа илме ђаранна. Çăмăр увђен пăртак ђарăннăскер, халĕ ĕнтĕ витререн йанă пек йара пађĕ. Тăмлă пылђăк вĕсен ури çумне йăваланнă та, вĕсене утма тата йывăртарах пулнă. Акă ăна карђăк пĕр çырмана илсе анса карĕ.

Унăн тĕпĕнҫе ҫумăр шывĕ йухнă. Ҫырман икĕ йеннипе йăмра тункатисем, тата йăвăҫ тĕмĕсем ҫтена пек тăнă, вĕсен хушшинҫен хурăн вăллисем кĕлетке пек курăннă. Ҫул пынă ҫемĕн кансĕрленнĕ. Урисем йушкăн ҫипе пута пута ларнă. Хăш тĕлте ҫилпе ӳкнĕ ҫапҫӳпсем ҫула урлă кансĕрлесе выртнă. Шутсăр йĕркесĕр нумай курăнми сывлăш пек, ҫил ăвлата ăвлата йăвăҫ тăррисем тăрăх ҫӳлĕҫсене, туратсене хуҫа хуҫа илсе кайнă; унтан каллах, хӳтĕ вырăна ҫитсессĕн, кутăн тата хытăрах уласа таврăннă. Ахăр самана пĕр вăхăта ҫаранаť те, каллех шыв шăнкăлтатса йухнипе сăмăр шавлани кăна илтĕнет.

— Тăрха, аҫам, сывласа илем... пăртак... тата ҫырмана анмаллаха, терĕ карҫăк. Антун пĕр ҫĕнмесĕр ҫарăнҫĕ. Пăртак канса тăрсассăннах вĕсем ҫăнкă ҫĕртен ана пуҫларĕҫ. Ҫырма варрине анса ҫитсессĕн, Антун ҫӳлелле пăхрĕ те, вĕсенĕн пуҫламăшĕ пĕлĕте лексе тăнă пекех туйăнҫĕ. Ҫас ҫасах тӳпсе кайнă йăвăҫсем айăнҫен ӳпеленсе тухмалла пулнă. Ахăр карҫăк ҫулне лайăх пĕлнĕ пулмалла. Вăл, Антун пек, такăнма мар, тата хытăрах утнă, ҫитменнине туйи ҫине те тайанса утман. Нийепле тухма майсăр вырăна ҫитсессĕн, карҫăк ҫарăнҫĕ те, хăрлатакан сассипе:—ей, аҫасем! кунта килĕр!.. Антун ăнласа та илеймерĕ, йепле ăна икĕ

ваййлă çын йарса илнине. Вăл çăлăнса тухма тапăнçĕ, анçах ваййлă алсем ăна кутăн туртса илçĕç.

— Ăçта туртăнатăн? терĕ пĕри,—нıçта та кайаймастăн, кунта та кĕтсе тăрăнха.

— Йермула, аçам, тăр пăртак... вăл санăн тăвану Антун ĕçке, аçам, вăл манăн çумма çыпăçрĕ те, пулăш, укçа пар мана тет.

Куна илтсессĕн Йермула тĕлĕнсе кутăн çакса: есĕ-и Антун? терĕ. Анçах Антун пĕр сăмах та çĕнмен. Йермула ун патне пыçĕ те, ун икĕ хул пуççинçен тытса питĕнçен пăхса хытă кулса йаçĕ.

— Антун! мĕн йертсе килçĕ сана кунта? Петрухха йар, ниçта та каймасť: вăл пирĕн..

Петрухха Антун çине тинкерсе пăхрĕ те, йулташне хыттăн: вăл санăн тăвану-и?.. пĕлме килнĕ пулĕ...

—Мĕн есĕ тункаta пек çĕнместĕн? терĕ Йермулла, мĕн тума килтĕн кунта, мĕн кирлĕ сана пиртен кала, путсĕр! çăнах сана йалта кӳпкекеленĕ пулмалла.

—Ан тивĕр çавна, пăртак тăна кĕтĕр, питĕ хăрарăн пулмалла, терĕ карçăк ӳпĕнсе, çĕре темĕскер хурса.—Епĕ Троскинă йалĕнçен тухса пыраттăм...

— Мĕн? тесе Йермулапа Петрухха икĕшĕ харăсах ыйтрĕç.

— Нимех те мар, пĕр çынăнне икĕ ђăхă çаклатрăм та, епĕ çапла пынă ђух, мана йарса илђĕ те, кўр укçа тет!

— Е, есĕ пĕтĕмпех пĕтнĕ пулĕçке? терĕ Йермула.—Ахăр хурăн çăвĕпе йуман ђукмар кукли пигех кăмăла килмерĕç пулĕ çав?.. Мĕншĕн ђĕнместĕнха есĕ, тĕл пулнăшăн савăнмастăна мĕн?

— Хавас пулсан пулмасан та, вăл кунтан тухмасĕ, терĕ тепри... Петрухха.

— Тăвансем мана укçа кирлĕçке, йулашки лашана вăрласа карĕç!, кулапай тўлеме нимĕн те çук, терĕ аран аран.

— Апла-и ха?.. илтнĕ ђĕ епĕ ун çинђен...

— Çапла, ађам, хутаç çактарса йађĕ ĕнтĕ ăна управђайушђи.

— Йепле, манăн ађасем пурăнаççă-и ха? терĕ Йермула.

— Пурăнаççĕ те, анђах çиме нимĕн те çук, пулăшсамăр, пăртак та пулин укçа парăр, терĕ Антун хуйхăллă сасăпа.

— Епĕр кунта килни нумай пулмасĕ çав, пĕр виçĕ ерне пулĕ... Петрухха амăшне курасшăн пулђĕ, тата вырăн аван пек туйăнђĕ те, çакăнтах хĕл каçас терĕмĕр... епĕ сана пырса курас тенĕђђĕ, хам ађасене, амĕшĕ вилнĕ пулмалла...

— Мĕнле ха есĕ, Антун? пирĕн патрах килтĕн-и?

— Йулашки лашана илсе карĕç, тесе пуç-ларĕ каллех Антун, кулакай тўлеме çук... укçа кирлĕ мана... тет.

— Пулăшма пулаĭ те, акă мĕнле, пирĕн укçа, те хамăрăн, те хамăрăн мар. Халĕ вăл пирĕн кĕсйере те, пирĕн вĕсем. Енерсем вăл улпут хĕвĕнђе пулнă. Вăл йармăркаран тав-рăннă ђух епĕр ăна, тавай укçана пирĕнпе çурмалла ту, ырă çын! терĕмĕр. Вăл пире хирĕç тăђĕ. епĕр те аван хăратрăмăр та, укçине пире кăвăтса хăварђĕ. хăй ђасрах тарђĕ. Есĕ пĕтĕмпех пĕлтĕн ĕнтĕ; епĕр сана пулăшăпăр, анђах есĕ çынна мĕн ан шарла, пĕлсен пире лекет. Çĕрле вăл пире астăвай-ман, хăй кунтан айакрисем, екерте есĕ сар-са çўремесей, викам та пĕлмест. Епĕр халĕ хупаха кайăпăр та, кунтан инçех мар вăл, унта сана укçа пађăпăр та, вара тĕрлĕ çĕ-ре салапăпăр.

— Мĕнле есĕ, Антун, Пурис Рышак текен-ви патĕнђе кăçанта пулсан ĕçкелевĕ-и?

— Çук.

— Апла пулсан вăл пĕлмест пулĕ ха сана?

— Пĕлмест.

— Айта, апла пулсассăн, кайăпăр... есĕ, анне, кўнта йул!

— Пулатăп... епĕ сире кĕтсе тăрăп... ан-ђах астăвăр, есĕр ăна хăвăртан ан хă-варăр.

— Каймасӗ! айтӑр аҫасем... терӗҫ.

Таркӑнсем пӗр путтылка ӗҫрӗҫ те, ҫукмарӗсене илсе карҫӑка шӑппӑн темӗскер каларӗҫ, вара Антуна умма йарса ҫырмаран хӑпара пуҫларӗҫ. Вӗсем кайакан хупах, пӗр пӗҫҫенех икӗ ҫул хушшинҫе (аслӑ ҫулпа пӗр ансӑр ҫул хутшӑнакан ҫӗртре) ларнӑ. Ҫав вырӑнта йӑвӑҫ тӗмӗ тавраш пулман, кун пек тӗксӗм вырӑн урӑх таврара та тупӑнман.

Хупахӗ ҫурҫӗ те, вырӑнӗ пекех хуйхӑллӑ курӑнса ларнӑ. Вӑл икӗ хутлӑ, ҫӳлӗ тӳпеллӗ хӑми хушинҫе мӑксем уссе ларнӑ, хӑмисем тӑрӑх тӑрӑх ҫурӑлкаланса пӗтнӗ. Унӑн тӑринҫе типсе кайнӑ хыр ларнӑ, айакран унӑн типнӗ тураҫӗсем пулӑшма ҫӗнсе ларнӑ пек туйӑннӑ. Пӳрҫӗ ҫтенисем тӗттӗм хура пулнӑ, мӑкӗсем такҫанах ҫӗрсе ванса пӗтнӗ. Пӳртрен тухсассӑн, ҫӗнӗ тытка пулнӑ, ҫавӑнпа вӑл тата илемсӗр курӑнса ларнӑ. Ҫакӑ ҫӗрӗк ҫурт сумне, тӗрӗллӗ ҫӗнӗ тытка туни, ватӑ супнӑ старикпе ҫамрӑк ҫипер хӗр пӗрлешнӗ пекех туйӑннӑ. Пӳрҫӗ патӗнҫе лупасайсем пулнӑ Ахӑр кунта хваттере те кӗркелеҫҫӗ пулмалла. Ҫапла кунта ҫарӑнсан, лашине тӑратма та, ерехне те ҫавӑнтах тупма май пулнӑ.

Тул ҫутӑла пуҫларӗ. Йӗри тавра пӗр сас ҫӗвӗ те ҫук. Темӗн ҫул ир пулсассӑн та, ҫакӑ ҫуртра, айалти хутӗнҫе, ҫутӑ курӑннӑ.

Лайăхрах типкерсе пăхсассăн, пӳртре пĕр каллĕмаллĕ уткаласа çӳрекен вăрăм çыннăн мĕлки курăнна, унтан пăртак тăрсан, мĕлке çухалтĕ. Çав вăхăтра çелнĕхе пĕр вăрăм сăкманлă çын тухса тăтĕ; вăл тытка çине тайанса, мăн çул йеннелле куç сиктерсе сĕр тылайтен пăхрĕ. Кайран картлаç çинтен анса уткаласа çӳрерĕ. Антах кунта та теп тĕри лăпланман пирки пăртак çӳресен аллине сулласа илсе каллех картлаç çине улăхса ларте. Ахăр кама та пулсан килессе кĕтнĕ курăнат.

Йĕри тавра тĕтре хупăрласа тăнă пирки, айакрийех курăнман, антах вăл пĕр куç сиктермесĕрех пăхса тăнă. Çил кашлатсан та, кураксем вĕçсе иртсе кайсассăн та, вăл пуçне çĕклесе итлесе тăрат. Тăрса ырсан, вăл хупах çелнĕхне кĕтĕ. Унта хуçипе 13 çулхи тарçи сывăрнă. Çулахай йенти алăк питĕрĕнсе тăнă, ку çын сылтăм йенти алăкран кĕтĕ. Антах ку çыннăн темшĕн тĕри вырăнта пулман. Сак çинте тата темиçен сывăрнă. Вăрăм çын тӳрех пĕрин патне пытĕ те, çаннинтен туртса тăратса:

— Матви Трихвонт, тăр халĕ, çывăрас вăхăт-и халĕ, тăрха.... ну...

— М..м.. йепле, шăлну çитри? тесе ыйтрĕ сывраканни.

— Килмен çав! тем мана, ăна темскер пулнă пекех туйăнат....

— Км! ара унăн касах кунта çитмелле ĕçке, миçе çухрăм терĕн ха çав хуларан та Марина?

— Çирĕм, çирĕм иккĕ пулаŏ, терĕ.

— Ахаҫ каймарăмăр епĕр унпа пĕрле, укçа илетҫен темĕнҫул вăхăт иртес çукҫĕ!.. Хаҫ çук, ĕнтĕ кĕтерха пăртак...

— Мана, ăна темскер пулпă пекех туйăнаŏ, ахăр ырă мар... Унăн çумĕнҫе укçа... тем пулма та пултараŏ... пĕрре те ҫĕре вырăнта мар.... каç кунта мушиксем калаçса ларҫĕç, тем ырă мар йапаласем ҫас ҫасах туйăнкалаççĕ, тесе... сынни Ростăвран, вăрăмскер, хаҫ çак хăнакилрен пĕр çынăнне лашине илсе кайнă, тесе ларҫĕ.

— Ха, ҫăнах-и?

— Есĕ çывăрнă Матви Трихвонҫă, епĕ пĕтĕмпех илтрĕм.

— Йепле, килĕ-ха...

— Çав вăхăтрах хупах хуçи çăварне карса карăнкаласа кĕҫĕ те: йепле, килеймери ха сирĕн йулташăр? терĕ.

— Çукха, терĕ леш вăрăмми... пĕр çĕре пăхса тăрса куç ывăнҫĕ... темскер сийен тавраш пулмарĕ-ши тетпĕр ха.... Касхи çул, çумĕнҫе укçа пур.... ăçта пĕлес....

— Мĕнех пултăр.... ĕлкĕреймерĕ пулĕ-ха.

— Кунта сирĕн çул çинҫе вăрă хурахсем аскалаççĕ тет мĕн ха.... çавăнпа та иккĕллĕ шухăшлатпăр...

— Пулкалаҫ, хутран хутран; халӗ ђылайганпа илтӗнмест-ха, ҫак тата нумай пулмасҫ, пӗр арӑма ҫаратнӑ терӗҫ... урӑх илтменха ку таранђен....

— Ай инкек... Марина кайса килес марши, инҫе-ши кунтан?

— 17 ҫухрӑмсем пулӗ.... Ан кайӑрха, килӗ хӑйех, кӗтӗр ха пӑртак... Унтан каллех анаслаќа илђӗ те: „Ей, Пахум! мӗн ӗҫлесе выртатӑн, тӑма вӑхӑт ҫитнӗ“, терӗ алӑк умӗнђе выртакан ађана урипе тапса,—хупаха уҫмалла, ђасрах йӑралан.

Матви Трихвунђа сак ҫине ларса каллех хӑрлаттара пуҫларӗ, йулташӗ тула тухса, ҫул ҫинелле пӑхса тӑма пуҫларӗ.

Ђасах хупахра ҫын гӗрке пуҫларӗ. Стрепки вутӑ хутса йађӗ. Хваттере кӗнисем лупас айӗнђе, лашисем патӗнђе, кӑшӑртатаҫҫӗ. Хыттӑн ӳсӗр саспа йурлэнӑ йуррисем те илтӗнеҫҫӗ. Анђах йулташне кӗтсе тӑраканни ҫул ҫине кӑна пӑхса тӑраҫ. Акӑ вӑл темӗскер макӑлтатса килнине курђӗ те, савӑнсах карӗ. Савӑнни ахалех пулђӗ, ҫулпа виҫӗ ҫуран ҫын пынӑ, унӑн йулташӗ пулман.

Вӗсем патнерех ҫитерехпе, епӗр пӗлекен ҫын, вӗсем ҫине тинкерсе пӑха пуҫларӗ. Вӗсӗнђен иккӗшӗ ҫӗтӗк пылђӑклӑ тумтирсемпе пулнӑ, пиђӗсем типшӗнкӗ, ывӑннӑ пек туйӑннӑ; куҫ пуҫӗсене пӑхсассӑн, вӗсем тискер хӑрушӑллӑ ҫынсем пек курӑннӑ. Виҫӗ-

мёшё тата ытларах хуçана тёлёнтернё. Вăл пĕр 60 çулта пек курăннă; курпунĕ тухнăскер, çӳçĕсем шурă, пиҫĕ шурăллă-кăвaклă, ҫирлĕ, пысăк хуйхăпа ваннă пек курăннă. Пуçне хăрах айăккинерех усса пынă, аллисем ҫунсăр çын нăнни пек, пыҫҫăклă çĕтĕк çурăклĕ урисем аран пускаласа пынă. Вăл, сивĕ çил унăн пăртак кăна витĕнсе тăракан кăкри çурăмне шăнтнине те туйман. Хупах патне çитсессĕн, малтанхисем иккĕшĕ йĕри тавра пăхкаларĕç те, унтан, леш тăракан хуçана асăрхамасăрах, старике çавăтса хупаха кĕҫĕç. Пирĕн хуçа çаксем çине темшĕн шанмасăр сăнаса пăха пуçларĕ. Каç хупахра çывăрнă çынсем хăшĕ пĕри, пĕр çĕре пухăнса тем çинҫен тавлашса лараççĕ.

Кĕтесре, ерех пиҫки çумĕнҫе, пĕҫĕкçĕ сĕтел хушшинҫе Антунпа, унăн икĕ айкинҫе Петрушкапа Йĕрмулла ларнă. Вĕсен умĕнҫе ерех кĕленҫипе стакансем ларнă. Йĕрмулли, ҫавсипе сĕтел çине таянса, ҫӳреҫе çинелле пăхса ларнă. Анҫах унăн тулашĕнҫенех, йепле вăл, йĕритавра çынсем мĕн калаçнине, пĕр сăмах сиктермесĕр, тăнласа ларни курăннă. Антунпа унăн тепĕр йулташĕ пĕр ҫĕнмесĕр ларнă. Пăртак тăрсассăн хупах хуçи, леш пуйан патне пыҫĕ те:

— „Йепле, килмерĕ курăнаť санăн шăлну?“ терĕ.

— Килмерĕ,—терĕ те, ҫак виҫҫĕн ларакан кĕтесселе тивкерсе пăхса илҫĕ.—Мĕнте пулсан пулҫĕ пулĕ, ахаҫ мар... Ҫĕрлехи ҫул... ҫумĕнҫе укҫа пур... терĕ.

Йермулапа унăн йулташĕ, сăмахсене илтсессĕннех, пуҫĕсене йалтах ҫĕкленине, пуйан хуҫа астуса илҫĕ. Унăн ҫĕри сиксе карĕ, вăл ҫылайҫен пĕр сăмах ҫĕнмесĕр тăҫĕ.

— Есĕ, нумай пулмас пĕр хĕрарăма ҫаратнă темерĕне ҫак?... ҫын ҫӳремен вырăн... ыррине кĕтеймĕн....

Йĕрмула йулташĕсем ҫине унтан алăк ҫине пăхса илни, ку хуҫана тата ытларах шанҫăксăрлантарҫĕ. Вăл ирĕксĕртерех тăҫĕ те, хупах хуҫине ҫĕнсе илсе, тула тухрĕ.

— Итле ха,—терĕ вăл хăвăрттăн: куртăна пиҫке кутĕнҫе ларакан ҫынсене?...

— Курнă... вара?

— Йепле те пулсан, ҫав ҫынсене лайăх ыйтса пĕлмесĕр кăларас марҫĕ. Сана ахаҫ тумăпăр.. Пĕрре те ырă ҫынсем пек туйăнмаҫҫĕ, кĕпе вĕҫҫĕн старик те, унăн йулташĕсем те... Епĕ йулташа кайса вăратам ха...

Пуйан хуҫа ҫасрах пӳртелле кĕрсе карĕ. Хупах хуҫи, ун пек-кун пек йапалана хавасскер, хавасах пулҫĕ. Вăл: пĕрре ҫеҫ курман епĕ ун пек йапаласене, терĕ те хупахне кĕҫĕ. Йермула па унăн йулташĕсем йулашки стакkансене ĕҫсе йарса кайма тăҫĕҫ.

— Мĕн ҫул кирлĕ ха сана? терĕ Йермулла хуҫа патне пырса.

— Пĕр штав ĕҫрĕне-ха? тесе ыйтрĕ Антун ҫинолле пăхса хуҫи.

— Пĕр штав, терĕ Йермулла пĕр аллипе ҫĕлĕк тăхăнса, тепринпе 10 тенкĕлĕх хут укҫа парса...—Васкаппăр ха, васкамасассăн аванах ĕҫкĕ тăваттăмăрха та сан патăнта.

— Мĕн, сирĕн васкамалла-и мĕн?.. терĕ хĕрлĕ Пурис, укҫине илсен, ҫакăнҫул укҫа тĕлĕнтерҫĕ курăнаҫ:—есĕр ăҫтисем?..

— Айакрисем епĕр, киле ҫĕр кăмрăк ҫавнă ҫĕртен таврăнатпăр, терĕ Йермулла хăйуллă пĕр хăрамасăр. Ҫав вăхăтра тата Петрукхипе шăлнĕне систерсе тухма хушрĕ. Анҫах Антун ури ҫине тăрайманнипе вăйсăрланнине кура, хупах хуҫи: „Мĕн сирĕн йултапăр вăйсăрланҫĕ курăнаҫ“тесе ыйтрĕ.

— Ҫапла,... Тулларан тухсассăн ҫул ҫинҫе... варпа аптăрарĕ, терĕ Петрухха Антуна алăк патнелле ҫавăтса пырса.

— Есĕ хуҫа, хăвăртрах кайалла тупса парха... терĕ Йермулли.

Анҫах унҫен те пулмарĕ, леш пуйан алăк айне темиҫе сын йертсе пынă та, ҫаксене пўлсе илҫĕҫ. Ҫак сынсем хушшинҫе, леш Ростов сынни, Антунпа йармăрккара паллашни те пулнă. Вăл ăна курсассăнах аллисене саркаласа, савăнса,—ха, есĕҫке вăл, курасса

шутламанҫё! Тупайтăна лашуна?... тесе ыйтрĕ. Антун шартах сикрĕ.

— Есĕ ăна палатна мĕн?.. тесе ыйтрĕ пуйан хуҫа.

— Йепле паллас мар! терĕ Ростов ҫынни Антун патнерех пырса:—ара ку лашине вăрласа кайни, каҫ епĕ сире каласа кăтартрăм... Ну, хăта... ытла та куҫавҫĕ хăвăр йалсем сан ĕҫ ҫинҫен пĕлсен.

Тата ыгтисем, ларнă ҫĕртрен тăрса Антун патнерех пыҫĕҫ.

Тепĕр кунне тупрăмăр ун лашине, аран ҫăлса илтĕмĕр, терĕ Петруххи васкаса.

— Апла-и вара?

— Санăн мĕн ĕҫ унта.? терĕ Йермулли, ҫыннине тĕртсе йарса; суйеҫҫи туха пуҫласассăн.

— Есĕ питех ан тĕрткелеха, санпа каласмаҫҫĕ.

Тăр халĕ йĕкĕт, терĕ хупах хуҫи таркăнсене:—Мĕнле есĕр ĕҫлесе таврăнатпăр терĕр ĕҫке... акă ку тата ăна йармăркара лаша сутнине куртăм терĕ (Ростов ҫыннипе Антун ҫине кăтартса).

Тата хреҫҫен ҫынни... Кунтан айакрисем мар тенĕ пек астăватăп.

— Троскинă йалĕнҫен терĕ пулмалла, терĕ Ростăв ҫынни.

— Есĕ мĕскер аташатăн, мĕн кăрмăк ҫавакан вăл, терĕ хупах хуҫи Пурис Йермул-

лана. Йермулли вăйпа алăк патнелле, çăлкаланса: мĕн кирлĕ сана пиртен, тет.

— Çук, тăр халĕ... йамастпăр... ан йарăр... калăр мĕнле çынсем есĕр?...

— Вăрă хурахсем, вăрă хурахсем! терĕ пуйан хуçа Йермулла алинҗен алса тулне тытса илсе; çыхăр ăна җасрах, ку ман шăллăм алси!.. Çаксем çаратнă ăна... Çыхăр вĕсене!..

— Ей... тытăр... çыхăр... тытăр! терĕç те йĕригаврa тăракансем, пур те вĕсене хупăрласа илҗĕç.

Мĕн хупăрлатăр? мĕн кирлĕ сире? тесе тапаçланать Йермулли.

— Ăçтан тупрăн есĕ ман шăллăм алсине? тет пуйан хуçа, кăкринҗен тытса.

— Çул çинҗен тупрăм...

— Суйатăн йытă! терĕ хупах хуçи Йермулла хĕвĕнҗен сăран укçа хутаççине туртса кăларса:

— Ку мĕн?...

Пĕр самантра Йермулла, урине алливе çыхнăскер, çуна çинҗе выртать. Петруххине хупахран çавăтса тухрĕç. Вăл йулташĕ патĕнҗен иртсе кайнă җух, сăмаххине җĕтрете җĕтрете:

— Йулташсем... йарăр мана... мĕншĕн тытатăр мана... Çакă ăва, хăй шăлнĕпе, çак çын... шурă старик... хуçана çаратрĕç... Йарăр!..

— Мĕн! вĕлерни! тесе кăшкăрса кĕҫĕ хӳҫа тултан:—ҫаратни!.. Унтан урнă пек тулалла сирпĕнсе тухса карĕ.

— Ей хуҫа! терĕ Матви Трихвунҫҫă, хупах хуҫи Пурисĕ, Йермуллапа аппаланса тăраканскерне:—йар ҫасрах вĕсен йалне, ахаљ тумастпăр сана, ҫасрах йар, теҫетскине, управљайушҫине илсе килтерес... хăвăртрах!..

Петруххана ҫыхнă вăхăтра, алăк айĕнҫе хытă кĕрленĕ сас илтĕнҫĕ. Антуна темиҫен йарса илнĕ те, тискер кайăк пек урнă халăх нимне пĕлмесĕр, кам ăҫтан тытма ĕлкĕрнĕ ҫавăнтан тытса, урай тăрăх сĕтĕрсе ҫӳрене. Мĕскĕнĕн пуҫĕ урайне шаклатса пынă, куҫĕсене хупнă; куҫ хупаххипе ҫамки пăртак хускалнинҫен кăна вăл вилейменни курăннă. Шăлĕсем хушшинҫен, кăвакарса кайнă тутисенҫен йун йухнă. Самăр Йарăслав ҫынни пуринҫен ытла тискертерех туйăннă.

— Ҫыхăр ăна таркăна... ҫыхăр! тесе кăшкăрнă вăл хăрлатакан сассипе:—йепле кӳпĕннĕ вăл... вăрă... йытă... йепле кӳпĕннĕ... епĕ унтăн, пăртакăх макăраттăм!.. илсе кайăр... ҫыхăр ăна!.. ҫыхăр!

— Ей, Ҫтопка, вĕҫтер ҫасрах лашапа Троскина! терĕ хупах хуҫи творникне:—тӳрех управљайушҫи патне кай, ҫĕнсе кил кунта... кала, хатăх ҫĕнсе килтĕр, вĕсен йалĕнҫи таркăнсене тытрăмăр. Леш лупас айнел-

не вĕçтерҭĕ. Пĕр самантра Çтопкă Троскина çил пек кайрĕ. Хĕрлĕ Пурис, хупах хуçи, Матвей Трихвунҭă, тата ытти çынсем те тытха синҭе тăрса аллисемпе сулласа:

— Хăвăртрах!, ан тăр... асту, ҭасрах... управҭайушҭине ҭĕн, халăха та ҭĕн... Хăвала лашуна, ан тăр! тесе кăшкăрса йулҭĕç.

## X.

Хупахра пулнă ĕç хыçĕнҭен Троскин урамĕнҭе пĕтĕм йалĕпе халăх кĕрленĕ; пысăккн, пĕҭĕккипех вăрăхурахсене çыхса йанине курасшăн пулнă. Тĕрлĕ халăх: арçынни хĕрарăммипех, пĕҭĕк аҭасем, арăмсем алри аҭисене, киле хăварма хăраса, пĕрлех илнĕ, икĕ лава, пĕҭĕк наҭар лаша кӳлнĕскерне, йĕри таврах хупăрласа илнĕ. Урапи çинҭе пĕр çын та курăнмавха. Икĕ вагă старик, кĕске çеç кĕрĕксемпе пилĕкне ĕремен çыхса йанăскерсем, пĕр урапа çумне тайансă тăнă. Вĕсем ахаҭ çын марри, кăкрисем çумне ывăç тупанĕ пысăккăш тимĕр таткисем çĕлесе çыпăçтарнинҭен, тата сухалĕсене хыртарса йанинҭен, паллă пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр çамрăк аҭапа тем каласнă; çамрăк аҭи кӳршĕри йала çитиҭҭен ҭеретпе лава каймалласкер пулнă. Вĕсенҭен айаккарах, пĕр пăшаллă çын, тепĕр лав хуçи йенелле пăхса тăнă. Лавсен тепĕр айкинҭе, урапа тĕнелĕ çине тайанса тимĕрç Вавилпа

унăн пумушникки тăнă. Пумушникки сăран мих çинчe ларнă, миххинчe мăлатукпа тимĕр сăнчăр курăнса тăнă. Вăл темшĕн, шухăша кайса, ĕнсине хыçса, хура пĕлĕт çине пăхса тăнă. Пур те çакăнталла, тĕрткелесе пырасшăн пулнă. Пур те çак хурăн каскана та, Вавил ури патĕнчe выргаканнине, курасшăн пулнă. Шурă ватă старикĕн, кăна урапа тĕртсе пăхмасăр чунĕ канмарĕ, вăл мала ӳксе урипе тĕртсе пăхрех.

— Ха, йапала!.. терĕ хăвăртрах урине туртса илсе.

— Мĕн кирлĕ сана, курмани мĕн? терĕ Вавил хыттăн.

— Çук, тĕл пулман кун пек йапала; тĕлĕнмелле ку, терĕ леш.

— Вавил пиччe, йăвăр пулĕ тетĕп епĕ кусене, терĕ пĕр шӳреке сăмсаллă хĕрарăм, халăх хушшинчен пуçне чиксе йарса.

— Йăвăр пулĕ... пĕлес килсессĕн, çĕклесе пăх, терĕ тимĕрçĕ.

— Ăçта кĕрсе кайан... курмарăна мĕн? кай кунтан!, терĕ ватă çут пуçлă старикĕ леш хĕрарăма тĕртсе, хăй каллах каскасем çине тĕлĕнсе пăхса тăнă.

— Ăçтан каснă есĕ куна, Вавил? ăвăслăхран? тесе ыйтрĕ пĕр хĕр, карчăк пуçĕ урлă пăхса.

— Мĕне кирлĕ вăл сана?

— Ех, çакăчпа угса кайаîçке пирĕн Антун, акă ватăлмалăх кунта мĕн курмалла пулĕ, терĕ пĕри ушкăнра.

— Хăй ĕçĕшĕн ăна путсĕре! Кам хушнă ăна ватăлмалăх кунта çавăн пек усал ĕç тума... сынна çаратасси вăйă мар вăл!...

— Çапла йулташсем шутлама мар, асра та пулман, вăл Антун çавăн пек çын иккенни:—ыгла та çак вăхăтра пас пасах йапала çухални илтĕне пуçларĕ, ăна çавсем пулмалла... Антун вĕçене йалтан ăсатса тăнă... хамăрăнписенпен пуçне никам та пулас çук.

— Çав кирлĕ ăна, путсĕре, çав кирлĕ... мĕн хĕрхенмелле вăрра.

— Хветуç аппа, есĕ куртăна, леш ыйткаласа çӳрекен карпăка илсе пынине?

— Çук, курайман епĕ; ара çав карпăк çак пĕрин амăшĕ тет мари?

— Амăшĕ... Пурис Трихвунпă калаť, калама çук усал тет çав карпăк, çыхнă пухне пăргакках алла çыргса илетпĕ тет.

— Кай ахаль пуль.

— Суйатăл пулсассăн, çакăнтах пĕтем.... Хветуç аппа, шугламан та çке хе çавна çавăн пек çын тесе.... хăй пăхма ырă, йăваш карпăк пек... хĕрхенсе çăкăр та параттăн хăйне.

Пĕтĕм халăх пуху умĕнпе çакă çынсем çинпен калаçнă. Акă пухури çынсем кĕрлесе йапĕç:—илсе килеççĕ... илсе килеççĕ! тесе,

Урамăн лешвĕçĕнҫе Йермулла, Петрухха. Антун, тата Архарăвна карҫăк курăнах каrĕç. Вĕсен умĕнҫе, мăн кăмăллă Никит Хветăрҫă, сутскисем, тата старăстăсем пынă; айăплă çынсен икĕ йеннипе салтаксем, пĕтĕм хăйсен хатĕрĕсемпех (пăшалпа, хĕç, ҫикекен йенҫĕксемпе), хыçалтан халăх пуçтарăнса пынă. Антун хыçĕнҫе Варварипе вĕсен икĕ аҫи Ваҥукпа унăн йăмăкĕ пынă. Варвари макăрса вăйĕ пĕтнипе ҫĕркуççи çине пере пере аннă. Пуринҫен хыçалта вĕтшак аҫасем ҫупса кăшкăрашса пынă. Леш уксак хĕр аҫа хăрах ури çинҫе сиксе, пуриҫен хытăрах ҫупнă.

— Кайăр кунтан, терĕ Никит Хветăрҫă арçынсене айаккалла сирсе; —татах тăратра, кайăр тенĕ. Есĕ тăрта, урисене тăлла вĕсенне, вăрăсенне. Унтан сотскисем, салтаксем йенелле çаврăнса: есĕр астăвăр, хăлхăрсене лайăхрах тăратăр! терĕ те, хăй айăккинелле пăрăнҫĕ.

Вавилă ҫасах хушнине тума тытăнҫĕ. Мăлатукпа шакканă сасă урамăн тепĕр вĕçне йанăраса кайнă.

— Вавилă шăллăм, акă ăçта курăнăçмалла пулҫĕ, терĕ Ермулли урне тăллама хурса; — астăватни, мĕнле пĕрле ĕçеттĕмĕр, кум, питĕ шухă йĕкĕтҫĕ есĕ!

— Лар, путсӗр, лар; тӑр халӗ пӑртак, кӑтартӗҫ сана йӗкӗтсем, терӗ Никит Хветӑрҫӑ.

Йермулла сотекисем пулӑшнипе Архарӑвнӑпа Петрухха ҫумне улӑхса ларҫӗ. Акӑ Антуна та ҫерет ҫитрӗ. Тимӗрҫ Вавил йна урапа тӗнӗл ҫине тӑратса калӑпне тӑхӑнтарсан, малтанхи мӑлатук сасси илтӗнсессӗннех, пуху хушшинҫе ҫухӑрса йанӑ сас илтӗнҫӗ. Пур те шартах сикрӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах Антун урн умне Варвари персе авҫӗ, халӑх ун хыҫӗнҫен Ваҫукпа Аксуша Антун патне тӗртсе кӳртсе йаҫӗҫ. Варвари ҫӳҫӗ-пуҫӗсем пайӑркан пайӑркан саланса, питне хупӑрласа тӑнӑ, ҫийӗнҫи тумтиррисем ҫуркаланса пыҫҫӑкланса пӗтнӗ. Тӑнран кайса, вӑл упӑшки уринҫи калӑпа йарса илсе, кӑларасшӑн пек туртнӑ.

— Ех аттемӗр... аттемӗр.. . тархасшӑн танӑшсем.... ҫӑлӑр мана... ан йарӑрсам йна, мӗскӗне, таҫта пӗтмелли ҫӗре.... кама шанса хӑваратӑн ипре, кам пире, мӗскӗнсене, ырӑ сунӗши, кам пӑхӗши?

Унӑн ытти сӑмаххисене уйӑрма май килмен, хытӑ сасӑпа макӑрнипе пӗр сӑмаххи те паллӑ мар. Ваҫукпа унӑн йӑмӑкӗ ҫавӑнтах макӑрса тӑнӑ.

— Ей тӑвансем,—астӑвӑр, манӑн аҫасене, ан пусмӑрлаттарӑр! вӗсем айӑплӑ мар! Есӗр йӑмӑксем, кӑвак сарапнансем, есӗр вӗсен аш-

шӗ амӑшсем пулӑр! тесе кӑшкӑрса каларӗ Йермулли.

Антун, ку таранҫен хытса кайнӑ пек пӗр ҫӗнмесӗр лараканскер, пуҫне ҫӗклерӗ те, куҫҫулли тумламӑн тумламӑн шӑпӑртатса ана пуҫларӗ.

Унӑн кӳрши Ҫтаппан Паҫукӗ Антун патне пыҫӗ те: Ех, Антун тӑванӑм, кирлӗ таварпа пуҫламарӑн ҫав сут тума.... хӗрхенетӗп епӗ.... калама ҫук хӗрхенетӗп....

— Мӗн тӑвас, ахӑр хурлӑх йатне ҫуралнӑ пулӗ.... аҫасене шел, терӗ йӗрсе.

— Вӑрӑсемпе ҫыхлантӑм... пӗтӗмпех айӑплӑ. Пуҫлӑхсене пӗлтермелле пулнӑ та ҫав, мӗнле пӗлтерес. Хӗрхентӗм хам тӑвана.... хаҫ ним тума та ҫук ӗнтӗ.....

Вӑл татах калашшӑнҫӗ пулмалла та, анҫах сӑхман ҫанни вӗҫӗпе куҫне шӑлса илҫӗ те, хӑйӗн хурлӑхлӑ телейне парӑнса аллипе кӑна сулларӗ.

— Лартӑр ҫасрах ҫавна урапа ҫине, терӗ Никит Хвегӑрҫӑ, Антун ҫине кӑтартса. Сотскисене: Есир мӗн ҫӑварӑра карса тӑратӑр, тытӑр тилкепӗрсене!.. Ей старӑстӑсем, сӗгӗрсе кайӑр ҫакна, хӑйӗн вӑрӑ уйӑшкипе калаҫмалӑх вӑхӑт пулнӑ унӑн... сӗтӗрӗр ҫасрах, ну!..

— Аттем! тесе кӑшкӑрса йаҫӗ Варвари аллисене Антун патнелле тӑсса.

— А-ат-темӗр! Ах, Ан-тун!.. Ох... касса йанӑ йӑвӑҫ пек ҫӗре персе анҫӗ.

— Ех, Варвари инке,тесе пуҫларӗ Йермулли урапи хӗррине ларса,—есӗ унӑн кӑмӑлне ҫемҫетеймӗн, йепле хырӑмне ӳсгерсе йанӑ вӑл, терӗ Никит Хветӑрҫа кӑтартса.

— Хӑвалӑр лашӑрсене! терӗ Никит Хветӑрҫӑ лавӑҫсене. Вӗсем лашисене пӗрер ҫапрӗҫ те, лавсем тапранса кайрӗҫ.

Пӗтӗм халӑх лавсем хыҫӑнҫен утрӗҫ. Лавсем патӗнҫех уксак Анна йӑкӑлт йӑкӑлт сиксе пырат.

— Сыв пулӑр йулташсем, сывӑ пулӑр-терӗ Йермулли ҫӗлӗкӗне сулласа,—йатласа ан йулӑр. Сывӑ пулӑр, пире те ан манӑр!

Лавсем укӑлҫа патнелле ҫывӑхарҫӗҫ. Ҫав вӑхӑтра шурӑ пысӑк пӗлӗтсем тапранса шӑва пуҫларӗҫ те, ҫи пуҫласа малтанхи йур савӑрна ҫавӑрна ҫӗре ана пуҫларӗ. Пӗр самантра Троскинӑ урамӗсем, ҫурт тӑррисем пӗтӗм хирсем шапшурӑ пулҫӗҫ. Сивӗ ҫил вӗре пуҫларӗ. Никит Хветӑрҫӑ хӑй ермекне лайӑхрах пӳркенсе укӑлҫа йенелле ҫаврӑнса пӑхрӗ, анҫах йур вӑйлӑ ҫунипе нимӗн те курӑнман.

— Вӑрӑсем! тет Никит Хветӑрҫӑ ҫул ҫинҫе хӑй тӗллӗн,—каланӑ епӗ такҫанах, ҫемйипех путсӗр ҫынсем тесе... ахаҫ хӗрхенмесӗр тӑмарӑм епӗ вӗсене... Ну ӑрахмат, хӑтӑлтӑм вӗ-

сенҫев!.. Ним мар ĕҫ... пĕр сутпа ерне иртрĕ ĕҫке ĕнтĕ... Ну, ку йурĕха... хаҫ вĕсем шухăшра та пулмаҫҫĕ ентĕ!

Ҫапла шухăшласа пырса Никит Хветăрҫă хăй кантур патне кайнине те сисмен. Аннă Антрейевнă сасси ăна шухăшран вăратрĕ.

— Никит Хветăрҫă, Никит Хветăрҫă теп ҫасрах ҫей ĕҫме кĕр, кĕтсе ывăнтăмăр сана пайан!

— Кĕреп, кĕреп!.. терĕ Никит Хветăрҫă ырă ĕҫ туса килсе, урăх ним тумалли те ҫук пек пулса. Вăл, алăк хыҫĕнҫе йĕрсе тăракан Хваттимкăна та курмасăрах пӳрте кĕрсе карĕ.

## Ђăваш Оплăçĕнђи Кĕнеке Кăларакан Уйрăмăн Шупашкарта Ађапăђа Кĕнекисем тухнă:

1. Кайăкçă Йемел—М. Сибиряка.
2. Макар тĕлĕкĕ—Короленко.
3. Кăвак Мăй—М. Сибиряка.
   Шăпђăк йурри—Андерсена.
4. Пĕђĕк паттăрсем—М. П. Петрова.
   Çÿревçĕ шапа—В. Гаршина
5. Çеçпĕл (3 пайлă халлап)
6. Хуйхă. Нăрă Вађукĕ—А. Чехова.
7. Тăватă кун...—В. Гаршина.
8. Пĕр мушик пĕђђен икĕ кĕнерала тăрантарса усранч çинђен—С. Щедрина.
   Ăслă ыраш пĕтри—его же.
9. Хăравçă Пађђа. Хула тулашĕнђе. Тĕттĕмлĕх пĕтерет—А. Чехова.
10. Упа çинђен.
11. Шартлама Сивĕ—Короленко.
12. Ђăваш йумахĕсем—М. Трубина.
13. Ĕçкĕ пуçа çирĕ—Семенов.
14. Ђĕлкаш—М. Горького.
15. Мĕскĕн Антун—Григорович.
16. Ђăрсăр тыха. Тĕплĕ хреçђен—А. Семенов.

---

Стребованиями обращаться по адресу: гор. Чебоксары ЧАО. Госиздат.

---

Книжка набрана учениками школы Фабзавуча типографии Чувашгосиздата, под наблюдением метранпажа В. П. Кулькова.